инв. N-92. 2973 3063.
41-116



# В. И. ЛЕНИН

## СОЦИАЛИЗМЛӐ ТӐВАН ҪӖРШЫВА ХӲТӖЛЕССИ

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

5
O.I.A.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве ___
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
24 мая 1941 г.
Подпись Ласточкин

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# В. И. ЛЕНИН

## СОЦИАЛИЗМЛĂ ТĂВАН ÇĔРШЫВА ХӲТĔЛЕССИ

*СБОРНИК*

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

## ИЗДАТЕЛЬСТВĂРАН

Çак сборнике В. И. Ленин Совет çĕршывне империализмлă державăсем тапăннинчен хӳтĕлес тĕлĕшпе тата 1918—1919 çç. интервенципе шалти контрреволюцие çĕмĕрсе тăкас ĕçе организацилес тĕлĕшпе çырнă уйрăм статьясене, унăн сăмахĕсене, рабочисемпе хресченсене тата красноармеецсене чĕнсе каланисене кĕртнĕ.

В. И. Ленинăн пур произведенийĕсене те сборнике хронологи йĕркипе кĕртнĕ.

## ЮЛТАШСЕМ-РАБОЧИСЕМ! ЮЛАШКИ, ТАТĂКЛĂ ÇАПĂÇĂВА КАЯР!

Совет республикине тăшмансем хупăрласа илнĕ. Анчах вăл тулашри тăшмансене те, шалти тăшмансене те çĕнтерĕ. Çĕнтерӳ паракан çĕкленӳ рабочисен массисем хушшинче курăнать ĕнтĕ. Пĕтĕм тĕнчери рабочи революци çывăх вăхăтра çĕнтересси çинчен пире шанчăклăх паракан революциллĕ пушар хĕлхемĕсемпе çулăмĕсем Хĕвеланăç Европăра час та час пула пуçлани курăнать ĕнтĕ.

Российăри советлă социализмлă республикăн тулашри тăшманĕ, вăл—ку самантра Англипе Франция тата Японипе Америка империализмĕ. Халĕ çак тăшман Россия çине наступленипе килет, вăл пирĕн çĕрсене çаратать, вăл Архангельска тытса илчĕ тата вăл (Франция хаçачĕсене ĕненес пулсан) Владивостокран Никольск-Уссурийски патне çитнĕ. Çак тăшман чехо-словаксен корпусĕн генералĕсемпе офицерĕсене укçалла хăй майлă çавăрнă. Çак тăшман мирлĕ Россия çине, германецсем февральте наступленипе килнĕ пекех, тискер кайăкла, вăрă-хурахла наступлени туса килет, уйрăмлăхĕ вара çакă—англо-японецсене вырăс çĕрне çавăрса илсе çаратни кăна мар кирлĕ, вĕсене «тепĕр хут фронт тума», урăхла каласан, Российăна каллех Англипе Германин империализмлă (тӳрех каласан: вăрă-хурахла) вăрçине хутшăнтарма Совет влаçне сирпĕтсе антарни те кирлĕ.

Вăрçăра çаратса илнĕ тупăша пĕрле валеçмешкĕн, вырăс рабочисемпе хресченĕсене Англипе Франция капиталĕн аллине памашкăн, вĕсенчен нумай миллиардлă заемсем тăрăх процентсем тăпăлтарса илмешкĕн, пирĕн патра пуçланнă, пĕтĕм тĕнчипех сарăлассипе хăратакан, социализмлă революцин пушарне сӳнтермешкĕн—Англипе Япония капиталисчĕсем Российăра помещиксемпе капиталистсен влаçне каялла тавăрса лартасшăн.

Англипе Япония империализмĕн тискер кайăкĕсен Российăна çавăрса илсе хăйсене пăхăнтармашкăн вăй çитмест. Ун пек вăй хамăрпа кӳршĕллĕ Германин те çитмест, çакна Украина тĕлĕшпе пулнă «опыт» кăтартса пачĕ. Англо-японецсем пире сисмесле сасартăк çавăрса илме шутланă. Анчах çакна вĕсем тăваймарĕç. Питĕрти рабочисем, вĕсем хыççăн—Мускаври рабочисем, Мускав хыççăн—пĕтĕм центрти промышленнăй облаçсенчи рабочи-

сем татах та нумай тимлĕн, татах та çирĕппĕн, татах та нумай массăсемпе, татах та хăйсене ним хĕрхенмесĕр çĕкленеççĕ. Çакănта—эпир çĕнтерессин шанчăкĕ.

Англипе Япония çăтканĕсем, мирлĕ Россия çине походпа килсе, Совет влаçĕн шалти тăшманĕпе союзлă пуласси çине те шанаççĕ. Çав шалти тăшман кам иккенне эпир аван пĕлетпĕр. Вăл тăшман—капиталистсем, помещиксем, кулаксем, вĕсен ывăлĕсем; вĕсем рабочисен тата ĕççынни хресченсен, хăйсен ялĕнчи çынсен юнне ĕçмен хресченсен влаçне питех те кураймаççĕ.

Кулак восстанийĕсен хумĕ Россия тăрăх унта-кунта сарăлса пырать. Кулак урса кайсах Совет влаçне кураймасть, вăл çĕршер пин рабочисене пăвса пăрахма, пусса тухма хатĕр. Кулаксен çĕнтерме май пулнă пулсан,—эпир лайăх пĕлетпĕр,—вĕсем помещиксемпе тата капиталистсемпе союз туса, рабочисене валли катăргăна тепĕр хут тавăрса, 8 сехетлĕ ĕçкунне пĕтерсе, фабрикăсемпе заводсене капиталистсен пусмăрĕ аллине тавăрса,—çĕршер пин рабочисене вĕлерсе тăкнă пулĕччĕç.

Европăри ĕлĕкхи революцисенче пуринче те çавăн пек пулнă. Ун чухне, рабочисем вăйсăр пирки, кулаксем республикăран каллех каялла монархи патне тавăрма, ĕççыннисен влаçĕнчен каллех пĕтĕм влаçа эксплуататорсем, пуянсем, харампырсем аллине тавăрма пултарнă. Çакăн пек ĕç пирĕн куç умĕнчех Латвире, Финляндире, Украинăра, Грузире пулса иртрĕ. Çăткан, чыхса тултарнă, тискер кулаксем пур çĕрте те помещиксемпе тата капиталистсемпе пĕрле рабочисене хирĕç тата пĕтĕм чухăнсене хирĕç кĕрешнĕ. Пур çĕрте те кулаксем рабочи класа курман-илтмен юн-çăтканлăхпа çапса çĕмĕрнĕ. Пур çĕрте те вĕсем хăйсен çĕршывĕнчи рабочисене хирĕç *ютçĕрти капиталистсемпе* союза кĕнĕ. Çавăн пек хăтланнă, çавăн пек хăтланаççĕ те кадетсем, сылтăм эсерсем, меньшевиксем; вĕсен «Чехо-словакири» ĕçĕсене çеç астуса илме кирлĕ. Сулахай эсерсем те, вĕсем ытла та ухмах, характерсĕр пулнă пирки, Мускаври хăйсен пăлхавĕпе, Ярославльре белогвардеецсене, Хусанта чехословаксемпе шуррисене пулăшнипе çавăн пекех тăваççĕ; ахальтен мар çав сулахай эсерсем Керенскипе унăн тусĕсен, Франци империалисчĕсен мухтавне илтме тивĕç пулчĕç.

Нимĕнле иккĕленӳсем те пулма пултараймаççĕ. Кулаксем—Совет влаçĕн урса кайнă тăшманĕсем. Е кулаксем рабочисене шутсăр нумай пусса тухĕç, е рабочисем халăхăн сахал пайĕн восстанийĕсене,—ĕççыннисен влаçне хирĕç тăракан кулакла, вăрă-хурахла сахалрахăшĕн восстанийĕсене, ним хĕрхенмесĕр çапса салатĕç. Унта варри пулма пултараймасть. Килĕшӳ пулас çук: кулака помещикпе, патшапа тата пуппа, вĕсем хирĕçсе кайнă пулсан та, килĕштерме пулать, çăмăллăнах килĕштерме пулать, анчах рабочи класпа *нихăçан* та килĕштерме çук.

Çавăнпа та ĕнтĕ кулаксене хирĕç çапăçнине эпир *юлашки* татăклă çапăçу тетпĕр. Çакă вăл кулаксен восстанийĕсем нумайшар хутпулма пултарайманнине, е ют çĕрти капитализм Совет влаçне хирĕç нумайшар хут походсемпе килме пултарайманнине пĕлтермест. «Юлашки» çапăçу тенĕ сăмах *эксплуа-*

*таторла* классенчен юлашки тата чи нумай йышлă класс пире хирĕç восстанипе тухнине пĕлтерет.

Кулаксем — чи усал, чи чăрсăр, чи тискер эксплуататорсем; ытти çĕршывсен историйĕнче вĕсем пĕрре кăна мар помещиксен, патшасен, пупсен, капиталистсен влаçне каялла тавăрнă. Кулаксем помещиксемпе капиталистсенчен нумайрах. Анчах, çапах та, халăх хушшинче кулаксем сахалтарах пай пулса тăраççĕ.

Калăпăр, пирĕн патра, Российăра,—иртнĕ вăхăтри Российăна, çăткансем пирĕнтен Украинăна тата ыттисене туртса иличченхи вăхăтри Российăна шутласан,—15 миллиона яхăн çĕрĕçлекен хресчен çемьи пултăр. Çав 15 миллион çемьерен, тен, 10 миллион таран хăйсен ĕç вăйне сутнипе пурăнакан, е пуянсем патне чуралăха каякан, е ытлашши тырă тытайман, вăрçă йывăрлăхĕсемпе ытла та юхăннă чухăнсем. 3 миллион таран вăтам хресчен шутлас пулать, кулаксем, пуянсем, тырă спекулянчĕсем 2 миллионран та ытла пулаймаççĕ. Çак юнĕçенсем вăрçă вăхăтĕнче халăх нуши çинче пуйрĕç, вĕсем, тыррăн тата ытти продуктсен хакĕсене хăпартса, пиншер, çĕршер пин укçа пухрĕç. Çак эрешменсем вăрçăпа юхăннă хресченсен шутĕнчен, выçă рабочисен шутĕнчен мăнтăрланса пынă. Çак сĕлĕхсем ĕççыннисен юнне ĕçсе пурăннă, хуласенчи тата фабрикăсенчи рабочисем мĕн чухлĕ нумай выçă ларнă, кулаксем çавăн чухлĕ нумай пуйнă. Çак вампирсем хăйсен аллине помещиксен çĕрĕсене çавăрса илнĕ, илеççĕ те, вĕсем чухăн хресченсене татах та татах пусмăра кĕртсе пыраççĕ.

Çав кулаксене хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешмелле! Вилĕм вĕсене! Курайманлăх та ылхану вĕсене сыхлакан партисене: сылтăм эсерсене, меньшевиксене тата хальхи сулахай эсерсене! Хăйсен çĕршывĕнчи ĕççыннисене хирĕç ютçĕрти капиталистсемпе союз тăвакан кулаксен восстанийĕсене рабочисен тимĕр алăпала çапса салатмалла.

Кулаксем ялти чухăнсен тĕттĕмлĕхĕпе, уйрăмăн, сапаланса пурăннипе усă кураççĕ. Кулаксем вĕсене рабочисем çине вĕскĕртеççĕ, вĕсем хăш чухне чухăнсене, тырăпа спекуляци тунипе çĕр тенкĕ таран «пуйма» парса, хăй енне çавăраççĕ (çав вăхăтрах чухăнсене нумай пин тенкĕлĕх çаратаççĕ). Кулаксем вăтам хресченсене хăйсем енне çавăрма тăрăшаççĕ, хăш чухне вара çакна тума вĕсене май килет те.

Анчах рабочи класс вăтам хресченрен уйăрălма пĕрре те тивĕçлĕ мар. Рабочи класс кулакпа килĕшме пултараймасть, вăтам хресченпе вара *килĕшӳ* шырама пултарать тата шырать те. Рабочи правительстви, урăхла каласан, большевиксен правительстви, çакна сăмахпа мар, ĕçпе *кăтартса панĕ.*

Эпир çакна «çĕре социализацилес» закона йышăнса, ăна пурнăçа çирĕп кĕртсе, кăтартса патăмăр; çак законра вăтам хресчен интересĕсемпе ăнланăвĕсемшĕн тунă уступкăсем *нумай.*

Эпир çакна тырă хакĕсене (çак кунсенчех) *виçĕ хут* ӳстернипе кăтартса патăмăр, мĕншĕн тесен эпир вăтам хресченĕн тупăшĕ промышленность продуктисен хальхи хакĕсемпе час-

часах килӗшсе тӑманнине, ҫав тупӑша ӳстерме *кирлине* лайӑх пӗлетпӗр.

Ҫакна кашни ӑнлачуллӑ рабочи вӑтам хресчене каласа тӑнлантарӗ, социализм вӑтам хресченшӗн усӑллине, патшасен, помещиксен, капиталистсен влаҫӗнчен вӗҫӗмсӗр усӑллине чӑтӑмлӑн, ҫине тӑрсах, нумай хутчен ӑнлантарса парӗ.

Рабочисен влаҫӗ вӑтам хресчене нихӑҫан та хуртуман, тӑвас та ҫук. Патшасен, помещиксен, капиталистсен, кулаксен влаҫӗ вӑтам хресчене яланах хуртунӑ кӑна мар, пур ҫӗршывра та,— пӗрне сиктерсе хӑвармасӑр, ҫав шутра Российӑра та,—тӳррӗнех пӑвнӑ, ҫаратнӑ, юхӑнтарнӑ.

Ялти чухӑнсемпе питех те тачӑ союз туни тата пӗтӗмӗшпех пӗрлешни; вӑтам хресчене уступкӑсем пани, килӗшни; кулаксене, ҫав юнӗҫенсене, вампирсене, халӑха ҫаратакансене, выҫлӑха пула пуякан спекулянтсене ним хӗрхенмесӗр ҫапса салатни;— акӑ мӗнле ӗнтӗ ӑнланулла рабочин программи. Акӑ рабочи класӑн политики.

*1918 ҫ. август уйӑхӗн пӗррemӗш ҫурринче ҫырнӑ.*
*Малтанхи хут 1925 ҫ. пичетленӗ.*

---

## БУТЫРСКИ РАЙОНРИ МИТИНГРА КАЛАНӐ САМАХ

***1918 ҫ. августӑн 2-мӗшӗ***

ХАҪАТРА ПИЧЕТЛЕНӖ КӖСКЕ ОТЧЕТ

Юлташсем! Паян Мускавӑн тӗрлӗ кӗтессисенче социализмлӑ Российӑн кун-ҫулӗ ҫинчен сӳтсе-яваҫҫӗ.

Совет Российӗн тӑшманӗсем пире пур енчен те тимӗр кӑшӑлпа тачӑ хупӑрласа тӑраҫҫӗ. Вырӑссен социальнӑй революцин ҫӳлӗ вӗлкӗшсе тӑракан ялавӗ пӗтӗм тӗнчери империалистсене канӑҫ памасть, вара вӗсем Совет влаҫӗ ҫине, рабочисемпе хресченсен влаҫӗ ҫине, вӑрҫӑпа кайрӗҫ.

Эсир астӑватӑр пулас, юлташсем, революци пуҫлансан французсемпе англичансем, эпир ирӗклӗ Российӑн «союзникӗсем», тесе пӗрмаях калатчӗҫ. Акӑ ӗнтӗ халӗ ҫав «союзниксем» хӑйсене кӑтартрӗҫ. Ултавпа та суяпа вӗсем Мурмана, унтан Кемь хулине илсе пирӗн юлташсене, совет работникӗсене, персе вӗлерме тытӑнчӗҫ.

Вӗсен хастарлӑ помощникӗсем—чехословаксем тупӑнчӗҫ. Вӗсене пирӗн ҫине англо-французсен ылттӑнӗ тӗртрӗ. Англо-французсен ылттӑнӗ ҫумӗнче вӗсемпе пӗрле пирӗн «тӑван ҫӗршыва ҫӑлакансем»: Дутов, Алексеев, тата ыттисем те ӑшӑнаҫҫӗ.

Совет влаҫӗ ҫапла каларӗ: эпир нимӗҫсемпе те, англичансемпе те, французсемпе те вӑрҫасшӑн мар; хамӑр пек рабочисемпе хресченсене эпир вӗлересшӗн мар, терӗ. Пирӗншӗн вӗсем тӑшмансем мар. Пирӗн тӑшман урӑххи—пӗтӗм тӗнчери буржуази. Пирӗн лозунгсене кашни ҫӗршывра ҫӗклеҫҫӗ. Германире ӗнтӗ пораженчествӑллӑ движени пуҫланнӑ, Италипе Австрире массӑллӑ забастовкӑсем пулса пыраҫҫӗ, Америкӑра социалистсене питех те нумай арестлеҫҫӗ. Вара, хӑйсен вилӗмне туйса,

капиталистсемпе помещиксем революцилл҃ӗ движение пӑвса пӑрахас тесе юлашки вӑй-халӗсене хураҫҫӗ. Вырӑс капиталисчӗсем англо-француз капиталисчӗсемпе помещикӗсене алӑ тӑсаҫҫӗ.

Халӗ икӗ фронт: пӗр енчен—рабочисемпе хресченсем, тепӗр енчен—капиталистсем. Юлашки тата татӑклӑ ҫапӑҫу пуҫланать.

71-мӗш ҫулта буржуази Париж рабочийӗсен влаҫне сирпӗтсе антарнӑ. Анчах ун чухне ӑнланулла рабочисем сахал пулнӑ, революциллӗ боецсем сахал пулнӑ. Халӗ ӗнтӗ буржуази пуҫпулса тӑраймӗ. Рабочисем фабрикӑсемпе заводсене хӑйсен аллинче ҫирӗп тытса тӑраҫҫӗ; хресченсем ҫӗре помещиксене памӗҫ. Ҫав ҫӗнтерӳсене хӳтӗлемешкӗн эпир ҫавӑн пекех пур мародерсемпе спекулянтсене хирӗҫ те вӑрҫатпӑр. Тупӑсемпе тата пулеметсемпе пӗрле вӗсем пире выҫлӑхпа хӑратаҫҫӗ.

Пуянсене хирӗҫ вӑрҫӑ тӑвасси ҫинчен пӗлтерсе, эпир калатпӑр: «чухӑнсен кил-ҫурчӗсене мир», тетпӗр. Эпир спекулянтсен пӗтӗм запасӗсене туртса илсе рабочи чухӑнсене хӗн-хура хӑвармӑпӑр!

*«Известия В. Ц. И. К». № 164 (428),*
*1918 ҫ. августӑн 3-мӗшӗ.*

---

## ПОЛИТЕХНИЧЕСКИ МУЗЕЙРИ МИТИНГРА КАЛАНӐ СӐМАХ

***1918 ҫ. августӑн 28-мӗшӗ***

Мӗнре пирӗн программа? Социализм ҫӗнтерсе илессинче. Тӗнчери вӑрҫӑн хальхи самантӗнче ҫак вӑрҫӑран тухмашкӑн социализм ҫӗнтерсе илнинчен пуҫне урӑх май ҫук. Анчах ҫакна нумайӑшӗ ӑнланмаҫҫӗ. Халӗ этемлӗхӗн ытларах пайӗ юнлӑ вӑрҫа хирӗҫ, анчах вӑл вӑрҫӑ капитализмлӑ стройпа тӳррӗмӗнех ҫыхӑнса тӑнине вӗсем ӑнланма пултараймаҫҫӗ. Хальхи вӑрҫӑн тискерлӗхӗсем буржуазие те уҫҫӑнах курӑнаҫҫӗ, анчах вӑрҫӑ чарӑнассине капитализмлӑ строй пӗтессипе ҫыхӑнтарма вӑл пултараймасть... Ҫак тӗп шухӑш ӗнтӗ большевиксемпе пӗтӗм тӗнчери ытти пур ҫӗршывсенчи революциллӗ социалистсене, капитализмлӑ йӗркесене пӗртте тивмесӗр хӑварса, ҫӗр ҫине мир илсе килес текенсенчен уйӑрса тӑнӑ.

Вӑрҫӑсем мӗншӗн пулса пыраҫҫӗ? Эпир пӗлетпӗр: вӑрҫӑсем нумайӑшӗ династи интересӗсемшӗн пулса пынӑ, вӗсене династически тесе ят панӑ. Анчах вӑрҫӑсем хӑшпӗр чухне пусмӑртисен интересӗсемшӗн пулса пынӑ. Спартак пусмӑрти класшӑн вӑрҫӑ ҫӗкленӗ. Ҫавӑн пек вӑрҫӑсемех колониллӗ пусмӑрлӑх саманисенче те пулса пынӑ, вӗсем халӗ те пулса пыраҫҫӗ, чуралӑх саманисенче те пулса пынӑ т. ыт те. Ҫав вӑрҫӑсем тӗрӗслӗхлӗ пулнӑ, ҫав вӑрҫӑсене айӑплама ҫук.

Анчах эпир Европӑри хальхи вӑрҫӑ ҫинчен калаҫса, ӑна сивлесе айӑплатпӑр пулсан, ӑна пусмӑрлакансен класӗ туса пынӑ пирки кӑна айӑплатпӑр.

Мӗнле тӗллевшӗн пулса пырать хальхи вӑрҫӑ? Пӗтӗм ҫӗршывсенчи дипломатсене ӗненес пулсан, ӑна Франципе Англия

пĕчĕкçĕ халăхсене варварсенчен, гуннсенчен-нимĕçсенчен хӳтĕлес тĕлĕшпе туса пыраççĕ; Германия енчен ăна Германин культурăллă халăхне хăратакан варвар-казаксене хирĕç, тата тăван çĕршыва тапăнакан тăшмансенчен хӳтĕлес тĕлĕшпе туса пыраççĕ.

Анчах пире çакă паллă: çав вăрçа хатĕрленĕ, вăл çитĕнсе пынă тата пурпĕрех пулмалла пулнă. Вăл Америкăпа Япония хушшинче вăрçă пурпĕрех пулмалла пекех, пурпĕрех пулмалла пулнă. Мĕнре пулать-ха çав пурпĕрех пуласси?

Акă мĕнре: капитализм çĕрĕн пуянлăхĕсене уйрăм государствăсен аллине пĕтĕçтернĕ, çĕре пĕр татăк хăвармиччен пайласа валеçнĕ; малалла пайласа уйăрасси, малалла пуясси ыттисен шучĕпе, пĕр государствăн тепĕр государство шучĕпе çеç пулма пултарать. Çак ыйтăва вăйпа çеç татса пама пулать—çавăнпа та вара тĕнчери çăткансем хушшинче вăрçă пурпĕрех пулмалла пулнă.

Хальхи вăрçăн пуçĕнче ку тарана çитиччен икĕ тĕп фирма—Англия тата Германия тăнă. Англия чи вăйлă колониллĕ çĕршыв пулнă. Англире хăйĕнче халăх 40 миллионран ытла мар пулин те,—унăн колонийĕсенче 400 миллион ытла халăх пурăнать. Вăл авалтанпах ĕнтĕ, вăйлисен прави тăрăх, ытти государствăсен колонийĕсене тытса илнĕ, темĕн чухлĕ çĕр туртса илсе вĕсене эксплуатацилесе усă курнă. Анчах вăл экономика тĕлĕшĕнчен юлашки 50 çул хушшинче Германирен кая юлнă. Германия промышленноçĕ Англия промышленноçĕнчен иртсе кайнă. Германин государственнăй шултăра капитализмĕ бюрократизмпа пĕрлешнĕ те, вара Германия чи мала тухнă.

Çав икĕ гигант хушшинче кам малта пулмалли çинчен пыракан тавлашăва вăйсăр татса пама май пулман.

Ĕлĕк Англия, вăйлисен прави тăрăх, Голландия, Португалия т. ыт. çĕрĕсене туртса илнĕ пулсан,—халĕ ĕнтĕ сцена çине Германия тухса, ыттин шучĕпе пуймашкăн манăн та черет çитрĕ тенĕ.

Ыйту акă мĕнре: тĕнчене чи вăйлисен хушшинче пайласа валеçессишĕн кĕрешессинче. Çавăнпа та, икĕ енĕ те çĕршер миллион капитал тытса тăнă пирки, вĕсен хушшинчи кĕрешӳрен пĕтĕм тĕнчери кĕрешӳ пулса тăнă.

Çав вăрçăшăн мĕн чухлĕ вăрттăн преступленисем тунине пĕлетпĕр эпир. Эпир пичетлесе пĕлтернĕ вăрттăн договорсем çакна кăтартса пачĕç: вăрçă мĕн пирки пулса пынине ăнлантарса паракан фразăсем сăмахсем çеç пулса юлнă, пур государствăсем те, Россия пекех, пĕчĕк тата вăйсăр халăхсен шучĕпе пуяс тĕлĕшпе ирсĕр договорсемпе çыхăнса тăнă. Çавна пула вара, кам вăйлă пулнă—тата ытларах пуйнă, кам вăйсăр пулнă,—ăна пусарса лартнă.

Вăрçă пуçланнăшăн уйрăм çынсене айăплама юрамасть; хальхи вăрçа кăларнăшăн корольсемпе патшасене айăплани йăнăш,—вăрçа капитал кăларнă. Капитализм тупике пырса тăраннă. Çав тупик вăл конкурентсем хушшинче пĕтĕм тĕнчери вăрçа кăларма хистенĕ империализм пулса тăрать,—урăх нимĕн те мар.

Сахал йышлă халăхсене ирĕке кăларассишĕн вăрçатпăр тесе пĕлтерни çавтери пысăк ултав пулнă. Икĕ çăткан та, пĕр-пĕрин çине хаяррăн пăхса тăраççĕ, вĕсем тавра вара пусмăрта пурăнакан пĕчĕк халăхсем сахал мар.

Çавăнпа та эпир калатпăр: империализмлă вăрçăран тухмашкăн, граждан вăрçисĕр пуçне урăх май çук.

14-мĕш çулта эпир çавăн çинчен каланă чух, пире: вăл сывлăшра тӳрĕ йĕр хывни евĕрлĕ, тесе ответлерĕç, анчах пирĕн анализа малалла пулса пынă пĕтĕм событисем çирĕплетсе пачĕç. Хальхи вăхăтра шовинизм генералĕсем çарсăр тăрса юлнине куратпăр. Вăрçă пирки питех те пысăк асап тӳснĕ, тăван çĕршыва хӳтĕлес лозунг çине питех те тимлĕн пăхнă Францире, мĕншĕн тесен тăшман Париж хапхисем патĕнчех тăнă,—çав çĕршывра нумаях пулмасть-ха оборонецсем крушени тӳснĕ; чăнах та шовинизм иккĕленекен çынсенчен, Лонге пеккисенчен крушени тӳснĕ,—анчах вăл питех те кирлех мар-ха. Эпир çакна пĕлетпĕр: Российăри революцин пирвайхи кунĕсенче власть сăмах çеç калаçакан, анчах кĕсъесенче патша договорĕсенех тытса тăракан господасен аллине лекнĕ.

Российăра партисем сулахай еннелле аталанасси хăвăртрах иртнĕ пулсан, çавна ĕнтĕ революциччен пулнă ылханлă режим тата пирĕн 1905-мĕш çулти революци пулăшрĕ.

Европăра ĕнтĕ, аслă та пĕлсе ĕçлекен капитализм пуçпулса тăнă çĕрте, унăн вăйлă та йĕркеллĕ организаци пур çĕрте, унта национализмлă сĕрĕмрен хăтăласси майĕпентерех пулса пырать. Анчах та империализмлă вăрçă вăрах, асаплă вилĕмпе вилнине курмасăр тăма юрамасть.

Пĕлтернĕ тăрăх,—вĕсене пĕтĕмĕшпех ĕненме пулать,—Германия çарĕ пăсăлма тытăннă, вăл спекуляци тума пуçланă. Урăхла пулма та пултараймасть. Ыйхăран вăраннă салтак аманассипе вилесси буржуази интересĕсемшĕн çеç пулса пынине ăнланма пуçланă самантра,—масса хушшинче пăсăласси пулмасăр пултараймасть.

Франция çарĕ, пуринчен те нумайтарах тата пуринчен те çирĕпрех тăнăскер,—пăсăлас процесс ăна та ют мар иккенне кăтартрĕ. Мальвине суд туни Францири событисен чаршавне те уçса кăтартса, пиншер салтак фронта каясшăн пулманни çинчен пĕлтерчĕ.

Çаксем пурте—Российăра та сарăлса кайнă пек событисем пулассине пĕлтерсе тăракансем. Культурăллă çĕршывсем çеç пире Российăринчен нумай хаяртарах пулнă граждан вăрçин картинĕсене парĕç. Çакна пире Финляндия,—Европăри ытти пур çĕршывсенчен чи демократиллĕ çĕршыв, хĕрарăм чи малтанхи хут сасă прави илнĕ çĕршыв, çирĕплетсе парать,—çак çĕршыв красноармеецсене тискеррĕн те хаяррăн вĕлернĕ, красноармеецсем те çăмăллăнах парăнман. Çак картина ĕнтĕ çав культурăллă çĕршывсене мĕнле хаяр кунçул кĕтнине кăтартса парать.

Эсир хăвăрах куратăр ĕнтĕ, вырăс çарне пăсни—вăл большевиксен ĕçĕ тесе, вĕсене айăплани епле айванла пулнă.

Эпир пĕр отряд çеç пулса тăратпăр, вăл рабочисен ытти

отрячӗсенчен кӑшт ҫеҫ малалла кайнӑ, вӑл ыттисенчен лайӑхрах пулнӑ пирки мар, пирӗн буржуазийӗн ухмахла политики Российӑри рабочи класа хӑй ҫинчен унӑн пусмӑрне хӑвӑрграх илсе пӑрахма май панӑ пирки пулнӑ. Халӗ, Российӑри социализмлӑ стройшӑн кӗрешсе, эпир пӗтӗм тӗнчери социализмшӑн кӗрешетпӗр. Халӗ пур ҫӗршывсенче те, рабочисен пур митингӗсенче, рабочисен пур собранийӗсенче те пӗрмаях большевиксем ҫинчен калаҫаҫҫӗ, пире пӗлеҫҫӗ те ӗнтӗ, эпир хальхи вӑхӑтра пӗтӗм тӗнче ӗҫне тунине, вӗсене кирлӗ ӗҫ тунине вӗсем пӗлеҫҫӗ.

Ҫӗр харпӑрлӑхне пӑрахӑҫ туса, предприятисене тата хальхи вӑхӑтра промышленноҫа организацилес тӗлӗшпе ӗҫлекен банксене национализацилесе, пирӗн ҫине пур енчен те: эсир питех те нумай йӑнӑш тӑватӑр, тесе кӑшкӑрнине итлетпӗр. Ҫапла, анчах рабочисем хӑйсем социализм тӑваҫҫӗ, вара эпир темле йӑнӑшсем тусан та—ҫав практикӑра эпир вӗренетпӗр тата революцие пӗр йӑнӑшсӑр тата ӑста туса пыма никӗс хатӗрлетпӗр.

Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ пире питех те тискеррӗн кураймаҫҫӗ! Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ Франция империализмӗ контрреволюцие пулӑшмашкӑн вуншар та ҫӗршер миллион пӑрахма шеллемест, мӗншӗн тесен вӑл Францине вырӑссем тӳлемелли миллиардшар парӑмсене, рабочисемпе хресченсем тӳлеме йышӑнманскерсене, тавӑрма май парать.

Хальхи вӑхӑтра пӗтӗм буржуаллӑ пичет хӑйӗн страницисенче суя хыпарсем: Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Тулӑна тухса кайнӑ, вунӑ кун каялла ӑна Кронштадтра курнӑ т. ыт., Мускав ҫак кунсенчех парӑнать тата Совет влаҫӗсем тарнӑ, текен евӗрлӗ хыпарсем тултарса йӑпанать.

Пӗтӗм буржуази, пӗтӗм ӗлӗкхи Романовсем, пур капиталистсемпе помещиксем те чехо-словаксемшӗн тӑраҫҫӗ, мӗншӗн тесен чехо-словаксен пӑлхавне вӗсем Совет влаҫӗ пӗтессипе ҫыхӑнтараҫҫӗ. Союзниксем ҫавӑн ҫинчен пӗлеҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсем чи вӑйлӑ ҫапӑҫусенчен пӗрне хатӗрлеҫҫӗ. Вӗсене Российӑра тӗрек ҫитмен, вара чехо-словаксем тӗрек вырӑнне пулса тӑнӑ. Ҫавӑнпа та чехо-словаксен пӑлхавӗ ҫине тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмасан юрамасть. Ҫав пӑлхав контрреволюциллӗ чылай восстанисем хускатса ячӗ, кулаксемпе белогвардеецсен чылай пӑлхавӗсем пирӗн революциллӗ историйӗн юлашки страницисене палӑртрӗҫ.

Совет влаҫӗн положенийӗ хӑрушӑ, ҫавӑн ҫине куҫа хупмалла мар. Анчах йӗри-тавра пӑхӑр-ха, вара эпир ҫӗнтерес ӗмӗт сирӗн чӗрӗрсене хаваслантармасӑр пултараймасть.

Германия чылай поражениsem тӳсрӗ, секрет мар ӗнтӗ, ҫав поражениsem,—нимӗҫ салтакӗсем «измена» тунӑ результат; Андрио юлташа арестленӗ пирки француз салтакӗсем чи хӑрушӑ самантра фронта каясшӑн мар пулнӑ, войскӑсене фронта ярас тесен правительствӑн Андрио юлташа ирӗке кӑлармалла пулнӑ т. ыт. те.

Эпир нумай ҫухату турӑмӑр. Брестри мир[1]—пӗр йывӑр суран, эпир Германире революци пуласса кӗтрӗмӗр, анчах вӑл ун чух-

не пулса çитмерĕ. Вăл халĕ пулса пырать, пĕр иккĕленмелли те çук, революци килет тата вăл пурпĕрех пулмалла. Анчах Хĕвеланăçĕнче революци хăçан пулать тесе айван кăна ыйтма пултарать. Революци хăçан пулассине пĕлме çук, революци пулассине малтанах каласа пама çук, вăл хăйне хăех килет. Вăл ĕнтĕ ӳссе хăпарать, вăл сиксе тухмалла. Февральти революциччен пĕр эрне малтан вăл ахăрса каяссине кам та пулин пĕлнĕ-и мĕн? Ăсран тухнă пуп[2] халăха дворец патне ертсе кайнă самантра 5-мĕш çулхи революци ахăрса кайĕ тесе кам та пулин шухăшлама пултарнă-и-мĕн? Анчах революци ӳссе хăпарать, вăл пурпĕрех пулмалла.

Çавăнпа та пирĕн Совет влаçне революци пуçланиччен упраса хăвармалла, пирĕн йăнăшсем хĕвеланăçĕнчи пролетариатшăн,—пĕтĕм тĕнчери социализмшăн урок пулса тăмалла. Вырăс революцийĕн çăлăнăçĕ кăна мар, пĕтĕм тĕнчери революцийĕн çăлăнăçĕ те чехо-словаксен фронтĕнче. Халĕ ĕнтĕ пирĕн алăра, генералсем вĕçĕмсĕр сутнă çар, вĕçĕмсĕр ывăннă çар, çав çар, пирĕн юлташсем, коммунистсемпе рабочисем унта пынă хыççăн, пĕтĕм тĕнчери буржуазине хирĕç кĕрешес ĕçре революциллĕ хавасләх кăтартма тытăнни çинчен калакан сведенисем пур.

Çавăнпа та эпир, çĕнтерӳ пирте пулассине, çĕнтерсен эпир социализма хӳтĕлесе хăварассине шанатпăр.

*Чи малтанхи хут 1926 çулта пичетленĕ.*

---

## «ХĔРЛĔ ОФИЦЕР КУНĔНЧЕ» КАЛАНĂ CĂМАХ

***1918 ç. ноябрĕн 24-мĕшĕ***

Сире Халăх Комиссарĕсен ячĕпе саламлатăп,—тет Ленин.—Пирĕн çарăн тата хĕрлĕ офицерсен задачисем çинчен шухăшланă чухне, эпĕ нумаях пулмасть Финляндия чугун çулĕн вагонĕнче хам курнă пĕр ĕçе аса илетĕп.

Пĕр карчăка итлесе, çынсем темĕнрен ăшшăн кулнине куртăм эпĕ, вара унăн сăмахĕсене мана куçарса пама ыйтрăм. Финка, ĕлĕкхи салтаксене революциллĕ салтаксемпе танлаштарса, пирвайхисем буржуазипе помещиксен интересĕсене, иккĕмĕшсем вара—чухăнсен интересĕсене хӳтĕленĕ, тесе каланă. «Ĕлĕкхи вăхăтра ыйтмасăр илнĕ кашни пуленке вутăшăн та чухăн çынна хаяррăн айăпланă, халĕ ĕнтĕ, тенĕ карчăк, вăрманта салтака тĕл пулсан, вăл сана вутă йăтса кайма та пулăшать». «Халĕ ĕнтĕ, тет вăл, пăшаллă çынран урăх хăрамалла мар».

Хĕрлĕ çаршăн çакăнтан лайăхрах награда тупма та хĕн, тесе шухăшлатăп эпĕ,—тет малалла Ленин.

Малалла Ленин çапла калать: кивĕ командный состав пуринчен ытла иртĕнсе тата пăсăлса кайнă капиталист ывăлĕсенчен пулнă, ахаль салтакпа вĕсем хушшинче пĕр пекки нимĕн те пулман.

Çавăнпа та, халĕ, çĕнĕ çар туса, эпир командирсене халăхран çеç илмелле. Салтаксем хушшинче хĕрлĕ офицерсен кăна авторитет пулĕ, вĕсем çеç пирĕн çарта социализма çирĕплетме пултарĕç. Çавăн пек çара никам та çĕнтереймĕ.

*«Известия В. Ц. И. К». № 258 (522), 1918 ç. ноябрен 28-мĕшĕ*

---

## ХĔРЛĔ ÇАРА ЧĔНСЕ КАЛАНИ

1.

Юлташсем—красноармеецсем! Англия, Америка, Франция капиталисчĕсем Российăна хирĕç вăрçаççĕ. Вĕсем рабочисемпе хресченсен Советлă республикине, вăл помещиксемпе капиталистсен влаçне сирпĕтсе антарнăшăн, çавна тунипе çĕр çинчи халăхсене пример панăшăн тавăраççĕ. Англия, Франция тата Америка капиталисчĕсем патша влаçне, помещиксен влаçне, капиталистсен влаçне каялла тавăрас ĕмĕтпе Совет влаçне хирĕç Çĕпĕртен, Дон çинчен, Кавказран войскăсем илсе пыракан вырăс помещикĕсене укçа тата вăрçă хатĕрĕсем парса пулăшаç-çĕ. Çук. Вăл пулмĕ. Хĕрлĕ çар тачă пĕтĕçрĕ, çĕкленчĕ, помещиксен войскисене тата белогвардеецсен офицерĕсене Атăл патĕнчен хăваласа ячĕ, Ригăна каялла вăрçса илчĕ, пĕтĕм Украинăна тенĕ пекех каялла илчĕ, Одессăпа Ростов патне пырать. Тата нумай та мар вăй хумалла, тăшмана хирĕç тата нумай мар уйăхсем хушши кĕрешмелле, вара çĕнтерӳ пирте пулать. Хĕрлĕ çар вăл çапăçăва хресчен çĕрĕшĕн, рабочисемпе хресченсен влаçĕшĕн, Совет влаçĕшĕн ăнлануллăн, пĕр шухăшлă пулса кĕнипе вăйлă.

Хĕрлĕ çар—никам çĕнтерейми çар, мĕншĕн тесен вăл халĕ ĕнтĕ кĕрешме вĕреннĕ, юлташла дисциплинăна вĕреннĕ миллион-шар ĕçхресченĕсемпе рабочисене пĕрлештерчĕ, вĕсем хăраса ӳкмеççĕ, пысăк мар пораженисем хыççăн çирĕпленеççĕ, тăшман пĕтесси çывăх иккенне пĕлсе ун çине хăюллăрах та хăюллăрах пыраççĕ.

2.

Юлташсем—красноармеецсем! Хĕрлĕ çарти рабочисемпе хресченсен союзĕ—çирĕп, тачă, уйрăлми. Кулаксемпе питех те пуян хресченсем Совет влаçне хирĕç восстанисем тума хăтланаççĕ, анчах вĕсем питех те сахаллăн. Вĕсем хресченсене нумай вăхăта мар тата сайра-хутра çеç улталама пултараççĕ. Рабочисемпе союзра пулсан çеç помещике çĕнтерессине хресченсем пĕлеççĕ. Хăш чухне ялсенче рабочи халăхăн чи хаяр тăшманĕсем, ирĕксĕрлекенсем, власть çумне усал ĕмĕтпе пырса çулăхнă тата улталаса ĕçлекенсем, вăтам хресченсене кӳрентерсе тĕрĕс мар ĕçсем тăваканĕсем, хăйсене коммунист тесе ят параççĕ. Рабочисемпе хресченсен правительстви çавăн пек çынсене хирĕç кĕрешсе яла вĕсенчен тасатас тесе çирĕп йышăнчĕ. Вăтам хресчен тăшман мар, вăл рабочийĕн тусĕ, Совет влаçĕн

тусĕ. Вăтам хресчен кулак пек мар, вăл çын вăйне вăрламасть, урăх çын шучĕпе пуймасть, вăтам хресчен хăй тăрăшса ĕçлет, хăй вăйĕпе пурăнать. Совет влаçĕ кулаксене пусарĕ, вăтам хресченсем тĕлĕшпе тĕрĕсмарлăхсем тăвакансене ялсенчен тасатĕ, нимĕне те пăхмасăр рабочисен пĕтĕм ĕçхресченĕсемпе—чи чухăннисемпе те, вăтаммисемпе те тунă союза пурнăçа кĕртĕ.

Çав союз пĕтĕм тĕнчипе ӳсет. Революци çывхарать, пур çĕрте те ӳсет. Çак кунсенче вăл Венгрире çĕнтернĕ. Венгрире Совет влаçĕ—рабочисен правительстви[3] туса хунă. Çакăн патне пурпĕрех пур халăхсем те пырĕç.

Юлташсем—красноармеецсем! Çирĕп тăрăр, пĕр çын пек кар тăрăр! Тăшмана хирĕç хăюллăн малалла. Çĕнтерӳ сирĕн енче пулĕ. Российăра çапса çĕмĕрнĕ помещиксемпе капиталистсен влаçне пĕтĕм тĕнчипех çĕнтерĕпĕр.

*1919 ç. мартăн 31-мĕшĕ.*

---

## ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ ФРОНТА ПУЛĂШАССИ ÇИНЧЕН ПЕТРОГРАДРИ РАБОЧИСЕМ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

ПЕТРОГРАДРИ РАБОЧИ ЮЛТАШСЕНЕ

Юлташсем! Хĕвелтухăçĕнчи фронтри ĕçсем питех те начарланчĕç. Колчак паян Воткински завода илнĕ, Бугульма пĕтет; тен, Колчак тата малалла куçса пырĕ.

Хăрушлăх пит пысăк.

Эпир паян Халăх Комиссарĕсен Советĕнче Хĕвелтухăçĕнчи фронта пулăшас тĕлĕшпе васкавлă мерăсем чылай йышăнатпăр, вăйлă агитаци çĕклетпĕр.

Эпир Питĕрти рабочисенчен *пурне те ура çине тăратма,* Хĕвелтухăçĕнчи фронта пулăшма *пĕтĕм вăйсене мобилизацилеме* ыйтатпăр.

Унта салтаксем-рабочисем хăйсем тăранса пурăнĕç тата килĕсене апат-çимĕç ярса хăйсен çемьисене пулăшĕç. Чи пысăк ыйту ĕнтĕ вăл—унта революци кунçулне татса пани пулать.

Унта çĕнтерсе, *эпир вăрçа пĕтеретпĕр,* мĕншĕн тесен ютçĕршывсенчен *шуррисене урăх пулăшу пулмасть.* Кăнтăр енче эпир çĕнтерӳ патне çывхаратпăр. Кăнтăрта пĕтĕмĕшпех çĕнтермесĕр вăйсене унтан илме юрамасть.

Çавăнпа та *Хĕвелтухăçĕнчи фронта пулăшар!*

Совдеп та, профессиллĕ союзсем те пĕтĕм вăйсене пухмалла, пурне те ура çине тăратмалла, Хĕвелтухăçĕнчи фронта пур майсемпе те пулăшмалла.

Питĕрти рабочисем пĕтĕм Российăна пример кăтартса парĕç тесе эпĕ шансах тăратăп, юлташсем.

Коммунистла салампа *ЛЕНИН.*

Мускав, 1919 ç. апрелĕн 10-мĕшĕ.
*„Петроградская Правда" 81 №,*
*1919 ç. апрелĕн 12-мĕшĕ.*

---

# ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ ФРОНТРИ ПОЛОЖЕНИНЕ МАЙ Ц. К. Р. К. П. (б) ЙЫШĂННĂ ТЕЗИССЕМ

Хĕвелтухăçĕнчи фронтра Колчак тунă çĕнтерӳсем Совет республикишĕн питех те пысăк хăрушлăх туса хураççĕ. Колчака çĕмĕрсе тăкас тесен пур вăйсене те пухмалла.

Çавăнпа та Центральный Комитет партин пур организацийĕсене те пуринчен малтан пĕтĕм вăя çак мероприятисене туса ирттерес ĕçе яма хушать; вăл мероприятисене, рабочи класăн анлăрах сийĕсене çĕршыв оборони ĕçне активлăрах явăçтарас тĕлĕшпе парти организацийĕсем те, уйрăмăнах тата профессиллĕ союзсем те пурнăçа кĕртме пултармалла.

1. 1919 ç. апрелĕн 11-мĕшĕнче пĕлтернĕ мобилизацине пур енĕпе те пулăшмалла.

Партипе профессиллĕ союзсен шăпах çывăх кунсенчех, Совнарком 1919 ç. апрелĕн 10-мĕшĕнче кăларнă декрет тăрăх мобилизаци тăвассине пĕртте вăраха хăвармасăр чи хастарлă пулăшу памашкăн мĕнпур вăйĕсене халех мобилизацилемелле.

Халех çакна тумалла: мобилизаци йĕркипе каякан çынсем профессиллĕ союзсем лайăх ĕçленине курччăр тата вĕсене рабочи клас пулăшнине туйччăр.

Уйрăмăнах, мобилизаци йĕркипе каякансенчен кашниех çакна ăнланса илни кирлĕ: ăна халех фронта ăсатни унăн пурăнăçне апатçимĕç тĕлĕшĕнчен лайăхлатать, пĕрремĕшĕнчен, фронт çывăхĕнчи тырăллă çĕрте салтаксен апат-çимĕçĕ лайăхрах пулнă пирки; иккĕмĕшĕнчен, выçă кĕпĕрнесене илсе килекен тырра сахалтарах едоксем хушшинче валеçнĕ пирки; виççĕмĕшĕнчен, фронт çывăхĕнчи вырăнсенчен красноармеецсем хăйсен тăван çĕрĕсене çемьисем патне посылкăпа апат-çимĕç ярас ĕçе анлăн организациленĕ пирки.

Центральный Комитет партин кашни организацине тата профессиллĕ организацине мобилизаци туса ирттерес тата мобилизаци йĕркипе илнисене пулăшас тĕлĕшпе вăл мĕн туни çинчен кашни эрнере, кĕскен пулин те, отчет парса тăма хушать.

2. Фронт çывăхĕнчи вырăнсенче, уйрăмăнах Атăл тăрăхĕнче, профессиллĕ союзсен членĕсене пĕр çын юлмиччен пурне те хĕçпăшаллантармалла, хĕçпăшал çителĕклĕ пулмасан вĕсене Хĕрлĕ çара тĕрлĕ пулăшу парас ĕç валли, стройран тухаканнисене улăштарма т. ыт. пурне те мобилизацилемелле.

Покровск хулинче профессиллĕ союзсем хăйсен пĕтĕм членĕсен 50% мобилизацилеме хăйсем постановлени йышăннă, çавăн пек хуласем пирĕншĕн тĕслĕх пулса тăмалла. Столицăсем тата фабрика-завод промышленноçăн чи шултăра центрĕсем Покровскран кая юлмалла мар.

Профессиллĕ союзсем пур çĕрте те, хăйсен вăйĕсемпе тата средствисемпе, хăйсем патĕнче кирлех мар членĕсене пурне те Атăлшăн тата Урал крайĕшĕн кĕрешмешкĕн ярас тĕлĕшпе тĕрĕслӳ регистрацийĕ туса ирттермелле.

3. Агитаци ĕçне, уйрăмăнах мобилизацилемеллисен, мобилизацилениcемпе красноармеецсен хушшинче вăйлатасси çине чи

тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Агитацин яланхи меслечĕсемпе, лекцисемпе, митингсемпе тата ыт. çырлахмалла мар, агитаци ĕçне красноармеецсем хушшинче рабочисем группăсемпе тата пĕчченшерĕн туса пырассине сармалла, çавăн пек группăсем хушшинче рядовой рабочисене, профессиллĕ союз членĕсене, казармăсене, красноармеецсен чаçĕсене, фабрикăсене валеçмелле. Профессиллĕ союзсен кашни членĕ кашни çурта кĕрсе агитаци тăвас ĕçе, листоксем салатас тата уйрăм калаçусем ирттерес ĕçе хутшăнтарас тесе, профессиллĕ союзсем тĕрĕслессине организацилемелле.

4. Пур арçын-служащисем вырăнне те хĕрарăмсене лартмалла. Çавна тума партире те, çавăн пекех тата профессиллĕ союзсенче те çĕнĕрен регистраци туса ирттермелле...

Профессиллĕ союзсен пур членĕсем тата пур служащисем валли уйрăм карточка тумалла, çав карточка çине вăл Хĕрлĕ çара пулăшас ĕçе хутшăннине паллă тумалла.

5. Профессиллĕ союзсем, фабрика-завод комитечĕсем, парти организацийĕсем, кооперативсем т. ыт. урлă та вырăнта тата центрта халех *пулăшу бюровĕсем* е *пулăшу комитечĕсем* тумалла. Вĕсен адресĕсене пичетлесе кăлармалла. Вĕсем çинчен халăха питех те анлăн пĕлтермелле. Мобилизациленекен кашни çын, кашни красноармеец, Дон çине, Украинăна продовольстви тĕлĕшĕпе ĕçлеме каяс текен кашни çынăн çакна пĕлмелле: рабочишĕн тата хресченшĕн çавăн пек çывăх тăракан пулăшу бюровĕнче ăна канаш парĕç, вăл унта кăтартусем илĕ, ăна çар учрежденийĕсемпе çыхăнма çăмăл пулĕ т. ыт. те.

Çавăн пек бюросен уйрăм задачи *Хĕрлĕ çарăн снабжени* ĕçне пулăшасси пулмалла. Хĕрлĕ çара хĕçпăшал, тумтир тата ыт. парса тăрас ĕçе лайăхлатсан эпир унăн йышне питех те нумай ӳстерме пултаратпăр. Халăх хушшинче вара пытарнă е усăсăр выртакан хĕçпăшал сахал мар-ха. Çар валли кирлĕ запассем фабрикăсенче сахал мар пур, вĕсене хăвăрт тупса çара ямалла. Çар учрежденийĕсене, çар снабженин заведующийĕсене халăх халех питех те пысăк, хастарлă пулăшу памалла. Çак задачăна пурнăçлама пĕтĕм вăйран тытăнас пулать.

6. Профессиллĕ союзсем урлă хресченсене, уйрăмăнах çĕрĕçĕ пысăк вырăн йышăнман кĕпĕрнесенчи хресчен çамрăкĕсене Хĕрлĕ çар ретне тата Дон çинче, Украинăра продовольстви отрячĕсемпе продовольстви çарĕ тума йышлăн явăçтарас ĕçе организацилемелле.

Çав ĕçе темиçе хут аслăлатма май пур тата ăна аслăлатмалла та, вăл ĕç пĕр вăхăтрах столицăсенчи выçă халăха та, çĕрĕçĕ пысăк вырăн йышăнман кĕпĕрнесене пулăшма та тата Хĕрлĕ çара вăйлатма та кирлĕ.

7. Меньшевиксемпе эсерсем тĕлĕшĕнчен парти линийĕ хальхи вăхăтра çакăн пек: кам Колчака ăнлануллăн е ăнланмасăр пулăшать, вĕсене тĕрмене хупмалла. Колчака хирĕç кĕрешессинче пире ĕçпе пулăшман ĕççыннисене эпир хамăр республикăра чăтса тăма пултараймастпăр. Анчах меньшевиксемпе эсерсем хушшинче çавăн пек пулăшу пама кăмăл тăвакан çынсем те

пур. Çавăн пек çынсене хавхалантармалла, вĕсене пуринчен ытла Хĕрлĕ çара тылра техникăллă пулăшу парас тĕлĕшпе практикăллă ĕçсем памалла, çав вăхăтрах вĕсен ĕçне çирĕп тĕрĕслемелле.

Центральный Комитет партин пур организацийĕсене те тата пĕтĕм профессиллĕ союзсене те кивĕ шаблонсемпе çырлахса тăмасăр ĕçе революциллĕн тытăнма чĕнет.

Эпир Колчака çĕнтерме пултаратпăр. Эпир хăвăрт тата татăклăнах çĕнтерме пултаратпăр, пирĕн кăнтăрти çĕнтерӳсем тата куллен лайăхланакан, пирĕншĕн усăллă май улшăнакан пĕтĕм тĕнчери лару-тăру эпир пĕтĕмĕшпех çĕнтерессине шанăç парать.

Пур вăйсене те пухмалла, революциллĕ хастарлăха сарса ямалла, вара Колчака хăвăрт çапса аркатăпăр. Атăла, Урала, Çĕпĕре хӳтĕлеме, каялла вăрçса илме пултаратпăр, хӳтĕлемелле те вăрçса та илмелле.

*Ц. К. Р. К. П.(б.)*

*1919 ç. апрелĕн II-мĕшĕнче çырнă.*
*«Правда» хаçатăн 1919 ç. апрелĕн 12-мĕшĕнчи 79 мĕш №-че пичетленĕ.*

---

## ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ ФРОНТА МОБИЛИЗАЦИЛЕНĔ МАЙ ПРОФЕССИЛЛĔ СОЮЗСЕМ УМĔНЧЕ ТĂРАКАН ЗАДАЧĂСЕМ ÇИНЧЕН ТУНĂ ДОКЛАД

Юлташсем, çĕрĕçĕ пысăк вырăн йышăнса тăман кĕпĕрнесенче мобилизаци ирттересси çинчен паян пичетлесе кăларнă декрета эсир, паллах, пурте пĕлетĕр ĕнтĕ, çавăнпа та вăл декрета йышăнмалла тунă сăлтавсем çинче çакăн пек собранире манăн нумайччен чарăнса тăни кирлĕ те мар, мĕншĕн тесен Колчак Хĕвелтухăçĕнче çĕнтернĕ пирки пирĕн ĕçсем сасартăк питех те йывăрланни çинчен сире хаçатсенчен питех те паллă пулни хăйне хăйех ăнланмалла япала.

Эсир пĕлетĕр, правительствăн пур директивĕсем те тахçанах ĕнтĕ тĕп вăйсене Кăнтăрти фронта ярас тĕлĕшпе пулса пынă. Чăнах та, Кăнтăрти фронтра красновецсен питех те пысăк вăйĕсем пĕтĕçсе тăнă тата унта 1905-мĕш çул хыççăн, ĕлĕкхин пекех монархистла юлнă контрреволюциллĕ казаксен йăви питех те çирĕп пулнă, çавăнпа та Кăнтăрти фронтра çĕнтермесĕр Советсен пролетариллĕ влаçне центрта çирĕплетесси çинчен сăмах та пулма пултарайман. Союзниксем-империалистсем шăпах ĕнтĕ кăнтăртан, Украинăран, тапăнса килме хăтланнă тата Украинăран Совет республикине хирĕç кĕрешмелли пункт туса хума тăрăшнă май, Кăнтăрти фронт пирĕншĕн питех те пысăк вырăн йышăнса тăма пуçларĕ, çавăнпа та эпир, хамăрăн вăрçăллă задачăсене пурне те кăнтăрти фронта ытларах вăй парас, ун çине тимлĕрех пăхас тĕлĕшпе туса пынă пирки пирĕн ӳкĕнмелли çук. Çав тĕлĕшпе эпир йăнăш туман пулĕ тесе шухăшлатăп эпĕ. Унтан Одессăна илни çинчен килнĕ юлашки хыпарсем тата Симферопольпе Евпаторине илни çинчен паянхи

хыпарсем çакна кăтартса пачĕç: çав район, пĕтĕм вăрçăра чи тĕп, татса паракан роль йышăннăскер,—çав район халĕ тасалнă.

Тăвата çул хушши пынă империализмла вăрçа хыççăн граждан вăрçине малалла туса пырасси пирĕншĕн питех те хĕн пулнине, массăсем мĕнтери ываннине, халĕ, граждан вăрçине икĕ çул туса пырса, рабочисем питех те пысăк йыварлăх тӳснине эсир пит лайăх пĕлетĕр. Эпир вăрçа питех те нумай вăй хунине эсир пĕлетĕр. Çавăнпа пур вăйсене те Кăнтăрти фронтра пĕтĕçтерсе тăни Хĕвелтухăçĕнчи фронта питех те вăйсăрлатрĕ. Унта пулăшу парса тăма эпир пултарайман. Хĕвелтухăçĕнчи фронтра çар нихăçан илтмен йыварлăхсем тӳснĕ. Вăл темиçешер уйăх кĕрешнĕ, вара юлташсем-работниксем чылайăшĕ телеграммăсемпе вăрçăри красноармеецсене çавăн пек йыварлăхсене тӳсме питех те хĕн тесе пĕлтерчĕç. Çавна пула—Хĕвелтухăçĕнчи фронтра ытлашши вăйран кайни. Çав вăхăтрах Колчак, патша е патак дисциплинипе Çĕпĕрти халăха—хресченсене мобилизацилерĕ. Вăл хăйĕн çарĕнчен фронтовиксене кăларса янă, çарта руководительсем туса офицерсене тата пĕтĕм контрреволюцилле буржуазине пĕтĕçтернĕ. Вĕсем çине таянса, Колчак юлашки вăхăтра Хĕвелтухăçĕнчи фронтра Атăла хăрушлăха тăратакан çĕнтерӳсем турĕ, çав çĕнтерӳсем пире Колчака каялла ывăтса ямашкăн пирĕн питех те нумай вăй кирлĕ тесе калама хушаççĕ. Çав вăйсене пирĕн кунтан памалла пулать, мĕншĕн тесен эпир кăнтăртан вăй яма пултараймастпăр, —çапла туни вăл унта тĕп тăшмана çĕмĕрсе çитермесĕр хăварнине пĕлтернĕ пулĕччĕ.

Пирĕн ĕçсем пĕтĕмĕшпе илсен, кăнтăрта та, Дон çинче те çĕнтернĕ хыççăн, пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва пула, кашни кунах лайăхланать. Пирĕн пĕтĕм тĕнчери лару-тăру лайăхланни çинчен калакан хыпарсем килмесĕр пĕр кун та иртмест.

Виçĕ уйăх каялла Франципе Америка капиталисчĕсем питех те пысăк вăй пек туйăннă кăна мар, вĕсем çапла пулнă та, çав вăй, паллах ĕнтĕ, ун чухне вĕсем хăйсен çав тери пысăк материальнăй вăйĕсемпе пире хирĕç кĕрешес ĕçре усă курнă пулсан, пире путарса лартма пултарнă. Çавна тума вĕсем пултарнă. Халĕ ĕнтĕ эпир вĕсем çавна туманнине тата тума та пултарайманнине уççăнах куратпăр. Вĕсен Одессăри юлашки поражений çакна уççăнах кăтартса парать: империализмăн материальнăй вăйĕ мĕнле пысăк пулсан та, вăрçă ĕçĕ енчен илсе пăхсан, вĕсем Россия çине тунă походра пĕтĕмĕшпех поражени тӳсрĕç. Европăн чи варринче Совет республикисем пуррине тата совет форми питех те вăйлăн ӳснине илсен положени çине тĕп-тĕрĕссипе пăхса, ним ӳстермесĕр çакна калама пулать: эпир чăннипех пĕтĕм тĕнче масштабĕпех çĕнтеретпĕр.

Ĕç çавăн пек çеç пулсан, эпир пач лăпкăнах каласма пултарăттăмăр, анчах Колчакăн юлашки çĕнтерĕвĕсене шута илсен, çакна каламалла: унăн войскисене çĕмĕрсе аркатас тесен, пирĕн тата темиçе уйăх вăйлăн çапăçмалла пулать-ха. Пĕртте иккĕленмелли те çук, çав задачăна эпир кивĕ методсемпе çеç пурнăçа кĕртме пултараймăпăр, пирĕн ĕнтĕ Совет влаçĕ çултăлăк çура пурăннă вăхăтра питех те хăнăхнă, хăш чухне, тен,


ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА Чебоксары Чувашской АССР.

кивелнĕ методсем çирĕпленчĕç, вĕсем рабочи класăн малта пыракан сийĕн вăйне пайтах пĕтерчĕç пулĕ. Рабочи класăн хăшпĕр сийĕсенче питех те ывăнни сисĕнни, кĕрешӳ мĕнле йывăрланни çине эпир куçа хупмастпăр, анчах расчет халĕ простăрах та уççăнрах. Совет влаçĕ майлă маррисемшĕн, хăйсене политикăра пысăк çынсем тесе шутлаканскерсемшĕн те, вĕсемшĕн те ĕнтĕ, пирĕн çĕнтерӳ пĕтĕм тĕнчери масштабпах пуласси уççăнах паллă.

Колчака пула граждан вăрçи хаярлăхне тата пĕр тапхăр тӳсмелле пулать-ха. Çавăнпа та эпир, шăпах ĕнтĕ В. Ц. С. П. С.— пролетариатăн йышлă массисене пĕрлештерсе тăракан чи авторитетлă организаци—хăйĕн енчен пире темиçе уйăх хушшинчех вăрçа пĕтĕмĕшпех пĕтерме пулăшакан мерăсем туса иртермелле, тесе йышăнтăмăр. Çакна тума пĕтĕмпех май пур, мĕншĕн тесен пирĕн пĕтĕм тĕнчери положени лайăхланать, ку тĕлĕшпе кирлисем пирĕн пурте пур. Европăпа Америкăри тыл пирĕн питех те лайăх, пилĕк уйăх каярах эпир уп çинчен ĕмĕтленме те пултарайман. Кунта çакна калама пулать: Вильсон тата Клемансо господасем пире пулăшас ĕмĕт лартнă: вĕсем хушшинче харкашусем пулни çинчен, пĕр-пĕрин умĕнче алăксене хупма тăрăшни çинчен хыпарсем илсе килекен телеграммăсем, çав господасем йăлтах тӳпелешсе кайнине кăтартаççĕ.

Анчах пирĕн ĕç пĕтĕм тĕнчери масштабпа ăнăçлă пулни мĕн чухлĕ уççăнрах паллă пулса пырать, вырăс помещикĕсемпе капиталисчĕсем тата Уралăн леш енне тарнă кулаксем тата хытăрах тата хаяртарах кĕрешеççĕ. Çав мĕнпур сахал хисеплĕ пĕрпĕрне сывăх çынсем хаяррăн кĕрешеççĕ. Эсир, паллах ĕнтĕ, хаçатсенчи хыпарсем тăрăх, Уфара белогвардеецсен террорĕ çавтери хаярланса çитнине асăрхарăр пулас; иккĕленмелли те çук, çав белогвардеецла элементсем, çав буржуази хăйсен юлашки вăйĕсене хураççĕ. Буржуази питех те хаярланнă: вăл хăйĕн питех те вăйлă наступленийĕпе пирĕн вăйсен пĕр пайне Кăнтăрти ĕçе татса паракан фронтран пăрса яма тăрăшать. Çавна эпир тумăпăр, эпир рабочисене уççăнах çапла калатпăр: ку Хĕвелтухăçĕнче пирĕн çĕнĕрен те çĕнĕрен пĕтĕм вăйсене хурса кĕрешме кирлине пĕлтерет, тетпĕр.

Эпĕ сире, ман шутпа вăйсене çĕнĕлле йĕркелеме хушакан, профессиллĕ союзсен умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратакан чылай практикăллă ĕçсем сĕнетĕп, çав ĕçсем, эпĕ сире халĕ кĕскен çеç каласа панă положенире кирлĕ тесе шутлатăп. Çавăн çинче малалла чарăнса тăни кирлĕ те мар—ăна пурте пĕлеççĕ. Çав положени, чи тĕрĕссипе шухăшласа калас пулсан, вăрçа шалтах та тата пĕтĕм тĕнчери масштабпа та темиçе уйăх хушшинчех пĕтерсе хума май парать. Анчах çав темиçе уйăх хушшинче ытлашши вăй хуни кирлĕ. Профессиллĕ союзсем умне лартмалли пирвайхи задача çакă пулать:

«1. 1919 ç. апрелĕн 11-мĕшĕнче пĕлтервĕ мобилизацине пур енĕпе те пулăшмалла.

Партипе профессиллĕ союзсен шăпах çывăх кунсенчех, Совнарком 1919 ç. апрелĕн 10-мĕшĕнче кăларнă декрет тăрăх моби-

лизаци тăвассине пĕртте вăраха хăвармасăр, чи хастарлă пулăшу памашкăн мĕнпур вăйĕсене халех мобилизацилемелле.

Халех çакна тумалла: мобилизаци йĕркипе каякан çынсем профессиллĕ союзсем лайăх ĕçленине курччăр тата вĕсене рабочи класс пулăшса тăнине туйччăр.

Уйрăмăнах, мобилизаци йĕркипе каякансенчен кашни çакна ăнланса илни кирлĕ: ăна халех фронта ăсатни унăн пурнăçне апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен лайăхлатать, пĕрремĕшĕнчен, фронт çывăхĕнчи тырăллă çĕрте салтаксен апат-çимĕçĕ лайăхрах пулнă пирки; иккĕмĕшĕнчен, выçă кĕпĕрнесене илсе килекен тырра сахалтарах едоксем хушшинче валеçнĕ пирки; виççĕмĕшĕнчен, фронт çывăхĕнчи вырăнсенчен красноармеецсем хăйсен тăван çĕрĕсене çемьисем патне посылкăпа апат-çимĕç ярас ĕçе анлăн организациленĕ пирки...»

Паллах, апат-çимĕç положенийĕ çинчен эпĕ кунта кĕскен çеç каларăм, анчах эсир пурте çакна ăнланатăр: вăл—пирĕн шалтичи пысăк йывăрлăх пулса, вара мобилизацине фронт патĕнчи тата тырăллă вырăнсене хăвăрт куçнипе, формированисене шăпах ĕнтĕ кунта мар—унта организацилленипе çыхăнтарма май пулман пулсан,—çав май пулман пулсан, мобилизаци шанчăксăр пулнă пулĕччĕ, урăхла каласан вăл ăнăçлă пуласси çине шанма пулман пулĕччĕ. Анчах ун пек май халĕ пур. Мобилизаци пуринчен ытла çĕрĕçĕ пысăк вырăн йышăнман кĕпĕрнесенче, пуринчен ытла рабочисемпе хресченсем выçăпа аптăранă вырăнсенче, пулса иртмелле. Эпир вĕсене чи малтан Дон çине куçарма пултаратпăр—халĕ ĕнтĕ пĕтĕм Дон облаçĕ пирĕн алăра; казаксене хирĕç кĕрешӳ тахçанах пынă, малта тăракан чаçсене унта, патĕнче кăна мар, тата апат-çимĕç посылкисем ярас ĕçе сарнипе те тăрантарма майсем пур. Çав тĕлĕшпе утăмсем тунă, уйăхра икĕ хут апат-çимĕç посылкисем 20-шер кĕренке ярса тăма ирĕк панă. Çав тĕлĕшпе килĕшӳ пулнă. Çапла вара, иртнĕ çулта пăт çурă посылка яма льгота панине—вĕсене апат-çимĕç посылкисене ытларах илнипе танлаштарма пулать, вĕсем красноармеецсен çемьисене кунта пулăшу пама пултараççĕ.

Çавăн пек ĕçе сарса, эпир фронта пулăшассине, çав тĕлĕшрен ытларах йывăрлăх тӳсекен, çĕрĕçĕ пысăк вырăнта тăман тĕп районсене апат çимĕç тăратассине лайăхлатнипе çыхăнтарăпăр... Паллах, Дон çине каясси Атăл тăрăхне *каяссипе* çыхăнса тăрĕ, халĕ пире тăшман питех те пысăк йывăрлăх туса хучĕ. Атăлăн леш енче, хĕвелтухăçĕнче хатĕрлесе хунă темиçе миллион пăт тырă халĕ ĕнтĕ пĕтнĕ. Унта вăрçă çывăхах, тӳррĕмĕнех тырăшăн вăрçни пулса тăрать. Профессиллĕ союзсен задачи—çав мобилизаци яланхи пек мар пулса иттĕр тесе тăрăшасси пулса тăрать, вăл Советсене профсоюзсем пулăшу парассипе çыхăнмалла.

Эпĕ вуласа панă тезисра ун çинчен çителĕклĕ конкретлăх каласа паман. Çав пур енлĕ пулăшăва малтан примерлă чылай ĕçсемпе туса кăтартма кирлĕччĕ тесе шухăшлатăп эпĕ, унтан вара шăпах профессиллĕ союзсем, пĕтĕм вăйсене мобилизаци-

лесе, конкретлă кăтартусем тата практикăллă план хатĕрлесе, ăна çав мобилизацине irttерме пулăшмалла, ăна вăрçăллă-продовольстви ĕçĕ евĕрлĕ çеç мар тата питех те пысăк политикăллă утăм туса хумалла, ăна эпир вăрçа темиçе уйăх хушшинче пĕтерме пултарнине ăнланакан рабочи класăн ĕçĕ туса хумалла, мĕншĕн тесен пĕтĕм тĕнчери масштабпа илсен пирĕн союзниксем килмелли май шанчăклăнах пулса тăнă. Çавна пролетариллĕ организацисем çеç, профессиллĕ союзсем çеç тума пултараççĕ. Çав практикăллă мероприятисене пурне те каласа пама эпĕ пултараймастăп. Вĕсене профессиллĕ союзсем хăйсем кăна тума пултараççĕ, тесе шухăшлатăп эпĕ. Çав задачăна вĕсем, вырăнти уйрăмлăхсене шута илсе, ĕçе практикăллă никĕс çинче туса пыма пултараççĕ. Пирĕн задача: рабочи класа политикăллă тĕп кăтартусем парассинче пулса тăрать, вăл çĕнĕрен тачă пĕрлешмелле тата хурланмалли чăнлăха ăнланса илмелле, мĕншĕн тесен вăл çĕнĕ йывăрлăх илсе килет, анчах çав вăхăтрах вăл йывăрлăхсене кĕске срокрах çĕнтерме пултаракан реальнăй тата практикăллă çул палăртать. Рабочисем тырăллă кăнтăр енне йышлăн кайнипе эпир унти вăйсене тĕреклететпĕр, вара белогвардеецсемпе помещиксен войскисем вĕсем хăйсен хĕвелтухăçĕнчи çĕнтерĕвĕсемпе пирĕн кăнтăра вăйсăрлаттарма шутлаççĕ пулсан, çавна тума пултараймĕç, тесе шухăшлатăп эпĕ, эпир кăнтăра вăйсăрлатмăпăр, хĕвелтухăçне пулăшăпăр, тесе çирĕп шанса тăратăп эпĕ. Тăшман фронтовиксене пăрса ярса—вăл вĕсенчен хăрать—Çĕпĕрти çамрăксене пухнă, вăл Çĕпĕрти хресченсене илсе килет. Ку вăл—унăн юлашки шанчăкĕ, юлашки ресурсĕ. Ăна пулăшаканĕ çук, чĕрĕ вăйсем çук. Союзниксем ăна пулăшу парайман. Вĕсен çавна тума вăй çитеймен.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ эпĕ профессиллĕ движенин представителĕсенчен çав ыйту çине питех те пысăк тимлĕхпе çаврăнса пăхма тата мобилизацине кивĕлле мар irttермелле тумашкăн ыйтатăп. Ку вăл рабочи класăн питех те пысăк политикăллă кампанийĕ, вăрçăллă-продовольстви кампанийĕ çеç мар, питех те пысăк политикăллă кампани пулса тăмалла. Ĕçе вăрçă факторĕсен енчен илсе чи тĕплĕн шутласа пăхсан, çак ĕçе çывăхри темиçе уйăх хушшинчех татса парасси пирки никам та иккĕленмест. Çавна тăвас тесен профессиллĕ союзсем ĕçĕн кивĕ рамкисемпе çырлахмалла мар. Кивĕ рамкăсенче ĕçлесе, çав задачăна пурнăça кĕртме çук. Кунта çĕнĕ сулăмлăх кирлĕ. Профессионалистсем пек кăна мар тата революционерсем пек те ĕçлемелле, вĕсен совет республикин эпир Октябрьте татса панă тĕп ыйтуне—империализмлă вăрçа пĕтерес тата социализмлă строительствăна пуçлас ыйтăва татса памалла. Халĕ профессиллĕ союзсем Российăри граждан вăрçине пĕтермелли практикăллă ыйтăва татса парас тĕлĕшпе революционерсем пекех—массăллă майсемпе ĕçлемелле, кивĕ рамкăсемпе çырлахса тăмалла мар. Çав вăрçă пĕтесси питех те çывăх, анчах вăл питех те йывăр. Малалла:

«2. Фронт çывăхĕнчи вырăнсенче, уйрăмăнах Атăл тăрăхĕнче профессиллĕ союзсен членĕсене пĕр çын юлмиччен пурне те хĕçпăшаллантармалла, хĕçпăшал çителĕклĕ пулмасан, вĕсене Хĕр-

лӗ ҫара тӗрлӗ пулӑшу парас ӗҫ валли, стройран тухаканнисене улӑштарма т. ыт. ӗҫе пурне те мобилизацилемелле».

«3. Агитаци ӗҫне, уйрӑмӑнах мобилизацилемеллисен, мобилизациленисемпе красноармеецсен хушшинче вӑйлатасси ҫине чи тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмалла. Агитацин яланхи меслечӗсемпе, лекцисемпе, митингсемпе тата ыт. ҫырлахмалла мар, агитаци ӗҫне красноармеецсем хушшинче рабочисем группӑсемпе тата пӗчченшерӗн туса пырассине сармалла, ҫавӑн пек группӑсем хушшинче рядовой рабочисене, профессиллӗ союз членӗсене, казармӑсене, красноармеецсен чаҫӗсене, фабрикӑсене валеҫмелле. Профессиллӗ союзсен кашни членӗ кашни ҫурта кӗрсе агитаци тӑвас ӗҫе, листоксем салатас тата уйрӑм калаҫусем иттерес ӗҫе хутшӑнтарас тесе, профессиллӗ союзсен тӗрӗслессине организацилемелле».

Пирӗн партине хӗсӗрленӗ е эпир влаҫшӑн кӗрешекен парти пулнӑ чухнехи агитацин ӗлӗкхи пек меслечӗсене эпир халӗ, паллах, кӑштах маннӑ. Государство влаҫӗ пирӗн алла питех те пысӑк государство аппаратне пачӗ, вӑл пулӑшнипе эпир агитаци ӗҫне ҫӗнӗ ҫул ҫине лартрӑмӑр. Ҫак ҫулталӑк ҫурӑ хушшинче вӑл урӑх масштабпа пулса пычӗ, анчах империализмлӑ вӑрҫӑ питех те пысӑк юхӑну туса хӑварнӑ, граждан вӑрҫи ӑна тата ытларах вӑйлатнӑ вӑхӑтра тата Российӑн чылай кӗпӗрнисем ҫине вӑрҫӑ килсе пуснӑ пирки питех те пысӑк йывӑрлӑхсем пулнӑ вӑхӑтра, эсир пӗлетӗр ӗнтӗ, пирӗн агитаци кирлисене нумайӑшне тӑваймарӗ. Ӗлӗкхинпе танлаштарсан, вӑл тӗлӗнмелле ӗҫсем турӗ, анчах вӑл пурне те мар туса ҫитерчӗ тата ҫав ӗҫе вӗҫнех ҫитереймерӗ. Хресченсемпе рабочисен питех те йышлӑ массисене халӗ агитаципе питех те сахал ҫаврӑнса илнӗ. Ҫавӑнпа та кунта кивӗ рамкӑсемпе ҫырлахмалла мар, ҫавна валли халӗ ӗнтӗ советсен государство органӗсем пур тесе пӗртте шанса лармалла мар. Эпир ҫавӑн ҫине шанса ларнӑ пулсан эпир задачӑна татса парайман пулӑттӑмӑр. Ҫав тӗлӗшпе киввине аса илес пулать, уйрӑм ҫыннӑн пуҫарулӑхӗ ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхмалла; ҫав уйрӑм ҫыннӑн пуҫарулӑхӗпе массӑллӑ масштабпа усӑ курсан, эпир халӗ ӗлӗкхинчен ытла тума пултарӑпӑр, тесе каламалла, мӗншӗн тесен халӗ рабочи класс, унӑн массинче ывӑнса ҫитнӗ представительсем пулсан та, ҫапах та хӑйӗн туйӑмӗпе задачӑн тупсӑмне ӑнланса илнӗ. Хайсен политикӑллӑ идеологинче, ӗҫсем мӗнле тӑнине хирӗҫ кӗрешнӗ ҫынсем те—меньшевиксемпе эсерсем,—чӑн-чӑн пурӑнӑҫа ӑнланмасӑр хӑйсене тимӗр питлӗхсемпе хӳтӗлесе тӑчӗҫ,—вӗсем те ӗнтӗ кӗрешӳ кунта пӗтӗм тӗнчере кивӗ, буржуаллӑ стройпа ҫӗнӗ, совет стройӗ хушшинче пынине ӑнланчӗҫ. Германири революци хӑйне ӗҫре кӑтартнӑранпа; унӑн правительстви социал-патриотсен ытларахӑшӗ пулӑшнипе пролетариатӑн чи лайӑх ҫулпуҫӗсене вӗлерессине кӑна пана вӑхӑтранпа; Совет влаҫӗ Европӑри чылай ҫӗршывсенче ҫӗнтернӗренпе,—ҫав вӑхӑтранпа ыйтӑва практически татса панӑ. Ыйту ҫапла тӑрать: Совет влаҫӗ, е кивӗ, буржуаллӑ йӗрке. Ҫавна историллӗ масштабпа практически татса панӑ. Рабочисен туйӑмӗ ӗҫе татса пачӗ; ҫав туйӑмран вунӑ хут вӑйлӑ агитаци пулса тӑни кирлӗ.

Апат-çимĕç çук чухне, эпир ăна ӳстерме пултараймастпăр, профессиллĕ агитаторсемпе интеллигентсене, вĕсем çук пулсан,— вунă хут йышлăлатма пултараймастпăр,—çавна тума пултараймастпăр эпир. Анчах эпир рабочисен йышлă массине: эсир халĕ, ĕнерхи кунччен пулнă пек мар, тесе калама пултаратпăр. Эсир, ĕçе, харпăр-хăй агитацилес меслетпе тума тытăнсан, эсир нумайăн пулни çĕнтерĕ.

Эпир çакна тума пултарăпăр: çав мобилизацирен яланхи пек мобилизаци çеç мар пулса тăрĕ, унран чăн-чăн, рабочи класăн ăраскалĕ мĕнле пулассине пĕтĕмĕшпех татса паракан поход пулса тăрĕ, вăл класс пире çак çывăх уйăхсем юлашки тата татаклă çапăçуран уйăрса тăнине ăнланать—юрăри тата сăвăсенче каланă пек çапăçу мар, сăмахăн чăн-чăн ăнлавĕпе илнĕ çапаçу, мĕншĕн тесен эпир халĕ хамăрăн практически вăйсене белогвардеецсем тĕлĕшĕнчен çеç мар виçсе пăхрăмăр ĕнтĕ.

Пĕр çулталăк хушшинчи вăрçă вăхăтĕнче эпир хамăрăн вăйсене пĕтĕм тĕнчери империализм тĕлĕшĕнчен практикăра виçсе пăхрăмăр. Пире нимĕçсем пăвнă вăхăт пулнă; нимĕçсене çыхса лартнине, вĕсене хăрах алăпа англо-француз империалисчĕсем тытса тăнине пĕлнĕ эпир. Пире хирĕç англичансемпе французсем тухнă вăхăт та пулчĕ, ун чухне вĕсен икĕ аллине те салтса янăччĕ. 1918-мĕш çулхи декабрьте вĕсем пирĕн çине тапăннă пулсан, эпир тытăнса тăма пултарайман пулăттăмăр, халĕ ĕнтĕ эпир вĕсене тата темиçе йывăр уйăх тӳссе курнă хыççăн вĕсем буржуаллă йĕрке тĕлĕшĕнчен çĕрсе кайнине пĕлетпĕр. Вара вĕсен чи лайăх войскисем Украинăра çапăçнă повстанецсен отрячĕсем умĕнче те каялла чакма çеç юрăхлă. Çапла вара эпир пĕтĕмĕшпех уççăн ăнланмалла калатпăр, рабочи класс вара кунта юлашки çапăçу пулмаллине, эпир кунта татăклăнах çĕнтерме пултаратпăр-и, е эпир çаплах çĕнĕ йывăрлăхсем урлă малалла пырăпăр-и,—çавна темиçе уйăх хушшинче татса парассине хăйĕн сисĕмĕпе туйса илчĕ.

Малаллахи мероприятисенчен кунта палăртса хунисене вуласа парăп:

«4. Пур арçын-служащисем вырăнне те хĕрарăмсене лартмалла. Çавна тума партире те, çавăн пекех тата профессиллĕ союзсенче те çĕнĕрен регистраци туса ирттермелле...

5. Профессиллĕ союзсем, фабрик-завод комитечĕсем, парти организацийĕсем, кооперативсем т. ыт. урлă та вырăнта тата центрта халех *пулăшу бюровĕсем, пулăшу комитечĕсем* тумалла. Вĕсен адресĕсене пичетлесе кăлармалла. Вĕсем çинчен халăха питех те анлăн пĕлтермелле. Мобилизациленекен кашни çын, кашни красноармеец, Дон çине, Украинăна продовольстви тĕлĕшĕпе ĕçлеме каяс текен кашни çын çакна пĕлмелле: рабочишĕн тата хресченшĕн çавăн пек çывăх тăракан пулăшу бюровĕнче кăна канаш парĕç, вăл унта кăтартусем илĕ, ăна çар учрежденийĕсемпе çыхăнма çăмăл пулĕ т. ыт.

Çавăн пек бюросен уйрăм задачи *Хĕрлĕ çарăн снабжени* ĕçне пулăшасси пулмалла...»

... Эпĕ хама темиçе тĕрлĕрен эпохăсем çинчен кăшт калама ирĕк парам... Пирĕн умра тăракан хамăрăн пирвайхи вăрçăллă задачăна эпир, халĕ Украинăра унти юлташсем пекех, партизанла, тăтăшах мар пулакан восстанисемпе, татса патăмăр. Унта пирĕн вăрçăран ытларах партизанла движени тата стихийлă восстани пулса пырать Çавна пула питех те пысăк тапăну тата çав тери йĕркесĕрлĕх пулса пырать, вăл вăхăтра апат-çимĕç запасĕсемпе усă курасси— питех те йывăр задача. Унта нимĕнле кивĕ аппарат та çук. Унта пирĕн смольнăйри тапхăрти влаçран юлнă пек аппарат та çук—вăл питех те начар, пирĕншĕн ĕçленинчен пире хирĕç ытларах ĕçлекен аппарат пулнă. Анчах мĕншĕн-ха Украинăра çавăн пек аппарат çук! Мĕншĕн тесен вăл партизанлăхпа стихийлă восстанисен тапхăрĕнчен яланхи çар тапхăрне куçман, яланхи çар вара кирек хăш класăн çирĕпленнĕ влаçне те, çав шутрах пролетариатăнне те тивĕçлĕ. Çавна эпир темиçе уйăх хушши пулнă вĕçĕмсĕр пысăк йывăрлăхсем хыççăн турăмăр.

Снабжени ыйтăвĕ тĕлĕшпе пирĕн хăйне уйрăм учрежденисем пулса тăчĕç. Снабжени ĕçĕнче эпир учрежденисем тăвасси патне хăшпĕр таран специалистсемпе усă курни урлă пытăмăр, вĕсене парти енчен контроль туса пытăмăр, халĕ ĕнтĕ пирĕн пур çĕрте те снабжени ĕçне туса пыракан çар учрежденийĕсем пур. Юлашки вăя пухса кĕрешнĕ самант çитсен эпир çапла калатпăр: эпир кивĕ партизанщина патне таврăнмастпăр, эпир унпа питех те асап куртăмăр, эпир организациленĕ хальхи учрежденисене, Хĕрлĕ çарăн снабженийĕ тĕлĕшĕпе пĕрмаях ĕçлекен учрежденисене, рабочи класăн представителĕсене çав учрежденисене кĕме чĕнетпĕр. Рабочи класс хăйĕн массипе çавна тума пултарать. Пурлăх тĕлĕшĕнчен, ăна тупас, ăсатас т. ыт. тĕлĕшпе пирĕн йĕркесĕрлĕх нумай иккенне пĕлетĕр эсир. Хĕрлĕ çарăн снабженийĕ тĕлĕшĕпе кунта пулăшу кирлĕ. Çар çыннисем пире нумай йышлă салтак мобилизацилесен ĕç малалла кайĕ, вĕсем Хĕвелтухăçĕнчи фронтри ĕçсене хăвăрт тата пĕтĕмĕшпех татса парĕç, теççĕ. Çав ĕç пуринчен ытла снабжени çителĕксĕр пирки чăрманса тăрать. Империализмлă вăрçă тата граждан вăрçи хăварнă юхăнчăклăх вăхăтĕнче, кунтан—тĕлĕнмелли çук. Анчах вăл пире çĕнĕ положение, çĕнĕ задачăсене пĕлсе çитме тата ăнланма хушать. Çулталăк каярах эпир яланхи учрежденисем туса хуни сахал-ха: çав яланхи учрежденисене тата массăллă движенипе, рабочи класăн массăллă хастарлăхĕпе пулăшмалла. Кунта профессиллĕ союзсем çавна мĕнле тума пултарассине çырса хурулла кăтартса паракан схема палăртнă. Çавна профессиллĕ союзсем çеç тума пултараççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем производство патне пуринчен те çывăх тăраççĕ тата миллионшар рабочисен чи йышлă массисене ертсе пыраççĕ. Çав задача ĕçĕн хăвăртлăхĕсене те тата унăн характерне те темиçе уйăха улăштарма хушать. Çапла майпа эпир темиçе уйăх хушшинче пĕтĕмĕшпех çĕнтерсе илмешкĕн хамăра валли майсем тăвăпăр.

«6. ... Профессиллĕ союзсем урлă хресченсене, уйрăмăнах çĕрĕçĕ пысăк выран йышăнман кĕпĕрнесенчи хресчен çамрăкĕ-

сене Хĕрлĕ çар ретне тата Дон çинче, Украинăра продовольстви отрячĕсемпе продовольстви çарĕ тума йышлăн явăçтарас ĕçе организацилемелле.

Çав ĕçе темиçе хут аслăлатма май пур тата ăна аслăлатмалла та, вăл ĕç пĕр вăхăтрах столицăсенчи выçă халăха та, çĕрĕçĕ пысăк вырăн йышăнман кĕпĕрнесене пулăшма та тата Хĕрлĕ çара вăйлатма та кирлĕ...»

Эпĕ ĕнтĕ пирĕн апат-çимĕç задачисем вăрçă задачисемпе çыхăнса кайни çинчен каларăм, çав задачăсене çыхăнтармасăр юраманнине эсир питех те лайăх пĕлетĕр. Вĕсене обязательнă çыхăнтармалла. Пĕр задачăна та пĕр-перинсĕр татса пама май çук.

«7. ... Меньшевиксемпе эсерсем тĕлĕшĕнчен парти линийĕ хальхи вăхăтра çакăн пек: кам Колчака ăнланулăн е ăнланмасăр пулăшать, вĕсене тĕрмене хупмалла. Колчака хирĕç кĕрешессинче пире ĕçпе пулăшман ĕççыннисене эпир хамăр республикăра чăтса тăма пултараймастпăр. Анчах меньшевиксемпе эсерсем хушшинче çавăн пек пулăшу пама кăмăл тăвакан çынсем те пур. Çавăн пек çынсене хавхалантармалла, вĕсене пуринчен ытла Хĕрлĕ çара тылра техникăллă пулăшу парас тĕлĕшпе практикăллă ĕçсем памалла, çав вăхăтрах вĕсен ĕçне çирĕп тĕрĕслемелле...»

Кунта эпир çакна каламалла: юлашки вăхăтра пирĕн уйрăмăнах йывăр тата ырă мар япаласем тÿссе ирттермелле пулчĕ. Эсир пĕлетĕр, меньшевиксемпе эсерсен ертсе пыракан групписем ĕç çине çапла пăхрĕç: „Нимĕне те пăхмасăр, эпир парламентарисем пулса юласшăн тата большевиксене те, колчаковецсене те пĕр пекех сивлесшĕн“, терĕç. Айăп ан тăвăр,—тесе каламалла пулчĕ пирĕн вĕсене,—халĕ пирĕн парламентпа аппаланма вăхăт çук. Пире мăйран çавăрса тытаççĕ, эпир юлашки тата татăклă çапăçура кĕрешетпĕр. Эпир сирĕнпе шÿт тумăпăр. Эсир çавăн пек стачкăсем тăватăр пулсан, эсир рабочи класс умĕнче питех те пысăк преступлени тăватăр. Кирек мĕнле забастовка та пирĕншĕн пиншер те пиншер красноармеецсен пурнăçне тăрать. Эпир çавна вырăнта куратпăр. Тулăра пăшалсем тума чарни—вăл пиншер хресченсемпе рабочисене пĕтерни пулать; пире Тулăра темиçе заводсăр хăварни вăл пиншер рабочисен пурнăçне туртса илни пулать. Эпир калатпăр: эпир вăрçатпăр, эпир юлашки вăйсене паратпăр, эпир çав вăрçа пĕртен пĕр тĕрĕслĕхлĕ тата законлă вăрçă тесе шутлатпăр. Эпир социализма хамăр патăрта тата пĕтĕм тĕнчере чĕртсе ятăмăр. Çав кĕрешÿре кам пире хăть мĕн чухлĕ те пулин чăрмантарать, ăна хирĕç эпир ним шеллемесĕр кĕрешетпĕр. Кам пирĕнпе мар—вăл пире хирĕç. Çавăн пек çынсем пур пулсан вара,—меньшевиксем хушшинче çавăн пеккисем пуррине пĕлетпĕр эпир,—вĕсем Российăра пулса пыракан ĕçсене ăнланса илме пултараймасăр, е ăнланса илесшĕн мар пулса, Российăра çав «начар» большевиксем çавăн пек революци тума пултарнă пулсан, Германире вара революци танлаштарма çук пысăкрах асаплăхпа çуралнине ĕненсе çитмен. Унти демократиллĕ республика—мĕн вăл? Мĕн вăл Германири ирĕклĕх?—Вăл пролетариатăн чăн-чăн çулпуçĕсене: Карл

Либкнехта, Роза Люксембурга тата ытти вуншар çулпуçсене вӗлермелли ирӗклӗх. Çапла тунипе шейдемановецсем хӑйсен пораженине вӑраха тӑсаççӗ. Паллах, вӗсем тытса пыма пултараймаççӗ. Ноябрӗн 9-мӗшӗнчен пуçласа Германия республикинче ирӗклӗх пулса тӑнӑранпа пилӗк уйӑх иртрӗ. Çав вӑхӑт хушшинче влаçсен представителӗсем е шейдемановецсем, е вӗсен хӑрешкисем пулнӑ. Анчах вӗсен çилли хытӑрах та хытӑрах вӑйланнине пӗлетӗр эсир. Ку пример е буржуази диктатури, е пролетариат диктатури пулма пултарнине кӑтартать; кунта варри çукки, паян сӑмахран, эпир *«Frankfurter Zeitung»* хаçатра вуланинчен куратпӑр. Вӑл çапла калать: Венгрия примерӗ пирӗн социализм патне каймаллине кӑтартса парать. Венгрия çакна кӑтартса пачӗ: çӗршыв питех те пысӑк йывӑрлӑхра пулнине, ӑна çӑлакан никам та çуккине, халӑха хӑтӑлмалли çавӑн пек йывӑр çулпа Советсенчен пуçне урӑх никам та илсе каяс çуккине пӗлсе, буржуази влаçа хӑй ирӗккӗнех парать,—тет. Вара киввипе çӗнни хушшинче иккӗленсе: эпир пролетариатӑн идейӑллӑ диктатурине йышӑнмастпӑр пулсан та, анчах эпир хамӑрӑн ӗненӳсене хамӑрта упраса, Совет влаçне пулӑшма хатӗр, мӗншӗн тесен хаяр вӑрçӑра, каласмасӑрах, çапӑçма кирлине ӑнланатпӑр тесе калакан çынсене, — çавӑн пек çынсене эпир çапла ответ паратпӑр: эсир политикӑпа хӑтланас тетӗр пулсан, политика тесе эсир, ывӑнса тарӑхса çитнӗ массӑсем умӗнче Совет влаçне ирӗклӗн критикленине ӑнланатӑр пулсан, çавӑнпа вара сисмесӗрех Колчака пулӑшатӑр,—эпир калатпӑр: çавӑн пек çынсене хирӗç ним шеллемесӗр кӗрешмелле, тетпӗр. Çав линине часах пӗлсе çитме тата пурӑнăçа кӗртме йывӑр. Эпир вӗсен тӗлӗшпе пӗр лини тытма пултараймастпӑр. Эпир калатпӑр: сирӗн хӑвӑрӑн политикӑрпа хӑтланас кӑмӑл пулсан—эпир сире тӗрмере е сире йышӑнма тытӑнакан ытти çӗршывсенче, вырӑн парӑпӑр, тетпӗр. Çавӑн пек çӗршывсене эпир темиçе меньшевик парса хӑналӑпӑр. Е, юлашкинчен, эсир хӑвӑра çапла каласшӑн: эпир Совет влаçне пулӑшӑпӑр, унсӑрӑн тата темиçе çул çав тери пысӑк инкек тӳсмелле пулӗ, вӗсем çапах та Совет влаçӗ çӗнтерсе илнипе пӗтӗç, тесшӗн. Çавӑн пек çынсене пур майсемпе те пулӑшмалла тата практикӑллӑ ӗç памалла. Çав политикӑна, пӗр еннелле пыракан политика пек çӑмӑллӑнах тата сасартӑках палӑртма май çук, анчах эпӗ йывӑр вӑрçӑ мӗн иккенне, Хӗрлӗ çарӑн снабженийӗ мӗн иккенне, фронтра кашни красноармеецӑн курма пӳрнӗ пӗтӗм тискерлӗхӗсем мӗн иккенне практикӑра сӑнанӑ кирек хӑш рабочи—политикӑн çав урокӗсене кирек хӑш рабочи питех те лайӑх ӑнланӗ тесе шанса тӑратӑп. Çавӑнпа та эпӗ çак тезиссене йышӑнма тата профессиллӗ союзсен пӗтӗм вӑйӗсене пухса, çав тезиссене пур майсемпе те хастарлӑрах тата пур майсемпе те хӑвӑртрах пурнăçа кӗртме ыйтатӑп.

*Доклада профессиллӗ союзсен Пӗтӗм Российӑри Центральный Совечӗн пленумӗнче 1919 çулхи апрелӗн 11-мӗшӗнче тунӑ.*

---

## ШПИОНСЕНЧЕН СЫХЛАНĂР!

Шпионсене вилĕм!

Белогвардеецсем Петроград çине тапăнса килни çакна уççăнах кăтартса пачĕ: фронт çывăхĕнчи пур вырансенче те, кашни пысăк хулара шуррисен шпионаж, предательство, кĕперсене сирпĕнтерсе çĕмĕрес, тылра восстанисем тăвас, коммунистсемпе рабочи организацисен паллă членĕсене вĕлерес тĕлĕшпе ĕçлекен сарлака организаци пур.

Пурин те хурал вырăнĕсенче тăмалла. Пур çĕрте те сыхлăха икĕ хут ӳстермелле, шпионсене тата шурă заговор тăвакансене йĕрлесе тупас тата тытас тĕлĕшпе чылай мерăсем шухăшласа пăхса, чи çирĕппĕн пурнăçламалла.

Чугун çул работникĕсем тата çар чаçĕсенче политика тĕлĕшĕпе ĕçлекен мĕнпур работниксем, пĕри те юлмасăр, сыхăлăха уйрăмах ӳстерме тивĕçлĕ.

Ăнланулла рабочисемпе хресченсем пурте Совет влаçне хӳтĕлемешкĕн хăйсен кăкăрĕсемпе тăмалла, шпионсене тата белогвардеецла предательсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленмелле. Кашни хурал вырăнĕнче—парти комитечĕсемпе, Ч. К., Совет работникĕсен хушшинчи чи шанчăклă тата чи опытлă юлташсемпе тăтăшах вăрçăри пек организацилеиĕ çыхăну тытмалла.

Рабочисемпе-Хресченсен Оборона  
Совечĕн Председателĕ *В. Ульянов (Ленин).*  
Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ *Ф. Дзержинский.*

*Чи малтан „Правда“ хаçатăн 1919 ç. майăн 31-мĕшĕнче 116-мĕш №-рте пичетленĕ.*

---

## ПУРТЕ ДЕНИКИНПА КĔРЕШМЕ!

### РКП (БОЛЬШЕВИКСЕН) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ ПАРТИ ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕМ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

Юлташсем! Социализмлă революцин питех те йывăр самантсенчен пĕри, пур енчен те пулас, чи йывăр самант çитрĕ. Эксплуататорсене, помещиксене тата капиталистсене хӳтĕлекенсем, вырăс тата ютçĕршыв çыннисем (чи малтан англичансемпе французсем) хăйсен пĕтĕм тĕнчери ӳкекен влаçне çирĕплетес тесе Российăри халăх ĕçне çаратакансен, помещиксен тата эксплуататорсен влаçне çирĕплетес тесе пĕтĕм вăйран тăрăшаççĕ. Англия тата Франция капиталисчĕсем хăйсен войскисемпе Украинăна вăрçса илес планĕсемпе путса ларчĕç; вĕсем Çĕпĕрте Колчака пулăшмалли хăйсен планĕсемпе путса ларчĕç; Хĕрлĕ çар, Уралта пĕр çын юлмиччен восстани тăвакан рабочисем пулăшнипе геройла тапăнса пырса, Çĕпĕр патне, ăна унти пуçлăхсен, капиталистсен тискер пусмăрĕнчен хăтармашкăн çывхарать. Англипе Франция империалисчĕсем, юлашкинчен, контрреволюциллĕ заговор урлă Петрограда çавăрса илес тĕлĕшпе хăйсем хатĕрленĕ планĕпе те путса ларчĕç, çав плана хатĕрлес ĕçе вы-

рӑс монархисчӗсем, кадетсем, меньшевиксем тата эсерсем, сулахай эсерсем те хутшӑннӑ.

Халӗ ӗнтӗ ютçӗршывсенчи капиталистсем капитал пусмӑрне Деникин тапӑнса килни урлӑ каялла тавӑрас тесе, питех те вайлӑ тӑрӑшаççӗ, вӗсем ӑна ӗлек Колчака офицерсем, япаласем, снарядсем, танксем т. ыт. парса та пулӑшнӑ пекех пулӑшнӑ.

Хӗрлӗ çар Уралпа Çӗпӗр çине çӗнтерўллӗн тапӑнса пынине чармасӑр Деникин тапӑнса килнине çӗмерсе тӑкас, ӑна çӗнтерес тесен рабочисемпе хресченсен пӗтӗм вӑйӗсене, Совет республикин пӗтӗм вӑйӗсене пухса пӗрлештермелле. Çакӑнта пулать

## САМАНТӐН ТӖП ЗАДАЧИ

Мӗнпур коммунистсем чи малтан тата пуринчен ытларах, мӗнпур сочувствующисем, мӗнпур тўрӗ кӑмӑллӑ рабочисемпе кресченсем, мӗнпур совет работникӗсем *хӑйсене çарти пек йӗркелемелле, хӑйсен ӗçӗн чи пысӑк пайне*, хӑйсен вӑйӗпе тимлӗхне *вӑрçӑн тўррӗмӗнех тӑракан задачисем çине*, Деникин тапӑнса килнине хӑвӑртрах сирсе пӑрахас задачӑсем çине куçармалла, хӑйсен ытти пӗтӗм ӗçӗсене çав задачӑна пӑхӑнтарса пӗчӗклетмелле тата урӑхла йӗркелемелле.

Совет республикине тӑшмансем хупӑрласа тӑраççӗ. Вӑл сӑмахпа мар, чӑн-чӑн ӗçре *пӗрпӗтӗм вӑрçӑлла лагерь* пулмалла.

Пӗтӗм учреждениесен ӗçӗсене пурне те вӑрçа пӑхӑнтармалла тата çарти пек урӑхлатса туса хумалла!

Коллегиальность рабочисемпе хресченсен государствин ӗçӗсене туса пыма кирлӗ. Анчах коллегиальноçе кирек мӗнле вӗрсе хӑпартни те, кирек мӗнле пӑсни те (вӑл волокита патне, ответсӑрлӑх патне илсе пырать) коллегиальнӑй учреждениесене кирек хӑшне те сӑмах çаптармалли вырӑн туса хуни питех те усал ӗç пулса тӑрать, çав усала кирек епле пулсан та, нимӗн умӗнче те чарӑнса тӑмасӑр, пур майсемпе те хӑвӑртрах пӗтерсе хумалла.

Коллегиальноçре кирлӗ абсолютнӑй минимумран коллеги членӗсем тӗлӗшӗнчен те, ӗçе пӗлсе туса пынинчен те, «сӑмахсем» калассине чарассинчен, пӗр-пӗрин шухӑшӗсене чи хӑвӑрт ытса пӗлессинчен, ӑна ӗçпе паллаштарса практически сӗнўсем парасси туса хурассинчен мала каймалла мар.

Кирек хӑçан та, çавна тума хӑть чи пӗчӗкçӗ май пулсан та, коллегиальноçе чи кирлӗ ытусене кӑна сахалтарах йышлӑ коллегире питех те кӗскен сўтсе-яваканни туса хумалла, учреждение, предприятине *практикӑллӑ тытса пыма*, ӗçе, задачӑна туса пыма, хайӗп çирӗплӗхпе, хастарлӑхӗпе, хӑюллӑхӗпе, практикӑллӑ ӗçе пӗлнипе паллӑ—чи шанчӑклӑ *пӗр юлташа* хушмалла. Кирек хӑш вӑхӑтра тата кирек мӗнле обстоятельствӑра та коллегиальность *кашни* çын *тӗплӗн* кӑтартса панӑ ӗçшӗн хӑй ответлӑ пулмаллине тӗплӗн палӑртса хунипе пӗрле пулса пымалла. Коллегиальноçпа витӗнсе тӑракан ответсӑрлӑх, чи хӑрушӑ усал ӗç, вӑл йӗркеллӗ, коллегиллӗ ӗçре питех те пысӑк опыт çук çынсене пурне те хӑратать тата вӑл вӑрçӑ ӗçӗнче

чылай чухне пурпĕрех катастрофа, йĕркесĕрлĕх, хăраса ӳкесси, нумай влаçлăх, поражени патне илсе пырать.

Организацири йĕркесĕрлĕх е организацири прожектерство сахалтарах мар усал ĕç пулса тăрать. Ĕçе вăрçă валли кирлĕ пек урăхлатса йĕркелени учрежденисене урăхлатасси, унтан та сахалтарахваскавлăн çĕнĕ учрежденисем тăвасси патне илсе пымалла мар. Çавна пачах та тума юрамасть, вăл йĕркесĕрлĕх патне çеç илсе пырать. Ĕçе урăхла йĕркелени питех кирлĕ мар учрежденисене вăхăтлăха чарнинче, е вĕсене пĕр-пĕр паллă виçе таран пĕчĕклетнинче пулса тăрать. Анчах вăрçа пулăшмалли мĕнпур ĕçе *пĕтĕмĕшпех тата йăлтах халĕ ĕçлекен çар учрежденийĕсем урлă,* вĕсене юсанипе,тĕреклетнипе, сарнипе, пулăшнипе туса пымалла. Уйрăм «оборона комитечĕсене» е «ревкомсене» (революциллĕ е —вăрçăллă-революциллĕ комитетсене) питех те кирлĕ чухне çеç тума юрать,—ку пĕрремĕшĕнчен; иккĕмĕшĕнчен, вĕсене тивĕçлĕ çар влаçĕ е Советсен асла влаçĕ çирĕплетмелле; виççĕмĕшĕнчен, кăтартса пана условисене обязательнă пурнăçа кĕртсе пымалла.

## ХАЛĂХА КОЛЧАКПА ДЕНИКИН ÇИНЧЕН ЧĂННИНЕ ĂНЛАНТАРСА ПАНИ

Колчакпа Деникин—Совет республикин тĕп тата пĕртен-пĕр пысăк тăшманĕсем. Вĕсене Антанта (Англия, Франция, Америка) енчен пулăшу пулман пулсан, вĕсем такçанах арканса саланнă пулĕччĕç. Антанта пулăшни çеç вĕсене вăй туса хурать. Анчах вĕсен çапах та ирĕксĕрех *халăха* улталама, вăхăтран-вăхăта «демократи», «Учредительнăй Собрани», «халăх влаçĕ», т. ыт. майлă пек пулма тӳрĕ килет. Меньшевиксемпе эсерсем хăйсене кăмăллăнах улталама параççĕ.

Халĕ ĕнтĕ Колчак çинчен (Деникин—ĕнтĕ унăн йĕкĕрешĕ) тĕрĕслĕхе туллинех кăтартса пана. *Вуншар пин* рабочисене персе вĕлерни. Меньшевиксемпе эсерсене те персе вĕлерни. Хресченсене пĕтĕм уезчĕпех хĕнени. Хĕрарăмсене халăх умĕнче хĕнени. Офицерсен влаçĕ, помещиксен ывăлĕсем питех те алхасни. Вĕçĕмсĕр çарату. Колчакпа Деникин çинчен чăнлăх çакăн пек. Рабочисене сутса, Колчакпа Деникин енче пулнă меньшевиксемпе эсерсем хушшинче те ĕнтĕ çав чăнлăха ирĕксĕрех йышăнмалла пулнă çынсем ытларах та ытларах тупăнаççĕ.

Çавăн çинчен халăха каласа пĕлтересси пĕтĕм агитаципе пропаганда ĕçĕнче тĕп вырăнга пулмалла. Çакна ăнлантарса памалла: е Колчакпа Деникин, е Совет влаçĕ, рабочисен влаçĕ (диктатури); варри çук; варри пулма пулгараймасть. Уйрăмăнах Колчак патĕнче е Деникин патĕнче *пулса курнă* большевиксен мар: меньшевиксен, эсерсен, беспартийнăйсен свидетĕлле кăтартса панисемпе усă курмалла. Кĕрешӳ мĕншĕн пынине, Колчакпа Деникин çĕнтерес пулсан ăна мĕн кĕтнине, кашни рабочипе хресчен пĕлсе тăтăр.

## МОБИЛИЗАЦИЛЕНИСЕМ ХУШШИНЧЕ ĔÇЛЕССИ

Питех те тăрăшса тумаллисенчен пĕри вăл халĕ мобилизациленисен хушшинче, мобилизацине пулăшас тĕлĕшпе, мобили-

заци йĕркипе илнисен хушшинче ĕçлесси пулса тăрать. Коммунистсене тата вĕсене кăмăллакансене пур çĕрте те, мобилизаци йĕркипе илнисем пухăнса тăнă, е гарнизонсем тата уйрăмăнах запасной батальонсем т. ыт. пур çĕрте пурне те ура çине тăратмалла. Весем пурте, пĕр çын юлмиччен пĕрлешмелле те ĕçлемелле, мобилизацине пулăшма тата мобилизаципе илнисен хушшинче, вырăнти гарнизон салтакĕсен хушшинче пĕрисем куллен, теприсем, калăпăр, эрнере 4 е 8 сехет ĕçлемелле, паллах, çирĕп организациленсе тивĕçлĕ ĕçе вĕсене кашнине партин вырăнти организацийĕ тата çар влаçĕ хушнипе ĕçлемелле.

Беспартийнăй халăх е коммунистла мар партире тăракан халăх, паллах, Деникина е Колчака хирĕç идейăллă ĕçлеме пултараймасть. Анчах çав сăлтавпа ăна кирек мĕнле ĕçрен те хăтарма юрамасть. Пĕтĕм халăх, пĕр çын юлмиччен (чи малтан хулари, çавăн пекех тата ялти *пурлăхлăрах çынсем*) мобилизаци ĕçне е мобилизаципе илнисене тĕрлĕ пулăшу парса хăйсен тивĕçлĕхне туччăр тесе пур майсем те шыраса тупмалла.

Пулăшу майĕсен уйрăм категорийĕ вăл—мобилизациленĕ çынсене хăвăртрах тата лайăхрах вĕрентес ĕçе пулăшасси пулать. Совет влаçĕ ĕлĕкхи офицерсене, унтер-офицерсене т. ыт. пурне те чĕнет. Коммунистсен партийĕ, ун хыççăн пур сочувствующисем тата мĕнпур рабочисем, рабочисемпе хресченсен государствине, пĕрремĕшĕнчен, мобилизацирен пăрăнакан ĕлĕкхи офицерсене, унтер-офицерсене т. ыт. тытас тĕлĕшпе пур майсемпе те пулăшса, иккĕмĕшĕнчен, парти организацин контролĕпе вăрçă ĕçне (сăмахран, империализмлă вăрçăра пулса) теориллĕ е практикăллă вĕреннĕ пирки пире усă кӳме пултаракан çынсен группине организацилесе пулăшмалла.

## ДЕЗЕРТИРСЕМ ХУШШИНЧЕ ĔÇЛЕССИ

Дезертирсемпе кĕрешес ĕçре юлашки вăхăтра уççăнах улшăну пулни курăнать. Чылай кĕпĕрнесенче дезертирсем масси-массипе çара каялла таврăнаççĕ, ытлашши ӳстермесĕрех, калама пулать, Хĕрлĕ çара ушкăнпа килеççĕ. Сăлтавĕ, пĕрремĕшĕнчен, партири юлташсем ытларах пĕлсе тата яланах ĕçлени; иккĕмĕшĕнчен, хресченсем Колчак тата Деникин патша йĕркисенчен те начартарах йĕрке илсе килнине ăнланни, вĕсем рабочисемпе хресченсен *чуралăхне* каялла тавăрни, хĕнени, çаратни, офицерсемпе дворянсен мăшкăлĕ.

Дезертирсем хушшинче ĕçлессине вăйлатмалла, çавăнпа та дезертирсене çара каялла тавăрас тесе *пĕтĕм вăя хурса* пур çĕрте те ĕçлемелле. Ку чи малтанхи тата чи кирлĕ ĕç.

Ахальрен каласан. Дезертирсене ӳкĕтлесе ăнлантармалли май тата çавăн пек ӳкĕтленин *ăнăçлăхĕ* рабочисен государстви енчен хресченсем çине пăхасси помещиксен тата капиталистсен государствинчен пĕтĕмĕшпех *уйрăм*, урăхла пулнине кăтартать. Патак пусмăрĕ е выçлăх пусмăрĕ—ака ĕнтĕ çав юлашки икĕ сăнарлă государствăри дисциплинăн пĕртен пĕр çăлкуçĕ. Рабочисен государствишĕн е пролетариат диктатуришĕн дисциплинăн *урăхла* çăлкуçĕ пулма пултарать: рабочисем хрес-

ченсене ăнлантарса пани, вĕсен хушшинчи юлташлă союз. Çав-çав кĕпĕрнере (сăмахран, Рязань кĕпĕрнинче) дезертирсем пи-нĕ-пинĕпе хăйсем ирĕккĕн çара тавранни çинчен, митингсенче «юлташсем-дезертирсем» тесе калани хăш чухне калама çук хаваслантарни çинчен хăйсен куçĕсемпе курнă çынсем каласа панине илтсен, ун чухне вара рабочисемпе хресченсен çав юлташла союзĕнче эпир усă курман *вăй* питех те нумай пулнине туйса илме тытăнатăн. Хресченĕн ăна капиталист хыççăн, эсер хыççăн, ирĕклĕ суту-илŭ хыççăн илсе каякан *тĕшмĕшлĕх* пур, анчах унăн, ăна ытларах та ытларах рабочисемпе союз тăвасси патне илсе пыракан *ăстăн* пур.

## ÇАРА ТŬРРĔМĔНЕХ ПУЛĂШАССИ

Пирĕн çара пуринчен ытла *снабжени*: тумтир, атă-пушмак, хĕçпăшал, снарядсем кирлĕ. Çара кирлĕ çав япаласене çителĕк-лĕ парса тăрас тĕлĕшпе юхăннă çĕршывра питех те нумай вăй-хал хурса ĕçлеме тŭрĕ килет. Англин, Францин, Америкăн вă-рă-хурах капиталисчĕсем Колчака тата Деникина ним хĕрхенме-сĕр паракан пулăшу, пĕр вăл çеç ĕнтĕ вĕсене снабжени çите-лĕксĕр пирки пурпĕрех пулмалли *крахран* хăтарма пултарать.

Росcия мĕнле юхăннă пулсан та, çапах унăн эпир усă кур-ман рессурсем питех те сахал мар пур, эпир вĕсемпе час-часах *усă курма пĕлмен*. Шыраса тупман е тĕрĕслесе пăхман склад-сем, çар пурлăхĕн склачĕсем нумай пур-ха, хăш чухне чинов-никсем ăнлансах саботаж тунă пирки, хаш чухне волокита, кан-целярщина, йĕркесĕрлĕх тата çывăхрине курман пирки асăрха-масăр юлакан производствăллă майсем нумай-ха, çакă вăл «иртнĕ вăхăт çылăхĕсем», вĕсем çĕнĕ обществăллă строй патне «сикĕм» тăвакан кирек хăш революцие те пурпĕрех питех те ха-яррăн йывăрлатса тăраççĕ.

Çав тĕлĕшпе çара тŭррĕмех пулăшни уйрăмăнах кирлĕ. Ăна тытса тăракан учрежденисене «çĕнетни», тулашĕнчен пулăшни, *вырăнсенче* рабочисемпе хресченсен ирĕклĕ, хастарлă, геройла *пуçарăвĕ* уйрăмăнах кирлĕ.

Çав пуçару ĕçне ăнлануллă рабочисемпе хресченсене пурне те, совет деятелĕсене пурне те анлăн хутшăнтармалла, çав тĕ-лĕшпе ĕçĕн тĕрлĕ облаçĕсенче, тĕрлĕ çĕрсенче тата çара пулăш-малли *тĕрлĕ* формăсемпе усă курмалла. «Революциллĕ ĕçлесси» кунта ытти облаçсенчен нумай сахалтарах пулса пырать, «ре-волюциллĕ ĕçлес» тĕлĕшпе вара кунта нуша *нумай вăйлăрах*.

Халăхран хĕçпăшала пухса илесси çав ĕçĕн уйрăлми пайĕ-сенчен пĕри пулса тăрать. 4 çул империализмлă вăрçа, унтан 2 халăх революцине пурăнса ирттернĕ çĕршывра, хресченсемпе буржуази питех те нумай хĕçпăшал пытарни, вăл çапла пулмал-ли япала, вăл хăйне-хăех пулса тăнă. Анчах çавна хирĕç халĕ, Деникин хăрушă тапăнса килнĕ вăхăтра, *пур вăйпа та* кĕреш-мелле. Кам хĕçпăшала пытарать е пытарма пулăшать, вăл ра-бочисемпе хресченсене хирĕç пыракан питех те пысăк прес-тупник, вăл персе пăрахма тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен вăл хăш

чухне фронтра хĕçпăшал çитмен пирки çеç вилсе пĕтекен пиншер те пиншер чи лайăх красноармеецсен вилĕмĕшĕн айăпллă.

Питĕрти юлташсем—çирĕп организациленсе—массăллă обыскисем туса ирттерсе, пиншер те пиншер винтовкăсем тупма пултарнă. Российăра ыттисем те Питĕртен юлмалла мар, кирек епле пулсан та ăна хăваласа çитсе, иртсе те каймалла.

Тепĕр енчен, иккĕленмелли те çук, винтовкăсене пуринчен ытла хресченсем тата час-часах нимĕнле усал шухăшсăрах, простă кирек мĕнле «государственность» та т. ыт. тĕлĕшпе ĕмĕртенпе пыракан шанманлăх пур пирки пытараççĕ. Дезертирсене Хĕрлĕ çара ирĕккĕнех каялла таврăс тĕлĕшпе эпир (чи лайăх кĕпĕрнесенче) ўкĕтлесе, пĕлсе агитациленипе, ĕç патне йĕркеллĕн пырса питех те питех нумай тума пултарнă пулсан, иккĕленмелли те çук ĕнтĕ, хĕçпăшала ирĕклĕнех каялла таврăс тĕлĕшпе çавăн пекех нумай, тата ытларах та пулмасан, тума пулать, тумалла та.

Рабочисемпе хресченсем! Пытарнă винтовкăсене шыраса тупса, вĕсене çара парăр! Çапла тунипе эсир хăвăра Колчакпа Деникин персе вĕлересрен, массăллăн хĕнесрен тата çаратасран хăтарăр!

## ÇАРТИ МАР ĔÇЕ ПĔЧĔКЛЕТЕССИ

Малтанлăха кĕскен палăртнă ĕçсен пĕр пайне пулсан та пурнăçа кĕртмешкĕн çĕнĕ те çĕнĕ работниксем кирлĕ, вĕсем чи шанчăклă, чĕререн парăннă, хастарлă коммунистсенчен пулмалла. Çавăн пек работниксем çитменни тата вĕсем ытлашши ывăнса çитнĕ пирки пурте ўпкелесе калаçнă чухне вĕсене ăçтан илмелле-ха?

Иккĕленмелли те çук, çапла ўпкелесе калаçнисем нумай енĕпе тĕрĕс. Рабочисемпе хресченсен массисем пулăшнипе тата кăмăлланнипе усă курса, юлашки 20 уйăх хушшинче Российăна малта пыракан рабочисен тата коммунистсен мĕнле сахал йышлă сийĕ тытса пынине кам та пулин тĕп-тĕрĕс шутласа кăларсан, вăл пулма пултарайман пек туйăнĕччĕ. Тытса пырасса эпир, социализм туса пырса, нихăçан илтмен йывăрлăхсене çĕнтерсе, буржуазипе тўррĕмех е тўррĕмех мар çыхăнса тăракан пур çĕртен те çĕкленекен тăшмансене çĕнтерсе тытса пытăмăр. Эпир ĕнтĕ пур тăшмансене те, пĕринсĕр пуçне: Антантăсăр пуçне, Англин, Францин, Америкăн пĕтĕм тĕнчипе хăватлă империализмлă буржуазисĕр пуçне, пурне те çĕнтертĕмĕр, çав хушăра эпир унăн пĕр аллине— Колчака çапса хуçрăмăр, пире унăн тепĕр алли—Деникин çеç юнаса тăрать.

Государствăна тытса пымашкăн, пролетариат диктатурин задачисене пурнăçа кĕртмешкĕн, рабочисен çĕнĕ вăйĕсем рабочисемпе хресченсен çамрăкĕсем хăвăрт ўсеççĕ, вĕсем пуринчен ытла, хĕрўллĕн, чĕререн парăнса вĕренеççĕ, çĕнĕ стройрăн пулнă çĕнĕ туйăмсене хăйĕн ăс-тăнĕнчен çĕнĕлле йĕркелеççĕ, хăй çинчен кивĕ, капитализмлă тата буржуалла-демократиллĕ тĕшмĕшлĕхсене ывăтса яраççĕ, хăйĕнчен тата çирĕпрех, вĕсен кивĕ

ăрăвĕнчен те çирĕпрех, коммунистсене туптаса хатĕрлеççĕ.
Анчах, çав çĕнĕ сий, граждан вăрçин вут-хĕмĕнче тата буржуази урнă пекех хирĕç тăнă вăхăтра мĕнле хăвăрт вĕренсе пиçсе çитсен те, çапах та вăл, çывăхри уйăхсенче, государствăна тытса пырас ĕç валли пире *хатĕр* работниксем пама пултараймасть. Ĕç шăпах ĕнтĕ çывăхри уйăхсем çинчен, 1919-мĕш çулхи çуллапа кĕркунне çинчен пырать, мĕншĕн тесен Деникина хирĕç кĕрешес ĕçе *халех* тата çывăх вăхăтрах *татса* памалла.
Çарти ĕçе вăйлатмашкăн хатĕр работниксене ытларах илес тесен, çар ĕçне мар е, тĕрĕсрех, тӳррĕмĕнех çар ĕçне мар, совет ĕçне туса пыракан учрежденисене нумайĕшне *пĕчĕклетмелле,* çав тĕлĕшпе (урăхла каласан пĕчĕклетес тĕлĕшпе) *питех кирлĕ мар* учрежденисемпе предприятисене пурне те *урăхлатса йĕркелемелле.*
Сăмахран, Халăх Хуçалăхĕн Аслă Совечĕн наукăпа техникăллă пайне илер. Вăл — социализм туса çитерсе, наукăпа техникăллă вăйсене пурне те вырнаçтарас ĕçре кирлĕ, чи усăллă учреждени. Анчах çавăн пек учреждени питех те кирлĕ-и? Паллах, çук. *Çарти* коммунистла ĕç валли тата *тӳррĕмĕнех* çар валли питех те кирлĕ тата халех ĕçлеме тивĕç çынсене ăна пани, хальхи самантра чи айăплă ĕç туни пулĕççĕ.
Çавнашкал учрежденисемпе учреждени отделĕсем пирĕн, центрта та, вырăнсенче те сахал мар. Социализма пĕтĕмĕшпех пурăнăça кĕртме тăрăшса, эпир çавăн пек учрежденисене хăвартрах урăхлатас ĕçе тума тытăнмасăр пултарайман. Анчах, Деникинăн хăрушă тапăнăвĕ умĕнче хамăрăн ретсене питех кирлех мар ĕçсене *пурне те чарма* тата *пĕчĕклетме* майлă йĕркелеме пултараймасан эпир ухмахсем е преступниксем пулăпăр.
Хăраса ӳкмесĕр тата организациллĕ йĕркесĕрлĕхе парăнмасăр, пирĕн нимĕнле учрежденисене те урăхлатмалла та пачах хупмалла та мар, тата—васкавлă ĕçленĕ чухне уйрăмăнах сиенлĕ япалана — çĕнĕ учрежденисем тумалла мар. Эпир кирлех мар учрежденисен тата учреждени отделĕсен ĕçĕсене центрта та, вырăнсенче те виçĕ, тăватă, пиллĕк уйăха *чарса лартмалла*, е вĕсене пĕтĕмĕшпех чарса лартма юрамасан, вĕсен çав вăхăта (яхăн) *пĕчĕклетмелле*, май пур таран пĕчĕклетмелле, урăхла каласан, питех те кирлĕ ĕçсене çеç хăвармалла.
Пирĕн тĕп тĕллев—çарти ĕç валли хатĕр, опытлă, чĕререн парăннă коммунистсене е социализм майлисене халех йышлăн илесси пулать пулсан, эпир çавăн пек теветкеллĕ ĕçе пит те пĕчĕкленекен учрежденисене (е учреждени пайĕсене) вăхăтлăха *пĕр коммунистсăр* хăварса, вĕсене пĕтĕмĕшпех буржуаллă работниксен аллине парас ĕçе тума пултаратпăр. Кунта хăрушлăх пысăк мар, мĕншĕн тесен сăмах пурпĕрех кирлĕ учрежденисем çинчен пымасть, вĕсен ĕçне вăйсăрлатнинчен (ĕçĕн çуррине чарнинчен) сиен пулĕ, анчах вăл пысăк пулмĕ, вăл пире нимĕнле майпа та пĕтерсе лартмĕ. Çарти ĕçе вăйлатмашкăн, часрах тата нумаях вăйлатмашкăн хастарлăх çитменни пире пĕтерсе лартма пултарать. Çавна уççăнах ăнланмалла тата унран пур выводсене те тумалла.

Кĕпĕрнере тата уездра т. ыт. ведомствăн е ведомство пайĕн кашни руководителĕ, коммунистсен кашни ячейки, пĕр минута та çухатмасăр, хăйĕн умне: çав учреждени, çав пай питех те кирлĕ-и? унăн ĕçне чарса лартсан е $^{9}/_{10}$ таран пĕчĕклетсен, ăна пĕр коммунистсăр хăварсан, эпир пĕтетпĕр-и текен ыйту лартсан,—çавăн пек ыйту лартнă хыççăн ĕçе хăварт та татăклăнах пĕчĕклетсен тата унтан коммунистсене (сочувствующисемпе беспартийнăйсем хушшинчи вĕсен питех те шанчăклă помощникĕсемпе пĕрле) илсен, ун чухне вара эпир çарти политотделсенче комиссарсем т. ыт. пулса ĕçлеме кĕске вăхăт хушшинчех çĕршер те çĕршер çын илĕпĕр. Ун чухне вара пирĕн, вăйлăрах Колчака çĕнтернĕ пекех, Деникина та çĕнтермешкĕн пысăк шанчăк пур.

## ФРОНТ ÇЫВĂХĔНЧИ ВЫРĂНСЕНЧЕ ĔÇЛЕССИ

Россия Социализмлă Федеративлă Советлă Республикăра фронт çывăхĕнчи вырăнсем юлашки эрнесем хушшинче питех те нумай ӳсрĕç тата питех те хăвăрт улшăнчĕç. Ку вăл—вăрçăн татăклă саманчĕ, вăл пĕтесси çывăхарнине пĕлтерсе тăраканни е унпа пĕрле пыраканни.

Пĕр енчен, Урал таврашĕнче тата Уралта фронт çывăхĕнчи питех те пысăк вырăнсем, Хĕрлĕ çарăн çĕнтерĕвĕсене тата Колчак арканса саланнине, Колчакире революци ӳснине пула пирĕн фронт çывăхĕнчи вырăнсем пулса тăчĕç. Тепĕр енчен, фронт çывăхĕнчи *тата та пысăкрах* вырăн Питĕрпе Кăнтăрта, пирĕн çухатусене, тăшман Питĕр патне питех те çывăхарнине тата Кăнтăртан Украинăпа Российăн центрĕ çине тапăнса килнине пула фронт çывăхĕнчи вырăн пулса тăчĕ.

Фронт çывăхĕнчи вырăнсенче ĕçлесси уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăра пуçлать.

Урал таврашĕнче, Хĕрлĕ çар малалла хăвăрт пынă çĕрте, çарта ĕçлекенсен, комиссарсен, политотдел членĕсен т. ыт., унтан вара вырăнти рабочисемпе хресченсен пултаруллă, советлă ĕç туса пымашкăн çĕнĕрен вăрçса илнĕ çĕрсенче юлас кăмăл пур, вăрçăпа ывăнни мĕн чухлĕ вăйлăрах, Колчак тунă аркану картинĕ мĕн чухлĕ йывăртарах, çав кăмăл çавăн чухлĕ тивĕçлĕрех пулса тăрать. Анчах çав кăмăла пурнăçа кĕртниичен хăрушăраххи нимĕн те çук. Вăл наступлени ĕçĕ вăйсăрланассипе, чăрманса чарăнассипе, Колчакăн татах вăй илме пултарас шанăç ӳсниппе хăратать. Ку вăл пирĕн енчен революци умĕнче тӳрех преступлени туни пулĕччĕ.

Хĕвелтухăçĕнчи фронтран вырăнти ĕç валли ытлашши пĕр работнике нимĕнле майпа та илмелле мар!* Наступлени тăвассине нимĕнле майпа та вăйсăрлатмалла мар. Пĕтĕмĕшпех çĕнтерессине ĕненмелли пĕр шанчăк—вăл Колчак «демократийĕн» тискерлĕхне тӳссе курнă Урал таврашĕнчи тата Уралти халăх

---

* Питех те кирлĕ пулмасан вĕсене пĕртте илмелле мар, центрти кĕпĕрнесенчен куçармалла! Ленин асăрхаттарни.

пĕр çын юлмиччен хутшăнни, Çĕпĕр çине, унта революци *пĕтĕмĕшпех çĕнтериччен*, наступлени туса пыни пулать. Антив ĕнтĕ, строительство Урал таврашĕнче тата Уралта вăраха юлтăр, антив, вăл пĕтĕмĕшпех вырăнти, çамрăк, опытсăр, имшер вăйсемпе начартарах пулса пытăр. Эпир унпа пĕтмĕпĕр. Урал тата Çĕпĕр çине наступлени тăвассине *вăйсăрлатсан эпир пĕтĕпĕр*, çав наступленине эпир хăйсен çурăмĕ çинче террор тӳссе курнă, меньшевик Майский тата эсер Чернов панă «учредителле» сăмахсем мĕн иккенне пĕлнĕ тата çав сăмахсен чăн-чăн содержанийĕ, *урăхла каласан Колчак* мĕн иккенне пĕлсе çитнĕ Уралти рабочисен тата Урал таврашĕнчи хресченсен вăйĕсемпе ӳстермелле.

Урал çине тата Çĕпĕр çине наступлени тăвассине вăйсăрлатни—вăл революцине сутни, рабочисемпе хресченсене Колчак пусмăрĕнчен хăтарас ĕçе сутни пулнă пулĕччĕ.

Фронт çывăхĕнчи, халĕ кăна ирĕке тухнă вырăнта ĕçленĕ чухне, унти тĕп задача вăл Совет влаçне рабочисем çеç мар, хресченсем те шанмалла тăвасси, рабочисемпе хресченсен влаçĕ пулса тăракан Совет влаçĕ мĕн иккенне чăннипех ăнлантарса парасси, çирĕм уйăх хушшинчи ĕçе шута илни тăрăх халех партие вĕренсе çитнĕ çул-йĕре тытасси пулнине астуса тăмалла. Эпир хăш чухне Великороссире тунă пек йăнăшсене Уралта тумалла мар, эпир çав йăнăшсене халĕ хăвăртрах пĕтерсе пыратпăр ĕнтĕ.

Питĕр патĕнчи фронт çывăхĕнчи вырăнта тата Украинăра, кăнтăр енче питех те хăвăрт тата хăрушшăн ӳссе кайнă фронт çывăхĕнчи вырăнта пурне те тата мĕн пурне вăрçă положенине куçармалла, пĕтĕм ĕçе, пĕтĕм вăйсене, пĕтĕм шухăшсене вăрçă ĕçне, вăрçă ĕçне çеç пăхăнтармалла. Унсăрăн Деникин тапăнса килнине отпор пама çук. Вăл уççăнах паллă. Çавна уççăнах ăнланмалла тата пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртмелле.

Сăмахран калас пулсан, Деникин çарĕнче офицерсемпе казаксем питех те нумай пулни унăн уйрăмлăхĕ пулса тăрать. Вĕсем çавăн пек элемент: хăйсен хыçĕнче массăллă вăй пулман пирки хăратса пăрахас, çĕмĕрсе аркатассишĕн çеç çĕмĕрсе аркатас тĕлĕшпе вăл хăвăрт тапăнусем, авантюрăсем, питех те пуçтах ĕçсем тума пултарать.

Çавăн пек тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре питех те çӳлĕ пусăма çитернĕ çар дисциплини тата çар сыхăлăхĕ кирлĕ. Сисмесĕр юлни е ним тума пĕлменни—вăл пурне те çухатни пулать. Парти е совет ĕçĕнчи кашни ответлă работник çавна шута илме тивĕçлĕ!

Вăрçă ĕçĕнче те, кирек хăш ĕçре те çар дисциплини кирлĕ. Çарти пек сыхлăх тата хаярлăх, сыхланмалли пур мерăсене те йышăнас ĕçри çирĕплĕх!

## ÇАР СПЕЦИАЛИСЧĔСЕМ („ВОЕНСПЕЦСЕМ“) ÇИНЕ МĔНЛЕ ПĂХМАЛЛА

Красная Горка[4] ятлă вырăнта сиксе тухнă тата хăйĕн умне Петрограда парас тĕллев лартнă питех те пысăк заговор çар специалисчĕсем çинчен тата тылра контрреволюципе кĕрешесси çинчен тăракан ыйтăва çĕнĕрен уйрăмăнах çирĕп лартрĕ. Иккĕ-

ленмелли те çук, апат-çимĕç тата вăрçă положенийĕ çивĕчленнине пула контрреволюционерсем пире хирĕç тăрасси пурпĕрех вăйланать тата çитес çывăх вăхăтра вăйланĕ (Питĕрти заговора «Союз возрождения», тата кадетсем те, меньшевиксем те, сылтăм эсерсем те хутшăннă; уйрăмăн хутшăннă пулсан та, çапах та, сулахай эсерсем те хутшăннă). Çитес çывăх вăхăтра çар специалисчĕсем хушшинче те, кулаксем, буржуаллă интеллигентсем, меньшевиксем, эсерсем евĕрлĕ изменниксем ытларах пуласси пирки те иккĕленмелли çук.

Анчах çавăн пирки пирĕн çар политикин никĕсне урăхлатмалла тесе ыйту хускатни нимпе те тўрлетейми йăнăш тата тўсме çук характерсăрлăх пулнă пулĕччĕ. Пире çĕршер те çĕршер çар специалисчĕсем измена тăваççĕ, тăвĕç те, эпир вĕсене тытса персе вĕлерĕпĕр, анчах пирĕн çар специалисчĕсем яланах тата нумай вăхăт хушши пиншер те вуншар пин çын ĕçлеççĕ, вĕсемсĕр пуçне Хĕрлĕ çар, партизанщинăн ылханлă ячĕнчен ўссе çитĕнсе, Хĕвелтухăçĕнче питех те чаплă çĕнтерўсем тума пултарнă Хĕрлĕ çар йĕркеленсе çитеймен пулĕччĕ. Пирĕн çар ведомствин пуçĕнче тăракан опытлă çынсем çакна тĕрĕс кăтартса параççĕ: çар специалисчĕсем тата партизанщинăна кăкласа пĕтерес тĕлĕшпе парти политикине çирĕппĕн пурнăçлавă çĕрте, дисциплина пуринчен ытла çирĕп пулнă çĕрте, войскăсенче политикăллă ĕçе тăрăшса туса пынă тата комиссарсем лайăх ĕçленĕ çĕрте,—унта, пĕтĕмĕшпе илсен, çар специалисчĕсем хушшинче измена тума кăмăллакансем пуринчен сахалтарах, унта çавăн пек кăмăллакансен хăйсен шухăшĕсене пурнăçа кĕртмешкĕн майсем пуринчен те сахалтарах, унта çарта йĕркесĕрлĕх çук, унта унăн стройĕпе шухăш-кăмăлĕ лайăхрах, унта çĕнтерў нумайтарах. Партизанщина, унăн паллисем, унăн юлашкийĕсем, унăн йăлисем пирĕн çара тата Украина çарне çар специалисчĕсен изменисенчен те нумай ытларах инкек, йĕркесĕрлĕх, пораженисем, арканусем кўчĕç, çынсене те, çар пурлăхне те нумай çухаттарчĕç.

Пирĕн партин программи буржуаллă специалистсем çинчен тăракан пĕтĕмĕшлĕ ыйту тăрăх та, çавăн пекех тата вĕсен пĕр пайĕ—çар специалисчĕсем çинчен тăракан уйрăм ыйту тăрăх та коммунистсен партин политикине питех те тĕрĕс палăртса хунă. Пирĕн парти «ĕççыннисем имĕш капитализма тата буржуаллă строя, буржуаллă специалистсенчен вĕренмесĕрех, вĕсемпе усă курмасăр, вĕсемпе юнашар ĕçлесе вăрах шкул вĕренсе тухмасăр çĕнтерме пултараççĕ, тесе калакан» суя радикаллă, анчах чăннипе илсен айванла вĕçкĕнчĕк шухăша хирĕç ним шеллемесĕр кĕрешнĕ, кĕрешет те.

Паллах, çавăнпа пĕрлех, парти «çав буржуаллă сие политика тĕлĕшĕнчен нимĕнле пĕчĕкçĕ уступка та» памасть, парти «унăн кирек мĕнле контрреволюциллĕ хăтланăвĕсене те ним хĕрхенмесĕр пусарĕ», пусарать те. Паллах, çавнашкал «хăтланасси» пулса тăрсан е пулма пултарасси ытларах е сахалтарах палăрсан, вара ăна «ним хĕрхенмесĕр пусарас» ĕçре урăхла «вăрах шкул» майпентерех, вĕренекенсен камăлĕ тĕлĕшĕнчен сыхланулăрах пулма хушнинчен тата çав шкул çынсене çавăн пек воспитани панин-

чен урăхларах майсем кирлĕ. Çар специалисчĕсемпе «юнашар ĕçлесе вăрах шкулта пулнă çынсен» шухăш-кăмăлĕпе çар специалисчĕсен «контрреволюциллĕ хăтланăвĕсене.. ним шеллемесĕр пусарас» тĕлĕшпе тӳррĕмĕнех тăракан задачăпа касса кайнă çынсен шухăш-кăмăлĕ хушшинчи хирĕçлĕх харкашусем тата конфликтсем патне çăмăллăнах илсе пыма пултарать тата илсе те пырать. Пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма кирли те, хăш чухне çар специалисчĕсене нумайĕшне мĕнле те пулин контрреволюциллĕ «хăтланусем», унтан та ытларах пысăк заговорсем пирки куçармалла пулни те çавăн пиркиех пулать.

Çав харкашусемпе конфликтсене эпир партиллĕ майсемпе татса паратпăр, татса парăпăр та, эпир партин пур организацийĕсене те çавăн пекех тума хушăпăр тата практикăллă ĕçе ним сиен те, кирлĕ мерăсем йышăнмашкăн пĕр чăрмав та, пирĕн çар политики тĕлĕшпе çирĕплетнĕ никĕссене пурнăça кĕртес ĕçре ним иккĕленни те пулмалла мар, тесе çине тăрăпăр.

Партин хăшпĕр органĕсем çар специалисчĕсем тĕлĕшĕнчен тĕрĕс мар çул тытаççĕ пулсан (нумай пулмасть-ха Петроградра пулнă пек) е хăшпĕр чухне çар специалисчĕсене „критиклени" вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе йĕркеллĕн тата тăрăшса ĕçленине тӳррĕмех чăрмав пулса тăрать пулсан, парти çав йăнăшсене хăвăрт тӳрлетет, тӳрлетсе пырĕ те.

Вĕсене тӳрлетмелли чи кирлĕ те тĕп май—вăл çарта тата мобилизациленисен хушшинче политикăллă ĕçе вăйлатасси, çарти комиссарсен ĕçне лайăхлатасси, комиссарсен составне лайăхлатасси, вĕсен пĕлӳне ӳстересси, парти программи хушнине тата шăпах ĕнтĕ: «командный составăн ĕçне (çарта) *пур енчен* те контроль туса пырас ĕçе рабочи класс аллинче пĕтĕçтерессине»,—ăна час-часах çителĕксĕр туса пыраççĕ,—çавсене *ĕçре* пурнăça кĕртесси. Çар специалисчĕсене аякран критиклени, ĕçе «тапăнса килнипе» тӳрлетме хăтланни—питех те çăмăл, çавăнпа шанчăксăр тата сиенлĕ япала. Кам хăйĕн политикăллă ответлăхне ăнланать, пирĕн çарăн çитменлĕхĕсем пирки камăн чĕри ыратать, вĕсем пурте красноармеецсем е командирсем, политработниксем е комиссарсем пулса ретсемпе шеренгăсене тăччăр, кашни ĕçлетĕр—партин кирек хăш членĕ те хăйĕн пултаруллăхне кура, çар организацинче, ăна лайăхлатас тĕлĕшпе хăйне валли вырăн тупĕ.

Рабочисем, унтан вара хресченсем, уйрăмăннах коммунистсем, çар ĕçне серьезно вĕренме пултарччăр тесе Совет влаçĕ такçанах ĕнтĕ питех те тимлĕн çаврăнса пăхрĕ. Çавна чылай заведенисенче, учрежденисенче, курссенче туса ирттереççĕ, анчах питех те питех çителĕксĕр тăваççĕ-ха. Харпăр-хăйĕн пуçаруллăхĕ, харпăр-хăйĕн хастарлăхĕ ку тĕлĕшпе нумай тумаллаха. Пуринчен ытла коммунистсен пулемет, артиллери ĕçне, броневой ĕçе т. ыт. тăрăшса вĕренмелле, мĕншĕн тесен кунта пирĕн кая юлнăлăх пуринчен ытла туйăнать, кунта тăшман хăйĕн нумай йышлă офицерĕсемпе пиртен нумай вăйлăрах, кунта çарта ĕçлекен шанчăклă мар специалист пысăк сиен тума пултарать, кунта коммунистăн ролĕ питех те пысăк.

## ТЫЛРА КОНТРРЕВОЛЮЦИНЕ ХИРЁÇ КЁРЕШЕССИ

Иртнĕ çулхи июльри пекех, контрреволюци пирĕн тылра, пирĕн хушăра пуçне çĕклет.

Контрреволюцине çĕнтернĕ, анчах пĕтĕмĕшпех пĕтереймен. вара, паллах ĕнтĕ, вăл Деникин çĕнтерĕвĕсемпе тата пирĕн апат-çимĕç нуши çивĕчленнипе усă курать. Тўррĕмĕнех тата уççăнах контрреволюци хыççăн, хăйсен капиталĕсемпе, хăйсем Антанта империализмĕпе тўррĕмех çыхăнса тăнипе, диктатура пурпĕрех пулмаллине ăнланнипе тата ăна (колчакла) пурнаçа кĕртсе пыма пултарнипе вăйлă хура сотнясемпе кадетсем хыççăн,—вĕсем хыççăн, яланхи пекех, иккĕленекен, çирĕп мар, хăйсен ĕçĕсене сăмахпа витсе тăракан меньшевиксем, сылтăм эсерсем тата сулахай эсерсем сĕтĕрĕнсе пыраççĕ.

Вăл тĕлĕшпе нимĕнле иллюзи те! Контрреволюциллĕ ĕçсене, хусканусене, заговорсене тата ыттисене те çуратса «пăхса ўстерекен тавралăха» эпир пĕлетпĕр, питех те лайăх пĕлетпĕр. Çав тавралăх вăл—буржуази, буржуаллă интеллигенци, ялта кулаксен, пур çĕрте те «партире тăман» публикăн, унтан эсерсемпе меньшевиксен тавралăхĕ. Çав этемсене сăнаса тăрас ĕçе виçĕ хут та вунă хут ўстермелле, сыхăлăха вунă хут ўстермелле, мĕншĕн тесен çав енчен контрреволюциллĕ хăтланассисем шăпах ĕнтĕ хальхи самантра тата çитес çывăх вăхăтра пурпĕрех пулмалла. Çавна пула каллех кĕперсене сирпĕтсе çĕмĕресси, стачкăсем тăвасси, тĕрлĕрен шпионла ĕçсем т. ыт. тăвасси пулма пултарать. Пур центрсенче те, контрреволюционерсене «пăхса ўстерекен» тавралăха «хĕсĕнсе пурăнмашкăн» мĕнле те пулин майсем пур çĕрсенче пуринче те сыхланас тĕлĕшпе чи вăйлă, яланах, çĕнĕрен, массăллă тата сасартăках туса ирттерекен мерăсем йышăнмалла.

Меньшевиксем, сылтăм тата сулахай эсерсем тĕлĕшпе юлашки опыта шута илмелле. Вĕсен «вырăнта» пурăнаканнисем хушшинче, вĕсем патне туртăнакан публика хушшинче, паллах, Колчакпа Деникинран пăрăнса Совет влаçĕпе çывхарасси енне туртăнни пур. Çапла туртăннине эпир шута илтĕмĕр, вара кашнинчех, вăл мĕнре те пулса чăн-чăнах палăрсан, çавна хапăл туса хамăр енчен паллă утăмсем турăмăр. Хамăрăн çав политикăна эпир нимĕнле майпа та улăштармăпăр, вара Колчакпа Деникин патне туртакан меньшевизмпа эсеровщинăран, Совет влаçĕ патне туртакан меньшевизмпа эсеровщина енне «сиксе куçассисен» шучĕ, пĕтĕмĕшпе илсе каласан, паллах, ўссе пырĕ.

Анчах хальхи вăхăтра вакбуржуаллă демократи, тĕрексĕр тата иккĕленекенскер, эсерсем тата меньшевиксем ертсе пынипе сăмсине яланхи пекех çиле май тытса çĕнтерў тăвакан Деникин енне сулăнать. Уйрăмăнах вăл сулахай эсерсен, меньшевиксен (Мартовпа К° пек), сылтăм эсерсен (Черновпа К° пек) «политикăллă çулпуçĕсем» тата пĕтĕмĕшпе илсен, вĕсен «литература групписем» тĕлĕшĕнчен тĕрĕс, çав группăсен членĕсем, ыттисенчен пуçне, хăйсем политика тĕлĕшĕнчен пĕ-

тĕмĕшпех крах тӳснипе питех те кăмăлсăр пулса тăнă, çавăнпа та вĕсен Совет влаçне *хирĕç* авантюрăсем тума нимпе те кăкласа пĕтерме çук «туртăм» пур.

Хамăра вĕсен пуçлăхĕсен сăмахĕсемпе тата идеологийĕпе, вĕсен хăйсен тӳрĕлĕхĕпе е икĕпитлĕхĕпе улталама памалла мар. Вăл вĕсен кашнин биографийĕ валли кирлĕ. Политика тĕлĕшĕнчен. урăхла каласан, классем хушшинчи отношенисем, миллионшар çынсем хушшинчи отношенисем енчен илсен вăл кирлех мар. Мартовпа К° «ЦК ячĕпе» хăйсен «активисчĕсене» чаплăн ятлаççĕ тата партирен кăларассипе юнаççĕ (ĕмĕрех юнаççĕ!). Çакăнтан ĕнтĕ «активистсем» пуринчен ытла меньшевиксем хушшинче нумай пулнă факт пĕртте пĕтмест, вĕсем меньшевиксем хыçне пытанаççĕ тата хăйсен колчакла-деникинла ĕçĕсене туса пыраççĕ. Вольскийпе К° Авксентьева, Чернова тата К° ятлаççĕ, анчах ку вăл çав кайранхисене Вольскинчен вăйлăрах пулма ним чухлĕ те кансĕрлемест, Чернова çапла калама: «эпир пулмасан тата халĕ пулмасан большевиксене кам тата хăçан сирсе пăрахмалла», теме кансĕрлемест. Сулахай эсерсем «хăйсем тĕллĕн», реакципе, Черновпа сăмах татмасăр «ĕçлеме» пултараççĕ, анчах та чăннипе илсен вĕсем халĕ покойник пулнă ĕлĕкхи главнокомандующий, «идейнăй» сăлтавсем пирки чехословаксене тата Колчака фронт уçнă сулахай эсер Муравьев пекех, Деникинăн союзникĕсем тата унăн вăййинчи пешкăсем[5].

Мартов, Вольский тата К° хăйсене кĕрешекен икĕ енчен те «çӳлерех» тăратпăр тесе шутлаççĕ, хăйсене «виççĕмĕш ен» тума пултаратпăр тесе шутлаççĕ.

Çав кăмăл, вăл чунран-вартан пулсан та, вакбуржуаллă демократăн иллюзийĕ пулса юлать, вăл халĕ те, 1848-мĕш çул хыççăн 70 çул иртсен, азбукăна, шăпах ĕнтĕ: капитализмлă таврара е буржуази диктатури, е пролетариат диктатури пулма пултарнине, виççĕмĕшĕ нимĕн те пулма пултарайманнине вĕренсе çитмен. Мартовпа К° çав иллюзипех вилĕç, курăнать. Вăл вĕсен ĕçĕ. Пирĕн ĕç вара çавнашкал публикăн практикăри иккĕленӳсем пулассине, паян Деникин патне, ыран большевиксем патне каяссине астăвасси пулмалла. Паян ĕнтĕ *паянхи* ĕçе тумалла.

Пирĕн ĕç—ыйтăва тӳрех лартасси. Мĕн лайăхрах? Совет влаçне *хирĕç, урăхла каласан Деникин майлă* (кам хĕçпăшалпа, кам заговорпа, кам меньшевик печатниксем е чугун çул çинче ĕçлекенсем пек мобилизацине хирĕç агитаци туса т. ыт.) «тухакан» кадетсем, беспартийнăйсем, меньшевиксем, эсерсем хушшинчи измена тăвакансене тытса тĕрмене лартмалла-и е хăш чухне персе те вĕлермелле-и? Е ĕçе Колчакпа Деникина пиншер рабочисемпе хресченсене виличчен хĕнесе, персе, çаптарса пĕтересси таранах ирĕк памалла-и? Суйласа илесси йывăр мар.

Ыйту çапла, çапла кăна тăрать.

Кам халиччен çавна ăнланман, çавăн пек решени „тĕрĕс мар" пирки кам нăйкăшма пултарать, ун çине алă сулмалла, ăна пурин умĕнче те кулса намăслантармалла.

## ХАЛĂХА ПĔТĔМĔШПЕХ ВĂРÇĂ ВАЛЛИ МОБИЛИЗАЦИЛЕССИ

Совет республики — вăл пĕтĕм тĕнчери капитал хупăрласа илнĕ крепость пулса тăрать. Çав крепоçпе Колчакран тарса хăтăлас вырăн пек усă курма, тата пĕтĕмĕшпе илсен, унта пурăнма эпир вăрçă ĕçне активлăн хутшăнакансен тата ăна пур майсемпе те пулăшакансен кăна право пур тесе йышăнма пултаратпăр. Çакăнтан пирĕн çакăн пек право тата пирĕн тивĕçлĕх тухса тăрать: вăрçă валли халăха пĕр çын хăвармасăр, хăшне тӳрех вăрçă ĕçне, хăшне вăрçа пулăшмалли тĕрлĕ ĕçсене мобилизацилесси.

Çакна пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртес тесен питех те лайăх организаци кирлĕ. Пирĕн государство организацийĕ пур енчен те йĕркеленсе çитейменнине шута илсен (вăл çамрăк, çĕнĕ тата унăн аталанăвĕн питех те пысăк йывăрлăхĕсене шутласан çавăнтан ним тĕлĕнмелли те çук), вара çав облаçра мĕн те пулин туллирех е мĕн те пулин анлăрах ĕçе те хăвăртрах пурнăçа кĕртме сарлакарах тытăнни организаци тĕлĕшĕнчен чи сиенлĕ прожектерство пулнă пулĕччĕ.

Анчах çав тĕлĕшпе чи лайăх шухăшласа хуни патне кăшт пулин те çывхартмашкăн нумайăшне тума пулать, вара çав тĕлĕшпе пирĕн парти деятелĕсен, пирĕн совет работникĕсен «пуçарăвĕ» питех те питех çителĕксĕр.

Кунта çав ыйтăва лартни те тата çавăн çине юлташсене тимлĕн çаврăнса пăхтарни те çителĕклĕ. Мĕнле те пулин конкретлă кăтартусем е мĕн пулассине каласа пама кунта кирлĕ те мар.

Çакна кăна палăртатпăр: Совет влаçĕ патне çывăх тăракан вакбуржуаллă демократсем, йăла тăрăх хăйсене социалистсем текенскерсем, сăмахран, «сулахай» меньшевиксенчен хăшĕ-пĕрисем т. ыт. уйрăмăнах, вĕсен шухăшĕ тăрăх, заложниксем илес тĕлĕшпе «варварла» майсем пирки тарăхса калаçма юратаççĕ.

Антив, тарăхчăрах, анчах унсăрăн вăрçă тума çук, хăрушлăх пысăклансан вара, çав средствăна, пур енчен те сармалла, ăна час-часах туса пымалла. Сайра хутра мар, сăмахран, меньшевикла е сарă печатниксем, чугун çул çинче ĕçлекенсем — «управленецсемпе» тата вăрттăн спекулянтсен хушшинчисем, кулаксем хулари (тата ялти) халăхăн пурлăхлă пайĕ тата ытти çавнашкал элементсем Колчакран тата Деникинран хӳтĕленес ĕç çине саботажа куçас таранах вĕçĕмсĕр айăпа тивĕç те киревсĕр лăпкăн пăхаççĕ. Çавнашкал группăсен списокĕсене тумалла (е вĕсене хăйсене çавăн пек, пĕр-пĕриншĕн ответ тытмалли группа тума хушас пулать) вара вĕсене, хăш чухне тунă пек, окопсем алтас ĕçе ямалла кăна мар, вĕсене тата Хĕрлĕ çара пур енчен те материальнăй пулăшу парас тĕлĕшпе тĕрлĕрен ĕç тума хушмалла.

Çав меслетпе эпир анлăрах, пур енлĕрех тата пĕлерех усă курсан, красноармеецсен уй-хирĕсене лайăхрах ĕçлĕç, красноармеецсене апат-çимĕç, махорка тата ытти кирлĕ япаласем пар-

са тăрасси аванланĕ, уйрăм заговортан т. ыт. пиншер те пиншер рабочисемпе хресченсем вилсе пĕтес хăрушлăх нумай пĕчĕкленĕ.

## «РЕВОЛЮЦИЛЛЕ ĔÇЛЕССИ»

Çÿлерех каланисене пурне те пĕрле пухсан пирĕн простой итог пулса тăрать: мĕнпур коммунистсем, мĕнпур ăнланулла рабочисемпе хресченсем, Колчакпа Деникина çĕнтерме ирĕк парас мар текен кашни çын халех тата çывăх уйăхсенче хăйсен хастарлăхне питех те çĕклемелле, «революцилле ĕçлемелле».

Выçă, асапланса тата ывăнса çитнĕ рабочисем, специалист рабочисем те, çавăн пекех чернорабочисем те, Колчака çĕнтерес ятпа тата ăна пĕтĕмĕшпех çĕнтериччен «коммунистла субботниксем»[6] тума, эрнере темиçешер сехет укçасăрах ĕçлеме тата çав вăхăтрах халиччен курман, яланхинчен темиçе хут пысăкрах ĕçтухăçлăхĕ пама пултарнă пулсан, ку ĕнтĕ тата нумай та нумай тума май пуррине кăтартса парать.

Çав нумаййине эпир тума тивĕç.

Ун чухне эпир çĕнтерĕпĕр.

*Р. К. (большевиксен) П. Ц. К.*

---

## КОЛЧАКА ÇĔНТЕРНĔ ТĔЛĔШПЕ РАБОЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕМ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

Юлташсем! Хĕрлĕ войскăсем Колчакран пĕтĕм Урала хăтарса Çĕпĕре ирĕке кăларма тытăнчĕç. Уралти тата Çĕпĕрти рабочисемпе хресченсем Совет влаçне пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ, мĕншĕн тесен халăха тÿлевсемпе мăшкăласа, хĕнесе, патша пусмăрлăхне каялла тавăрнипе асаплантарса çитернĕ пĕтĕм помещикле тата капиталистла ирсĕрсене вăл тимĕр шăпăрпа шăлса кăларать.

Пирĕн пĕтĕм хаваслăх, Урала ирĕке кăлараssипе тата хĕрлĕ войскăсем Çĕпĕре кĕнипе пулнă пирĕн савăнăç пире лăплантармалла мар. Тăшмана пĕтересси инçе-ха. Ăна пĕтĕмĕшпех амантайман та.

Колчака тата японецсене ютçĕршыв вăрă-хурахĕсемпе пĕрле Çĕпĕртен хăваласа ямашкăн пĕтĕм вăйсене пухмалла, тăшмана пĕтерес, ăна хăйĕн вăрă-хурахла ĕçне çĕнĕрен те çĕнĕрен тума май парас мар тесен вăйсене тата та ытларах пухни кирлĕ.

Çавна мĕнле тумалла?

Уралпа Çĕпĕр тÿссе ирттернĕ йывăр опыт, тăватă çул хушши пынă империализмлă вăрçăпа асапланса пĕтнĕ ытти мĕнпур çĕршывсен опычĕ пекех, пирĕншĕн ахалех иртмелле мар.

Колчаковщина инкекĕсем çĕнĕрен пулассинчен хăйсене хăрушăсăрлатас тесен пĕтĕм рабочисемпе хресченсем, пĕтĕм ĕççыннисем çав опытран тумалли пиллĕк тĕп уроксем ак çаксем пулаççĕ.

*Пĕрремĕш урок.* Рабочисемпе хресченсен влаçне вăрă-хурахсенчен, урăхла каласан, помещиксемпе капиталистсенчен хÿтĕ-

лес тесен, пире хăватлă Хĕрлĕ çар кирлĕ. Эпир ăна тума пултарнине, эпир ăна тытса пыма вĕренсе çитнине тата капиталистсем тĕнчери чи пуян çĕршывсенчен хĕçпăшалпа тата вăрçă хатĕрĕсемпе пысăк пулăшу илеççĕ пулин те, вĕсене çĕнтерме вĕренсе çитнине эпир сăмахпа мар, ĕçпе кăтартрăмăр. Большевиксем çавна ĕçпе кăтартса пачĕç. Пĕтĕм рабочисемпе хресченсем, — вĕсем ăнланулла пулсан, — вĕсене сăмах тăрăх мар шанмалла (сăмаха шанни айванла), вĕсем миллионшар та миллионшар çынсен Уралти тата Çĕперти опычĕ тăрăх шанмалла. Рабочисемпе хресченсене хĕçпăшаллатассине ĕлĕкхи офицерсен, пуринчен ытларах помещиксемпе капиталистсене кăмăллаканскерсен командованийĕпе çыхăнтарасси питех те йывăр задача. Ăна питех те лайăх организацилеме пĕлсен, çирĕп те ăнланулла дисциплина пулсан, йышлă массăсем рабочи комиссарсен ертсе пыракан сийне шанса тăрсан çеç татса пама пулать. Çав чи йывăр задачăна большевиксем татса пачĕç: ĕлĕкхи офицерсем пирĕн питех те нумай измена тăваççĕ, анчах çапах та Хĕрлĕ çар пирĕн алăра çеç мар, вăл патша генералĕсене тата Англия, Франция, Америка генералĕсене те çĕнтерме вĕренсе çитрĕ.

Çавăнпа та кашни, кам колчаковщинăран чăн-чăнах хăтăлма тăрăшать, пĕтĕм вăйсене, пĕтĕм средствăсене, пĕтĕм пĕлӳсене Хĕрлĕ çара тăвас тата ăна çирĕплетес ĕçе пĕтĕмĕшпех памалла. Хĕрлĕ çар çинчен кăларнă пур законсене те, пур приказсене те хăранипе мар, совеçшĕн чунтан-чĕререн пурнăçласа пымалла, унти дисциплинăна пур майсемпе те тытса пымалла, Хĕрлĕ çара кашни мĕнпе пулăшма пултарать, çавăнпа пулăшмалла, — çавăн пек ĕнтĕ колчаковщинăран хăтăлас текен кашни ăнланулла рабочипе хресченĕн пирвайхи, тĕп тата пысăк тивĕçĕ.

Партизанщинăран, уйрăм отрядсем никама пăхăнманнинчен, центрти влаçа итлеменнинчен вутран хăранă пек хăрамалла, мĕншĕн тесен вăл пĕтесси патне илсе пырать: Урал та, Çĕпĕр те, Украина та çавна кăтартса пачĕç.

Кам Хĕрлĕ çара пĕтĕмĕшпех тата чĕререн пулăшмасть, унти йĕркесене тата дисциплинăна пĕтĕм вăйпа тытса пымасть, вăл предатель тата изменник, вăл колчаковщина майлă çын, ăна ним хĕрхенмесĕр пĕтермелле.

Çирĕп Хĕрлĕ çарпа эпир никам çĕнтерейми вăй. Çирĕп çарсăр эпир — Колчакăн, Деникинăн, Юденичăн пур-пĕрех пулмалли жертви.

*Иккĕмĕш урок.* Государствăн пысăк тырă запасĕсем пулмасан Хĕрлĕ çар çирĕп пулма пултараймасть, мĕншĕн тесен унсăрăн çара ирĕккĕн малалла куçарса пыма та, ăна тивĕçлипе хатĕрлеме те май çук. Унсăрăн çар валли ĕçлекен рабочисене те тăрантарса тăма май çук.

Кашни ăнланулла рабочипе хресчен çакна лайăх пĕлсе тата астуса тăмалла: пирĕн Хĕрлĕ çарăн ăнăçăвĕсем çителĕклĕ хăвăрт тата çирĕп мар пулнин тĕп сăлтавĕ халĕ шăпах ĕнтĕ государствăн тырă запасĕсем çителĕклĕ пулманнинчен килет. Кам ытлашши тырра государствăна памасть, вăл Колчака пулăшать, вăл

рабочисемпе хресченсене сутакан изменник тата предатель, вăл Хĕрлĕ çарти ытларах вуншар пин рабочисемпе хресченсен вилĕмĕпе асапĕсемшĕн айăплă.

Мошенниксем, спекулянтсем тата пачах тĕттĕм хресченсем çапла калаççĕ: тырра ирĕклĕ хакпа сутсан лайăхрах пулĕ, эпĕ государство паракан çирĕп хакпа сутнинчен нумай ытларах илĕп, теççĕ.

Анчах ĕç çакăнта пулать те ĕнтĕ: ирĕккĕн сутнинчен спекуляци ÿсет, сахалăшĕ пуяççĕ, пуянсем çеç тăранаççĕ, рабочи масса выçă юлать. Çавна эпир ĕçре, Çĕпĕрти тата Украинăри тырă тĕлĕшĕнчен чи пуян вырăнсенче, куртăмăр.

Тырра ирĕккĕн сутнă чухне капитал пуç-пулса тăрать, ĕçлев выçă пурăнать тата инкек курать.

Тырра ирĕккĕн сутнă чухне пĕр пăт тырă хакĕ пин тенке çитет, укçа йÿнелет, спекулянтсен пĕчĕк ушкăнĕ усă илет, халăх чухăнланать.

Тырра ирĕккĕн сутнă чухне государство запасĕсем çук, çар вăйсăр, промышленность вилет, Колчак е Деникин пурпĕрех çĕнтерет.

Тырра ирĕккĕн сутассишĕн пуянсем кăна, рабочисемпе хресченсен влаçĕн чи хаяр тăшманĕсем кăна ăнланусăр тăраççĕ. Кам хăйĕн тĕттĕмлĕхне пула тырра ирĕккĕн сутассишĕн тăрать, вăл ĕнтĕ тырра ирĕккĕн сутни мĕншĕн Колчакпа Деникин çĕнтерессине пĕлтернине Çĕпĕрпе Украина примерĕ çинче вĕренсе ăнланса илмелле.

Тĕттĕм хресченсем те пур-ха, вĕсем çапла калаççĕ: государство пире малтан тырăпа улăштарса вăрçăчченхи хакпа лайăх таварсем патăр, ун чухне вара эпĕ ытлашши тырра парăп, унсăр памастăп, теççĕ. Вара çавăн пек калаçни çинче мошенниксемпе помещиксен майлă тăракансем тĕттĕм хресченсене часчасах вăлтапа çаклатса «тытаççĕ».

Ăнланса илме йывăр мар ĕнтĕ: рабочисен государстви, Константинопольшĕн тăватă çул хушши пынă вăрă-хурахла вăрçăра, унтан вара тата курайман пирки Колчаксем, Деникинсем, пĕтĕм тĕнчери капиталистсем пулăшса пынипе тĕппипех юхăнтарнă государство, — халĕ рабочисен государстви хресченсене таварсем пама пултарайманнине ăнланса илме йывăр мар, мĕншĕн тесен промышленность ĕçлемесĕр тăрать. Тырă çук, топливо çук, промышленность çук.

Промышленность продуктисене илес условипе ытлашши тырра ссуда йĕркипе выçă рабочине пама кирлипе ăстăнлă хресчен кашниех килĕшĕ.

Акă халĕ те çавăн пек. Ăстăнлă, ăнланулла хресченсем пурте, мошенниксемпе спекулянтсемсĕр пуçне пурте, *ытлашши тырра пĕтĕмĕшпех* рабочи государствăна ссуда йĕркипе пама килĕшĕç, мĕншĕн тесен ун чухне вара государство промышленноçа ура çине тăратĕ тата промышленность продуктисене хресченсене парĕ.

Хресченсем рабочисен государствине хăйсен ытлашши тыррине шанса парĕç-и? — тесе ыйтма пултараççĕ пиртен.

Эпир çапла калăпăр: Пĕрремĕшĕнчен, государство ссуда илнине шантарса удостоверени, хут укçа парать. Иккĕмĕшĕнчен, рабочисен государстви, урăхла каласан, Совет влаçĕ ĕççыннисене пулăшнине, помещиксемпе капиталистсене хирĕç кĕрешнине хресченсем пурте опыт тăрăх пĕлеççĕ. Çавăнпа Совет влаçне рабочисемпе хресченсен влаçĕ теççĕ те. Виççĕмĕшĕнчен, хресченсен суйласа илмелли урăх çук: е рабочине, е капиталиста ĕненмелле; е рабочисен государствине шанмалла, ссуда памалла, е капиталистсен государствине. Ни Российăра, ни тĕнчери пĕр çĕршывра та суйласа илмелли урăх çук. Хресченсем мĕн чухлĕ ăнланулларах пулса пыраççĕ, вĕсем рабочисемшĕн мĕн чухлĕ çирĕп тăраççĕ, помещиксемпе капиталистсен влаçне каялла тавăрмалла мар тăвас тĕлĕшпе рабочисен гоударствине пулăшас кăмăл вĕсен çавăн чухлĕ çирĕпрех.

*Виççĕмĕш урок.* Колчакпа Деникина вĕçне çитичченех пĕтерес тесен, пигех те çирĕп революциллĕ йĕркене тытса пымалла. Совет влаçĕн законĕсемпе вăл хушнисене ним пăсмасăр тытса тата вĕсене пурте пурнăçа кĕртнине сăнаса пымалла.

Колчакăн Çĕпĕрти тата Уралти çĕнтерĕвĕсен примерĕ çинче эпир çакна уççăнах курăтмăр: чи пĕчĕкçĕ йĕркесĕрлĕх, Совет законĕсене кăшт пулин те пăсни, кăшт çеç тимсĕр пулни е тăрăшса ĕçлеменни помещиксемпе капиталистсене хăвăрт вăйланма тата вĕсене çĕнтерӳ тума пулăшать. Мĕншĕн тесен помещиксемпе капиталистсене пĕтермен, вĕсем хăйсене çĕнтернĕ тесĕ те шутламаççĕ: вĕсене çĕмĕрсе кăна тăкнă иккенне тата вĕсем пытанса, урăх тумтир, час-часах «советла» «защитнăй» тĕслĕ тумтир тăхăннине кашни ăнланулла рабочипе хресчен курса тăрать, пĕлет тата ăнланать. Помещиксем нумайашĕ совет хуçалăхĕсене, капиталистсем — тĕрлĕ «главксене» тата «центрсене» хĕсĕнсе кĕнĕ, совет служащийĕсем пулса тăнă; паян чехо-словаксене, ыран Деникина пулăшас тесе вĕсем Совет влаçĕн йăнăшĕсене тата унăн вăйсăрлăхĕсене кашни утăмрах сыхласа тăраççĕ.

Çав вăрă-хурахсене, пытанса пурăнакан помещиксемпе капиталистсене пур вăйсемпе те йĕрлесе тытмалла, вĕсене *пытанса ларакан пур çĕрсенче те* тăрă шыв çине кăларса ним шеллемесĕр хĕстермелле, мĕншĕн тесен вĕсем — ĕççыннисен чи хаяр, чее, пĕлекен, опытлă заговор тума майлă вăхăта чăтăмлăн кĕтсе тăракан тăшмансем; вĕсем Совет влаçне сиен тăвас тесе нимĕнле преступлени умĕнче те чарăнса тăман саботажниксем. Ĕççыннисен çав тăшманĕсене, помещиксене, капиталистсене, саботажниксене, шуррисене пĕртте хĕрхенмелле мар.

Вĕсене тытма пĕлес тесен, ĕçе ăста пĕлмелле, сыхланулла, ăнланулла пулмалла, чи пĕчĕкçĕ йĕркесĕрлĕхе те, Совет влаçĕн законĕсене ырă кăмăлпа пурнăçа кĕртессинчен кăшт пăрăннине те тимлĕн сăнамалла. Помещиксемпе капиталистсем хăйсен пĕлĕвĕсемпе тата хăйсен опычĕпе кăна мар, тĕнчери чи пуян çĕршывсем паракан пулăшупа кăна та мар, вĕсем çавăн пекех тата йышлă массăсен, хăнаху тата тĕттĕмлĕх пысăк пулнипе те вăйлă, çав массăсем «кивĕлле» пурăнасшăн, вĕсем Совет влаçĕн

законĕсене çирĕп тата тӳрĕ кăмăлпа тытса пыма кирлине ăнланмаççĕ.

Чи пĕчĕкçĕ законсăрлăх, совет йĕркине чи пĕчĕккĕн пăсни—вăл ĕççыннисен тăшманĕсем хăвăртрах уса курмалли *хушăк* пулса тăрать, вăл Колчакпа Деникин валли çĕнтерӳ тумашкăн *тытăнса тăмалли вырăн* пулса тăрать. Колчаковщина чехословаксем тĕлĕшĕнчен чи пĕчĕк сыхлануллăх пулман пирки тата уйрăм полксем кăшт пăхăнман пирки пуçланса кайнине манни преступлени пулать.

*Тăваттăмĕш урок.* Колчаковщина чи пĕчĕк япаласенчен пуçланса кайнине çеç мар тата ăна тĕнчене çуралма меньшевиксемпе эсерсем («социалист-революционерсем») вăй парса тӳрремех пулăшни çинчен манни те преступлени. Политикăлла партисене вĕсен сăмахĕсем тăрăх мар, вĕсен ĕçĕсем тăрăх хаклама вĕренме вăхăт ĕнтĕ.

Хăйсене социалистсем тесе каласа, меньшевиксемпе эсерсем чăннипе илсен—*шуррисене пулăшакансем*, помещиксемпе капиталистсене пулăшакансем пулса тăраççĕ. Çавна ĕçре уйрăм фактсем çеç мар, вырăс революцин историнчи икĕ аслă эпоха: 1) керенщина тата 2) колчаковщина кăтартса пачĕç. Меньшевиксемпе эсерсем иккĕшĕнче те, сăмахпа «социалистсем» тата «демократсем» пулса, чăннипе илсен *белогвардейщинăна пулăшакансен* ĕçне туса пычĕç. Вĕсем халĕ пире, вĕсене çапла «хăтланса пăхма» тепĕр хут ирĕк пама сĕннĕ чухне, çав ирĕк панине вĕсем «пĕрлĕхлĕ социалистла е демократиллĕ фронт» тесе калаççĕ, çапла сĕннине шанмашкăн эпир ниушлĕ питех те айван пулăпăр. Колчаковщина хыççăн меньшевиксемпе тата эсерсемпе «пĕрлĕх фронт» туни вăл Колчака пулăшакан çынсемпе пĕрлешни пулнине ăнланман хресченсем, уйрăм хресченсемсĕр пуçне, ниушлĕ тата юлĕç-ха?

Хирĕç çапла калĕç: меньшевиксемпе эсерсем хăйсен йăнăшĕсене курчĕç, çавăнпа та буржуазипе кирек мĕнле союз тăвассине пăрахăç турĕç, тейĕç. Анчах вăл тĕрĕс мар. Пĕрремĕшĕнчен, сылтăм меньшевиксемпе эсерсем çавăн пек союза пăрахăç турĕç те, çав «сылтăмрисемпе» паллă чикĕ *çук та*, вăл «сулахай» меньшевиксемпе эсерсен айăпĕпе çук; сăмахпа хăйсен «сылтăмрисене» «сивлесе», меньшевиксемпе эсерсенчен чи лайăххисем те ĕçре вĕсемпе юнашар тата вĕсен мĕнпур сăмахĕсене пăхмасăр *вăйсăр* пулса юлаççĕ. Иккĕмĕшĕнчен, меньшевиксемпе эсерсенчен чи лайăххисем те шăпах ĕнтĕ *колчакла* идейăна, буржуазине, Колчака тата Деникина пулăшаканскерне, тасамар тата юнлă капитализмла ĕçне витсе тăраканскерне хӳтĕлеççĕ. Çав идейăсем: халăх влаçĕ, пурне те тивĕç, пĕртан, тӳрех суйлас право, учредительный собрани, пичет ирĕклĕхĕ тата ытти те. Пĕтĕм тĕнчере капиталистсем пуçпулса тăнине тата колонисене пусмăрлассишĕн пулакан вăрçăсене шăпах ĕнтĕ çав «демократиллĕ» суялăхпа тӳрре кăларакан капитализмлă республикăсене эпир куратпăр. Пирĕн патра Колчак та, Деникин та, Юденич та тата кирек хăш генерал та çавăн пек «демократиллĕ» япаласене кăмăллăнах пама пулнине куратпăр эпир. Тăватпăр

тесе сӑмахпа кӑна каланишӗн тӳррӗмех бандита пулӑшакан ҫынна шанма пулать-и? Меньшевиксемпе эсерсем, пӗри те юлмиччен, тӳррӗмех бандитсене, пӗтӗм тӗнчери империалистсене, *вӗсен* влаҫне, *вӗсен* Россия ҫине тӑвакан походне, *вӗсем* пуҫпулса тӑнине, *вӗсен* политикине пулӑшаҫҫӗ, ҫавна вӗсем суя демократиллӗ лозунгсемпе хитрелетсе сӑрлаҫҫӗ. Мӗнпур меньшевиксемпе эсерсем пире ак ҫакӑн пек условипе: эпир капиталистсемпе вӗсен ҫулпуҫӗсене — Колчакпа Деникина уступкӑсем тӑвас, сӑмахран, «террора пӑрахӑҫ тӑвас» (пире хирӗҫ Российӑра заговорсем тӑвакан пӗтӗм Антантӑн чи пуян ҫӗршывӑн пӗтӗм союзӗн террорӗ тӑнӑ чухне), е эпир тырӑпа ирӗккӗн сутту-илӳ тума ҫул уҫса парас т. ыт. условипе «союз» тума сӗнеҫҫӗ. Меньшевиксемпе эсерсен ҫав «условийӗсем» акӑ мӗне пӗлтереҫҫӗ: эпир, меньшевиксем, эсерсем капиталистсен енне сулӑнатпӑр, вара эпир большевиксемпе «пӗрлӗх фрончӗ» тӑвасшӑн, капиталистсем кирек мӗнле уступкӑпа та усӑ курса большевиксене хирӗҫ пыраҫҫӗ, тенине пӗлтереҫҫӗ! Ҫук, господа меньшевиксемпе эсерсем, сире шанма пултаракан ҫынсене халӗ Российӑра мар шырӑр ӗнтӗ. Меньшевиксемпе эсерсем белогвардеецсене пулӑшакансем, пӗрисем — ӑнланулла тата усал, теприсем — ӑнланман пирки тата кивӗ йӑнӑшсене йышӑнасшӑн мар кутӑнланса тӑракансем, анчах вӗсем пурте — белогвардеецсене пулӑшакансем пулаҫҫӗ иккенне Российӑри ӑнланулла рабочисемпе хресченсем пӗлчӗҫ ӗнтӗ.

*Пиллӗкмӗш урок.* Колчакпа колчаковщинӑна пӗтерес тесен, вӗсене ҫӗнӗрен ҫӗкленме парас мар тесен, пур хресченсен те ним иккӗленмесӗрех рабочи государство енне тӑрса, ӑна усӑ кӳмелле. Хресченсене (пуринчен ытла меньшевиксемпе эсерсем, пурте, вӗсен хушшинчи «сулахайрисем» те) «пӗр парти, большевиксен-коммунистсен парти диктатурин» мӗлкипе хӑратаҫҫӗ.

Колчак примерӗ тӑрӑх хресченсем мӗлкӗрен хӑрами пулма вӗренсе ҫитрӗҫ.

Е помещиксемпе капиталистсен диктатури (урӑхла каласан тимӗр пек власть), е рабочи класс диктатури.

Варринчи вырӑн ҫук. Варринчи вырӑн ҫинчен начар кӗнекесем тӑрӑх начар вӗреннӗ улпут ачисем, интеллигентиксем, господчиксем усӑсӑр шухӑшлаҫҫӗ. Тӗнчере ниҫта та варринчи вырӑн ҫук, пулма та пултараймасть. Е буржуази диктатури (халӑх влаҫӗ, учредилка, ирӗклӗхсем т. ыт. ҫинчен те эсерла тата меньшевикла хитре сӑмахсемпе витнӗскер), е пролетариат диктатури. Пӗтӗм XIX ӗмӗрӗн историнчен ҫакна кам вӗренсе ҫитмен — вӑл ним шанчӑксӑр идиот. Российӑра вара меньшевиксемпе эсерсем керенщина вӑхӑтӗнче тата Колчак айӗнче варринчи вырӑн ҫинчен епле ӗмӗтленнине, шухӑшланине эпир пурте куртӑмӑр.

Камшӑн пулнӑ ҫав ӗмӗт-шухӑшсем? Кама пулӑшнӑ вӗсем? — Колчакпа Деникина. Варринчи вырӑн ҫинчен шухӑшлакансем — Колчака пулӑшакансем.

Уралта тата Ҫӗпӗрте рабочисемпе хресченсем буржуази дик-

татурипе рабочи класс диктатурине опыт тăрăх танлаштарса пăхрĕç. Рабочи класс диктатурине большевиксен партийĕ, 1905-мĕш çултах ĕнтĕ тата маларах та пĕтĕм революциллĕ пролетариатпа пĕрлешнĕ парти пурнăçа кĕртсе пырать.

Рабочи класс диктатури çакна пĕлтерет: рабочисен государстви помещиксемпе капиталистсене ним иккĕленмесĕр пусарĕ, çав эксплуататорсене пулăшакан изменниксемпе предательсене пусарĕ, вĕсене çĕнтерĕ.

Рабочисен государстви — помещикпе капиталистăн, спекулянтпа мошенникĕн ним хĕрхенми тăшманĕ, çĕр тата капитал уйрăм харпăрлăхра пулнин тăшманĕ, укça влаçĕн тăшманĕ.

Рабочисен государстви — ĕççыннисемпе хресченсен пĕртенпĕр шанчăклă тусĕ тата помощникĕ. Капитал енне ним чухлĕ те сулăнмалла мар, ăна хирĕç кĕрешес ĕçре ĕççыннисен союзĕ, *рабочисемпе хресченсен влаçĕ, Совет влаçĕ пулмалла* — акă мĕне пĕлтерет ĕнтĕ *ĕçре* «рабочи класс диктатури».

Меньшевиксемпе эсерсем хресченсене çав сăмахсемпе хăратасшăн. Ĕç тухмĕ. Колчак хыççăн рабочисемпе хресченсем, тĕттĕм ялсенче те, çав сăмахсем *шăпах ĕнтĕ унсăрăн Колчакран хăтăлма май çуккине* пĕлтернине ăнланчĕç.

Иккĕленекенсем, çирĕп маррисем, капитала пулăшма сулăнакансем, капиталăн лозунгĕсемпе тата сăмах панисемпе пуççаврăннисем тĕп пулччăр! Капитала хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешесси тата ĕççыннисен союзĕ, хресченсем рабочи класпа союз туни — акă ĕнтĕ колчаковщинăн юлашки тата чи паха урокĕ.

1919 ç. августăн 24-мĕшĕ.
*„Правда" 190 №, 1919 ç. августăн 28-мĕшĕ.*

---

## ПЕТРОГРАДРИ РАБОЧИСЕН ПРИМЕРĔ

Петроградри рабочисем вăйлă мобилизаци тума тата чи лайăх работниксене Кăнтăрти фронта ăсатма тытăнни çинчен хаçатсем пĕлтерчĕç ĕнтĕ.

Деникин Курска илни тата Орел çине куçса пыни Петроградри пролетариатăн çав хастарлăхĕ çĕкленнине пĕтĕмĕшпех ăнлантарса парать. Промышленноçлă ытти центрсенчи рабочисем те вĕсен примерĕ хыççăн пымалла. Деникинецсем пирĕн ретсенче паника туса, пире оборона çинчен çеç, çав еннелле пыни çинчен çеç шухăшлаттарма шутлаççĕ. Ютçĕршыври радио Франция тата Англия империалисчĕсем Деникина çав тĕлешпе те мĕнле тăрăшса пулăшнине, вĕсем ăна хĕçпăшалсемпе тата çĕршер миллион тенкĕ укçа парса мĕнле пулăшнине кăтартса параççĕ. Ютçĕршыври радиосем Мускав çине çул уçăлни çинчен пĕтĕм тĕнче тăрăх кăшкăраççĕ. Çапла хăратасшăн пире капиталистсем.

Анчах вĕсем пире хăратма пултараймĕç. Пирĕн войскăсене шухăшласа тата çирĕп пурнăçланса пыракан план тăрăх вырнаçтарнă. Тăшманăн тĕп вăйĕсен çăлкуçĕ çине эпир çаплах ниçта

пăрăнмасăр наступлени туса пыратпăр. Çак кунсенче тунă çĕнтерÿ,—Богучарски районта 20 тупă илни, Вешенская ятлă станицăна илни,—пирĕн войскăсем казаксен центрĕ патне ăнăçлăн пынине кăтартса параççĕ, Деникина казаксем çеç пысăк вăй пухма май панă, параççĕ те. Деникина, Колчака çапса хуçнă пекех, çапса хуçăпăр. Пире хăратаймĕç, эпир хамăрăн ĕçе çĕнтерÿллĕн вĕçлĕпĕр.

Курска илни тата тăшман Орел çине пыни пирĕн ума çакăн пек задача лартаççĕ: кунта тăшмана отпор пама тата ытларах вăй пухмалла. Петроградри рабочисем хăйсен примерĕпе вĕсем çав задачăна тĕрĕс шута илнине кăтартрĕç. Хăрушлăха хамăртан пытармасăр, ăна ним чухлĕ те пĕчĕклетмесĕр, эпир çапла калатпăр: пирĕн вăйсем тата пуррине Петроград примерĕ кăтартса пачĕ, тетпĕр. Орел çине тапăнса килнине отпор парас тесен, Курскпа Харьков çине наступлени тума пуçлас тесен, пирĕн халĕ пур вăйсенчен пуçне тата пролетариатăн чи лайăх работникĕсене мобилизацилемелле. Курска илнĕ хыççăн пысăк хăрушлăх пулса тăчĕ. Тăшман Мускавран кун пек çывăх нихăçан та пулманччĕ-ха. Анчах çав хăрушлăха сирмешкĕн, войскăн ĕлĕкхи вăйĕсем çумне, эпир каялла чакакан чаçсен кăмăл-шухăшĕсене лайăхлатма пултаракан малта пыракан рабочисен çĕнĕ отрячĕсене яратпăр.

Кăнтăрти войскăсен хушшинче пирĕн çара таврăннă дезертир паллă вырăн йышăнса тăнă. Вăл пуринчен ытла унăн тивĕçлĕхне ăнлантаракан, помещиксемпе капиталистсен влаçне каялла тавăрассин пысăк хăрушлăхĕ çинчен ăнлантаракан агитаци влиянине пула хăй ирĕкĕпе каялла таврăннă. Анчах дезертир тытăнса тăрайман, унăн çирĕплĕх çитеймен, вăл час-часах çапăçмасăрах каялла чакма тытăннă.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ çара пролетариллĕ çĕнĕ вăйсемпе пулăшасси питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çирĕп мар элементсене тĕреклетĕпĕр, шухăш-кăмăлсене çĕклентерĕпĕр, улшăну пулса тăрĕ. Пролетариат, пирĕн революцире ялан пулнă пек, ĕççынни массисен иккĕленсе тăракан сийĕсене пулăшса тĕрĕс çулпа ярĕ.

Петроградра рабочисем, промышленноçлă ытти центрсенчи рабочисенчен тахçантанпах ĕнтĕ тата ытларах йывăрлăхсем тÿсеççĕ. Выçлăх та, вăрçă хăрушлăхĕ те, чи лайăх рабочисене совет ĕçĕсене туса пыма пĕтĕм Россия тăрăх салатни—Питĕрти пролетариат çаксенчен пуринчен те ытти вырăнсенчи пролетариатран нумай ытларах асапланнă.

Çапах та ĕнтĕ эпир Питĕрти рабочисем хушшинче пуçа усни ним чухлĕ те çуккине, вăйсем ним чухлĕ те пĕтменнине куратпăр. Пĕтĕмĕшпех урăхла. Вĕсем пиçĕхнĕ. Вĕсем çĕнĕ вăйсем тупнă. Вĕсем вăй-питтиллĕ борецсене тăратаççĕ. Пулăшу ытларах кирлĕ вырăна вăйсем ярса, вĕсем малта пыракан отрядăн задачине питех те лайăх пурнăçлаççĕ.

Çавăн пек çĕнĕ вăйсем пирĕн çарăн вăйсăрланнă чаçĕсене тĕреклетме пынă чухне, ĕççынни массисем, хресчен-салтаксем «хăйсен» çыннисем хушшинчен, пĕлекентерех, ăнланулларах,

çирĕпрех кăмăллă ĕççыннисен хушшинчен, çĕнĕ пуçлăхсем тупса илеççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн хресченсен çаренче çавăн пек пулăшу пире тăшманран вăйларах тăвать, мĕншĕн тесен тăшманăн, унăн хресченсен çарне „пулăшма" помещик ывăлĕсем çеç каяççĕ, эпир пĕлетпĕр ĕнтĕ çавăн пек «пулăшу» Колчака пĕтерчĕ, Деникина та пĕтерсе хурĕ.

Юлташсем, рабочисем! Петроградри рабочисен примерĕ тăрăх пурте çĕнĕ ĕçе тытăнăр! Войскăра ĕçлемешкĕн вăй ытларах, пуçаруллăх тата хăюллăх ытларах пултăр, петроградецсемпе танлашас тесен ытларах ăмăртмалла, вара çĕнтерӳ ĕççыннисенче пулĕ, помещике тата капиталистла контрреволюцие пĕтĕмĕшпех пĕтерĕпĕр.

*P. S.* Халĕ эпĕ Мускавран фронта темиçе теçетке чи парăнса ĕçлекен юлташсем кайни çинчен пĕлтĕм. Питĕр хыççăн Мускав тапранчĕ. Мускав хыççăн ыттисем тапранмалла.

1919 ç. октябрĕн 3-мĕшĕ.

*„Правда" 221 №, 1919 ç. октябрĕн 4-мĕшĕ.*

---

## РАБОЧИСЕН ГОСУДАРСТВИ ТАТА ПАРТИ ЭРНИ'

Парти эрни Мускавра Совет влаçĕшĕн йывăр вăхăтпа тĕлме тĕл килчĕ. Деникинăн ĕçĕсем ăнăçлăн пынине пула помещиксем, капиталистсем тата вĕсен тусĕсем заговорсем тăвасси питех те вăйланчĕ, буржуази йĕркесĕрлĕхсем сарасси, Совет влаçĕн тĕреклĕхне пур майсемпе те пăсма тăрăшни вăйланчĕ. Иккĕленекен, тĕрексĕр, ăнланулла мар обывательсем, вĕсемпе пĕрле тата интеллигентсем, эсерсем, меньшевиксем, яланхи пекех, тата тĕрексĕр пулса тăнă, вара пирвайхисем хăйсене хăраттарма капиталистсене май панă.

Анчах эпĕ, Мускавра пулса иртекен парти эрни йывăр самантпа тĕлме-тĕл килни пирĕн пĕн выгăнлă, тесе шутлатăп, мĕншĕн тесен вăл ĕçшĕн усăллăрах. Парти эрни пире парадшăн мар кирлĕ. Партире ятшăн кăна тăракан членсем пире ахаль парсан та кирлĕ мар. Членсен шутне ӳстерессишĕн мар, вĕсен пахалăхне ӳстерессишĕн, партие ун çумне «пырса çыпçăннă» çынсенчен тасатассишĕн тăрăшакан тĕнчери пĕртен-пĕр парти, пирĕн парти—революцилле рабочи класс партийĕ пулса тăрать. Çав «пырса çыпçăннă» çынсене хăвалаласа кăларас, партире ăнланулла тата коммунизма чĕререн парăннă çынсене кăна хăварас тесе эпир парти членĕсене çĕнĕрен регистрацилессине темиçе хутчен те туса ирттертĕмĕр. Правительство партийĕн членĕ пулса тăнипе хăйсемшĕн усă «илме» çеç тăрăшакансене, коммунизма усă кӳрес тĕлĕшпе хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçленипе йывăрлăхсене тӳссе ирттерессинчен пăрăнакан çынсене партирен тасатас тесе эпир фронта мобилизаци тунипе те, субботниксемпе те усă куртăмăр.

Халĕ, фронта валли вăйлă мобилизаци туса ирттернĕ чухне, парти эрни çакăнпа аван: вăл пырса çыпçăнас текенсене илĕртĕнме май памасть. Партие кĕме эпир рядовой рабочисене тата чи чухăн хресченсене, хресчен-труженникĕсене çеç, хресчен спекулянтсене *мар,* чĕнетпĕр. Çав рядовой членсене партине кĕрсен вĕсемшĕн хăйсемшĕн çеç нимĕнле усă та памастпăр тата усă парăпăр тесе сăмах та памастпăр. Пĕтĕмĕшпех урăхла, парти членĕсем çине халĕ, ахаль чухнехинчен йывăртарах тата хăрушлăрах задача выртать. Ку лайăх та. Партие коммунизмшăн чĕререн парăнса ĕçлекенсем, рабочисен государствине тӳрĕ кăмăлпа парăннă çынсем, тӳрĕ кăмăллă труженниксем çеç, капитализм вăхăтĕнче пусмăрта пурăннă массăсен чăн-чăн представителĕсем çеç кĕрĕç. Çавăн пек парти членĕсем кăна кирлĕ те ĕнтĕ пире.

Реклама валли мар, серьезнăй ĕç валли кирлĕ пире партин çĕнĕ членĕсем. Эпир вĕсене партине кĕме чĕнетпĕр. Ĕççынnисемшĕн эпир унăн алăкне сарлакан уçатпăр.

Совет влаçĕ—вăл капитал пусмăрне пĕтĕмĕшпех сирпĕтсе антарассишĕн кĕрешекен ĕççыннисен влаçĕ пулса тăрать. Çав кĕрешĕве чи пирвай хулари тата фабрикăллă центрсенчи рабочи класс çĕкленчĕ. Вăл пирвайхи çĕнтерӳ туса государство влаçне кĕрешсе илчĕ.

Вăл хăй çумне хресченсен ытларахăшне пĕрлештерет. Мĕншĕн тесен капитал енне, буржуази енне хресчен-ĕççынни мар хресчен-сутăçă, хресчен-спекулянт çеç туртать.

Чи пĕлекен, чи ăнланулла рабочисем, Питĕрти рабочисем, Российăна тытса пырас ĕçе хăйсен вăйĕсене ытларах пачĕç. Анчах рядовой рабочисемпе хресченсем хушшинче ĕççынни массисен интересĕсене чĕререн парăннă тата ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме пултаракан çынсем питех те, питех те нумай пулнине пĕлетпĕр эпир. Вĕсен хушшинче организаторла тата администраторла талантсем нумай, вĕсене капитализм çул паман, вĕсене эпир мала тухма тата социализм строительствин ĕçне тытăнма пур майсемпе те пулăшатпăр тата пулăшма тивĕç те. Çав çĕнĕ, йăваш, курăнман талантсене тупасси çăмăл мар. Помещиксемпе капиталистсем ĕмĕрсем тăршшĕ пусарса тата хăратса тăнă рядовой рабочисемпе хресченсене государство ĕçне хутшăнтарасси çăмăл мар.

Анчах рабочи класс, ĕçхресченĕсем хушшинчен çĕнĕ вăйсене ытларах тупса илес тесен, пирĕн çав çăмăл мар ĕçе обязательно тумалла.

Юлташсем, беспартийнăй рабочисемпе ĕçхресченĕсем, парти ретне кĕрĕр! Çавăнтан сире хăвăршăн усă пулĕ тесе сăмах памастпăр эпир, эпир сире йывăр ĕçе, государство строительстви ĕçне чĕнетпĕр. Эсир коммунизм майлă чĕререн тăратăр пулсан, çав ĕçе хăюллăнах тытăнăр, вăл çĕнĕ ĕç тата йывăр ĕç пулнинчен ан хăрăр, вăл ĕçе имĕш хысна образованине илнĕ çынсем çеç тума пултараççĕ текен кивĕ тĕшмĕшсенчен ан именĕр.

Вăл тĕрĕс мар. Социализм строительстви ĕçне ытларах та ытларах рядовой рабочисемпе хресчен-ĕççыннисем ертсе пыма пултараççĕ, ертсе пымалла та.

Ĕççынни массисем пирĕншĕн. Çавăнта пирĕн вăй. Çавăнта пулать ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчери коммунизмăн никам çĕнтерейми çăлкуçĕ. Çĕнĕ пурнăç строительствине хутшăнса хăй тĕллĕн ĕçлемешкĕн массăсем хушшинчен парти ретне çĕнĕ работниксене ытларах илмелле—пĕтĕм йывăрлăхсемпе кĕрешмелли майсем çавăн пек пирĕн, çавăн пек пирĕн çĕнтермелли çул.

1919 ç. Октябрĕн 11-мĕшĕ.
*«Правда» 228 №, 1919 ç. октябрĕн 12-мĕшĕ.*

---

## МОБИЛИЗАЦИЛЕНĔ РАБОЧИСЕНЕ Р. ТАТА ХР. Д. МУСКАВ СОВЕЧĔН БАЛКОНĔ ÇИНЧЕН КАЛАНĂ САМАХ

***1919 ç. октябрĕн 16-мĕшĕ.***

ХРОНИКЕР ÇЫРНИ.

Юлташсем! Ярославль тата Владимир кĕпĕрнинчи рабочисене саламлатăп, вĕсем эпир чĕнсе каланине тепĕр хут хапăл туса рабочисемпе хресченсен республикине хӳтĕлеме хăйсен чи лайăх вăйсене пачĕç. Патша генералĕ Деникин Орел хулине илнипе тата Юденич—хĕрлĕ Питĕре хăратса тăнипе мĕнле çĕнĕ хăрушлăх илсе килнине эсир хаçатсенчен пĕлетĕр ĕнтĕ, унта эпир нимĕн те пытармастпăр, пĕтĕмĕшпех тĕрĕссине пичетлетпĕр. Анчах эпир çав хăрушлăх çине пăхса унпа кĕрешетпĕр, яланхи пекех эпир: ăнланулла пролетариатпа ĕçхресченĕсене хамăрăн çĕнтерсе илнисене кăкăрпа тăрса хӳтĕлемешкĕн чĕнетпĕр.

Положени питех те йывăр. Анчах эпир хăраса ӳкместпĕр, мĕншĕн тесен кашнинчех, Совет республикĕшĕн йывăр положени пулсан, рабочисем тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтартнине, хăйсен примерĕпе войскăсен кăмăлĕсене çĕклентерсе тата хавхалантарса вĕсене çĕнĕ çĕнтерӳсем патне илсе кайнине пĕлетпĕр.

Эпир çакна пĕлетпĕр: пĕтĕм тĕнчере, пур çĕршывсенче те, революцилле движени, пире кирлĕ пек хăвăрт мар, майпентерех пулсан та, пĕрмаях ӳссе пырать. Эпир çавăн пекех тата рабочи класс пĕтĕм тĕнчере çĕнтересси пĕтĕмĕшпех шанчăклă пулнине пĕлетпĕр.

Россия тăвакан çухатусем мĕнле йывăр пулсан та, вăл мĕнле асапланса тата тарăхса çитнĕ пулсан та, вăл пĕтĕм рабочисен ĕçĕшĕн çирĕп кĕрешет. Империалистсем тата пĕрикĕ республикăна путарса хума пултарĕç, анчах вĕсем пĕтĕм тĕнчери империализма çăлаймĕç. Мĕншĕн тесен ун кунçулĕ пурпĕрех пĕтмелле, мĕншĕн тесен ăна килес социализм çĕмĕрсе аркатĕ.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ сире, Владимир тата Ярославль кĕпĕрнинчи рабочисене, эсир хăвăрăн примерăрпа Хĕрлĕ çарăн хастарлăхне çĕклентерме пулăшса вĕсене çĕнтерӳ тума ертсе каясси не çирĕп шанса саламлатăп.

Рабочисемпе хресченсем сывă пулччăр!

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери рабочисен республики!

*«Правда» 232 №, 1919 ç. октябрĕн 17-мĕшĕ.*

## ПЕТРОГРАДРИ РАБОЧИСЕМПЕ КРАСНОАРМЕЕЦСЕНЕ

Юлташсем! Татăклă самант çитрĕ! Патша генералĕсем Англия, Франция, Америка капиталисчĕсенчен припассемпе вăрçă хатĕрĕсем тепĕр хут илчĕç, помещиксен ывăлĕсен бандисемпе пĕрле хĕрлĕ Питĕре илме тепĕр хут хăтланаççĕ. Тăшман Эстляндипе мир çинчен калаçнă вăхăтра тапăнчĕ, вăл пирĕн красноармеецсем çине, çав калаçусене шаннăскерсем çине тапăнчĕ. Çав тапăну изменникле пулни—тăшман хăвăрт ăнăçусем тунине хăшпĕр таран ăнлантарса парать. Красное Селона, Гатчинăна, Вырицăна илнĕ. Питĕр патне пыракан икĕ чугун çула татнă. Питĕре выçăпа илес тесе тăшман виççĕмĕш çула, Николаевски çула, тата тăваттăмĕшне, Вологда çулне татасшăн.

Юлташсем! Петроградшăн мĕнле пысăк хăрушлăх пулса тăнине эпир пурте пĕлсе, курса тăратпăр. Темиçе кун хушшинче Петроград кунçулĕ, Российйăра Совет влаçĕн тĕрекĕсенчен пĕрин кунçулĕ çинчен тăракан ыйту пурнăça кĕмелле.

Петроградри рабочисемпе красноармеецсене вĕсен тивĕçĕ çинчен калама манăн кирлех те мар. Нихăçан пулман йывăрлăх тĕлĕшĕнчен тата нихăçан пулман çĕнтерӳсем тĕлĕшĕнчен Советсен пĕтĕм тĕнчери буржуазине хирĕç икĕ çул хушши пынă кĕрешĕвĕн историйĕ пире Питĕрти рабочисем хăйсен тивĕçлĕхне питех те лайăх пурнăçланин тĕслĕхне çеç мар, çавăн пекех тата чи пысăк героизм, тĕнчере нихăçан курман революциллĕ хаваслăхпа хăйсен пурăнăçне шеллеменнин тĕслĕхне кăтартрĕç.

Юлташсем! Петроград кунçулĕ пирки ыйту тăрать! Тăшман пире сасартăк тытса илесшĕн. Унăн çарĕ вăйсăр, тата питех те сахал, вăл хăйĕн хăвăртлăхĕпе, офицерсен сĕмсĕрлĕхĕпе, снабжени тата хĕçпăшал техникипе вăйлă. Питĕре пулăшу çывăх, эпир ăна ятăмăр. Эпир тăшманран нумай вăйлă. Юлашки тумлам юнччен кĕрешĕр, юлташсем, кашни пĕр пусăм çĕршĕн тăрăр, вĕçне çитичченех çирĕп пулăр, çĕнтерӳ инçе мар! çĕнтерӳ пирте пулĕ!

Октябрĕн 17-мĕшĕ.
*«Петроградская правда» 237 №;*
*1919 ç. октябрĕн 19-мĕшĕ.*

---

## КРАСНОАРМЕЕЦ-ЮЛТАШСЕНЕ

Юлташсем-красноармеецсем! Патша генералĕсем—çурçĕрте Юденич, кăнтăрта Деникин—Совет влаçне çĕнтерес тесе, патша влаçне, помещиксемпе капиталистсен влаçне каялла тавăрас тесе пĕтĕм вăйĕсене хурса тăрăшаççĕ.

Колчак çавăн пек хăтланса пăхни мĕнле пĕтнине пĕлетпĕр эпир. Уралти рабочисемпе Çĕпĕрти хресченсене вăл нумайлăха улталаймарĕ. Ултава курса, офицерсем, помещиксемпе капиталистсен ывăлĕсем вĕçĕмсĕр ирĕксĕрленине, хĕненине, çаратнине тӳссе Уралти рабочисемпе Çĕпĕрти хресченсем пирĕн

Хĕрлĕ çара Колчакăн çарне çĕмĕрсе тăкас ĕçре пулăшрĕç. Оренбург казакĕсем тӳрех Совет влаçĕ енне куçрĕç.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ эпир Юденичпа Деникина çĕнтерессине çирĕп шанса тăратпăр. Вĕсем патшапа помещиксен влаçне каялла тавăраймĕç. Вăл пулмĕ! Деникин тылĕнче хресченсем ĕнтĕ восстанисем тăваççĕ. Кавказра Деникина хирĕç восстани хĕмленсе çулăмланать. Кубаньри казаксем, Деникин помещиксемпе англичансем валли çаратса тăпăлтарнипе кăмăлсăр пулнипе, ун çине çиленсе пăлханаççĕ.

Çирĕп пулар ĕнтĕ, юлташсем-красноармеецсем! Рабочисемпе хресченсем тата таччăнтарах пĕрлешсе, тата ăнланулларах, тата хăюллăрах пулса Совет влаçĕ енне тăраççĕ.

Малалла! юлташсем-красноармеецсем. Помещиксене хирĕç, патша генералĕсене хирĕç рабочисемпе хресченсен влаçĕшĕн çапăçăва! Çĕнтерӳ пирте пулĕ!

19. X. 1919.
*«Красноармеец», 10—15 №, октябрь 1919 ç.*

---

## МУСКАВРА ИРТТЕРНĔ ПАРТИ ЭРНИН ИТОГĔСЕМПЕ ПИРĔН ЗАДАЧĂСЕМ

Мускавра парти эрни вăхăтĕнче партине 13.600 çын çырăнчĕ.

Ку питех те пысăк, пĕртте кĕтмен çĕнтерӳ. Пĕтĕм буржуази тата уйрăмăнах хулари вак буржуази, вĕсемпе пĕрле тата хăйсен привилегиллĕ «улпутла» положенине çухатнă пирки çунакан специалистсем, чиновниксем, служащисем—çав пĕтĕм публика шăпах ĕнтĕ юлашки вăхăтра, шăпах ĕнтĕ Мускавра парти эрнине иртттернĕ чухне, йĕркесĕрлĕх сарас тесе, Совет влаçне часах вилĕм çитет, Деникин—часах çĕнтерет тесе сăмах сарас тĕлĕшпе халран каяччĕнех тăрăшрĕ.

Çав «интеллигентла» публика йĕркесĕрлĕх сармалли çав хĕçпăшалпа усă курма питех те ăста пĕлет! Мĕншĕн тесен ку вăл буржуазийĕн пролетариата хирĕç пыракан класлă кĕрешĕвĕнче чăн-чăн хĕçпăшал пулса тăнă. Вак буржуази çавăн пек самантсенче, эпир пурăнса иртерекен пек самантсенче, буржуазипе «реакциллĕ пĕр массăна» пĕрлешсе çав хĕçпăшала ярса тытать.

Шăпах ĕнтĕ Мускавра, уйрăмăнах суту-илӳ тăвакан элементсем вăйлă пулнă çĕрте, эксплуататорсем, помещиксем, рантье пуринчен ытла пухăнса тăнă çĕрте, капитализмлă аталану буржуаллă интеллигенци массине пĕрле пухнă çĕрте, государствăн центрти управленийĕ чиновниксем уйрăмăнах йышлăн пухăнса тăрассине туса хунă çĕрте—шăпах ĕнтĕ Мускавра буржуаллă суя хыпарсем, буржуаллă усал сăмахсем, буржуаллă йĕркесĕрлĕх сармашкăн майсем питех пысăк пулнă. Деникин тата Юденич ăнăçлăн наступлени туса пынă «самант» çав буржуаллă орудин «ăнăçлăхĕсене» питех те пулăшнă.

Анчах çапла пулсан та, Деникинăн «çитĕнĕвĕсене» курнă тата коммунист ятне илсе ĕçлессипе çыхăнса тăракан мĕнпур йывăрлăхсене, хĕнсене, хăрушлăхсене пĕлсе тăнă пролетариат мас-

сисен хушшинчен коммунистсен партине тĕреклетмешкĕн, государствăна тытса пырас ĕçĕн питех те пысăк йывăрлăхне хăйсем çине илмешкĕн пиншер те пиншер çын çĕкленчĕç.

Совет влаçĕн çитĕнĕвĕ, пирĕн партин çитĕнĕвĕ тĕлĕнмелле пысăк!

Çав çитĕнӳ столицăри халăха, ун хыççăн тата пĕтĕм республикăна та, пĕтĕм тĕнчене те, Совет влаçĕн вăйĕсемпе çирĕплĕхĕн шанчăклă çăлкуçĕ шăпах ĕнтĕ пролетариат хушшинче, шăпах ĕнтĕ ĕççынни массисен чăн-чăн представителĕсем хушшинче пуррине ĕненмелле тата уççăнах кăтартса пачĕ. Чи йывăр тата хăрушă самант вăхăтĕнче партие ирĕклĕн çырăнасси ăнаçлăн пулни—пролетариат диктатури хăйне ĕçре шăпах ĕнтĕ пролетариатăн (государство влаçне хăйĕн аллинче тытса тăраканăн) массăсем çине паракан *моральнăй* влиянийĕн (сăмахăн чи лайăх енĕпе илсен) уйрăм вăйĕ енчен, çав влиянин *меслечĕсем* енчен кăтартрĕ; çав енне тăшмансем усал шухăшпа юриех курасшăн мар, ĕçлеве капитал пусмăрĕнчен хăтарассишĕн тăрăшакан чăн-чăн туссем вара ăна пуринчен çӳлерех хаклаççĕ.

Пролетариатăн малта пыракан сийĕсем, государство влаçне хăйсен аллинче тытса тăрса, ĕççыннисен интересĕсене чĕререн парăннин питех те пысăк *тĕслĕхне*, ĕççыннисен тăшманĕсене (пĕтĕмĕшпе илсен, эксплуататорсене тата, уйрăмăн илсен, «харпăрлăх хуçисене» тата спекулянтсене) хирĕç кĕрешес ĕçре питех те пысăк хастарлăх, йывăр самантсенче питех те пысăк çирĕплĕх, пĕтĕм тĕнчери империализмăн вăрă-хурахĕсене отпор парас ĕçре хăйсене шеллеменнин питех те пысăк тĕслĕхне ĕççыннисен массине хăйсен примерĕпе кăтартса пачĕç, икĕ çул (пирĕн, питех те вăйлăн пулса пыракан политикăллă аталану хăвăртлăхĕшĕн, çав тери пысăк срок) хушшинче кăтартса пачĕç, рабочисемпе хресченсен хăйсен авангардне *хапăл туса* тăракан кăмăлăн вăйĕ *пĕр* хăй çеç *тĕлĕнмелле хăватлă ĕçсем* тума пултарнине кăтартса пачĕ.

Мĕншĕн тесен ку вăл—чудă: выçлăхăн, сиввĕн, юхăнупа арканăвăн нихăçан илтмен асапĕсене тӳссе ирттернĕ рабочисем, хăйсен питех те çирĕп, Совет влаçне чĕререн парăнса тăракан пĕтĕм кăмăлне, хăйсен пурăнăçне те шеллемесĕр парас хаваслăхĕпе героизмне çеç мар упраççĕ, вĕсем тата, хăйсем хатĕрленменнине тата опытсăр пулнине пăхмасăрах, государство карапне тытса пырас ĕçе хăйсем çине илеççĕ! Ку ĕнтĕ çил-тăвăл урса кайнă пекех вăйланнă вăхăтра...

Пирĕн пролетариллĕ революцин историнче çавăн пек чудăсем питех те нумай пулнă. Çавăн пек чудăсем,—уйрăм самантсем епле йывăр пулсан та,—ахăрнех тата пурпĕрех Совет республики пĕтĕм тĕнчипех тата пĕтĕмĕшпех çĕнтересси патне илсе пырĕç.

Халĕ пирĕн партин çĕнĕ членĕсемпе *тĕрĕс* усă курас тесе тăрăшмалла. Çав задача çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, мĕншĕн тесен вăл задача çăмăл мар, вăл задача çĕнĕ, ăна хăнăхнă кивĕ майсемпе татса пама май çук.

Рабочисемпе ĕçхресченсен хушшинчи питех те нумай талантсене капитализм пăвнă, путарнă, çĕмĕрнĕ. Çав талантсем хĕнхур, чухăнлăх, этем тивĕçлĕхне мăшкăланин пусмăрĕ айĕнче вилсе, пĕтсе пынă. Пирĕн тивĕçлĕх халĕ çав талантсене тупасси тата вĕсене ĕç патне тăратасси. Парти эрнинче партине кĕнĕ çĕнĕ членсем, паллах, нумайăшĕ опытсăр тата государствăна тытса пырас ĕçе пĕлмеççĕ. Анчах çакăн пирки те иккĕленмелли çук, вĕсем капитализм юриех аялта тытнă, «кĕçĕн» сийсем туса хунă, çӳлелле çĕкленме паман обществăллă сийсен хушшинчи чи паранса ĕçлекен, чи тӳрĕ тата чи пултаруллă çынсем. Вĕсен вара вăй, хастарлăх, пултарулăх, çирĕплĕх, тӳрĕлĕх ыттисенчен *нумайтарах*.

Кунтан ĕнтĕ парти пур организацийĕсем те партин çав çĕнĕ членĕсемпе усă курасси çинчен уйрăмăнах шухăшлама кирлĕ тухса тăрать. Вĕсене государствăри тĕрлĕ ĕçсене май пур таран ытларах, *хăюллăрах* памалла, вĕсене хăвăртрах практикăра тĕрĕслемелле.

Паллах, хăюллăх çĕнĕ çынсене сасартăках ответлă вырăнсем, ĕçлеме пĕлӳ кирлĕ вырăнсем парассине пĕлтермест, вĕсен пĕлӳ çук-ха. Хăюллăх бюрократизмпа кĕрешес тĕлĕшпе кирлĕ: ахаль мар ĕнтĕ пирĕн парти программи бюрократизм хăшпĕр таран чĕрĕлнин сăлтавĕсем çинчен тата ăна хирĕç кĕрешесси çинчен ыйтăва тӳрех лартрĕ. Хăюллăх, пĕрремĕшĕнчен, служащисене, чиновниксене, специалистсене партин çĕнĕ членĕсем енчен, халăх массисен пурнăçне, вĕсен нушине, вĕсем мĕн ыйтнисене пĕлекенсен енчен *контроль* туса пырас тĕлĕшпе кирлĕ. Хăюллăх, çав çĕнĕ çынсене хăйсене *анлă* ĕçре кăтартма халех майсем туса парас тĕлĕшпе кирлĕ. Хăюллăх, хăнăхнă шаблонсене çĕмĕрес тĕлĕшпе кирлĕ (анчах! пирĕн те—советсен çирĕпленнĕ шаблонĕсене, çав йĕркесене хăш-чухне ăнланулла коммунистсем мар, кивĕ чиновниксемпе служащисем тăваççĕ пулин те, сайра хутра мар тапăнма хăраççĕ); хăюллăх, партин çĕнĕ членĕсем валли, вĕсене хăвăртрах тĕрĕслесе, вĕсене ĕçлеме тивĕçлĕ вырăн тупас тесе, тĕрлĕ ĕçсене революциллĕ хăвăртлăхпа улăштарма хатĕр тăрас тĕлĕшпе кирлĕ.

Нумай чухне партин çĕнĕ членĕсене çакăн пек вырăнсене: кивĕ чиновниксем хăйсен задачисене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртсе пынине контроллесе пырса, партин çав членĕсем ĕçе часах вĕренсе, ăна хăйсем тĕллĕнех туса пыма хăнăхмалли вырăнсене лартма юрать. Тепĕр чухне вĕсене, пĕр енчен, рабочисемпе хресченсен хушшинчи тӳррĕмех çыхăнава, тепĕр енчен—государство аппарачĕпе çыхăнса тăрассине çĕнетес тата лайăхлатас тĕлĕшпе лартма пултараççĕ. Пирĕн промышленноçăн „главкисемпе центрĕсенче", пирĕн „советсен çĕрĕç хуçалăхĕсенче" саботажниксем, Совет влаçне пур майсемпе те сиен тăвакан, пытанса юлнă помещиксемпе капиталистсем нумай, питех те нумай-ха. Партин центрти тата вырăнти опытлă работникĕсен пултарулăхĕ çав усала хирĕç татăклăнах кĕрешес ĕçре партин çĕнĕ, лайăх вăйĕсемпе ытларах усă курассинче палăрмалла.

Совет республики вăйсене питех те нумай пухса, вĕсене

питех те перекетлесе кирек мĕнле волокитăна тата тĕрлĕрен кирлĕ мар формалистикăна питех те нумай чакарса, аппарата питех те çăмăллатса, ăна массăсен нушисем патне çывхартса çеç мар, ăна ăнлантарса, ăна çав аппаратра хутшăнса хăй тĕллĕн ĕçлемелле туса пĕр пĕтĕм вăрçăллă лагерь туса хумалла.

Партин вата членĕсене вăрçă ĕçне мобилизацилесси питех те вăйлăн пулса пырать. Çав ĕçе нимĕнле майпа та вăйсăрлатмалла мар, ытларах та ытларах вăйлатмалла. Анчах çавăнпа пĕрлех, тата вăрçăра ăнăçу тăвас тесен, пирĕн тытăмăн граждана управленине лайăхлатмалла, çăмăллатмалла, çĕнетмелле.

Камăн резервсем ытларах, вăй илмелли çăлкуçсем ытларах, халăх хушшинче хăйне çирĕпрех тытать, вăл вăрçăра çĕнтерет.

Çавсем пирĕн пурте, шуррисенчен ытларах, „пĕтĕм тĕнчипех хăватлă" англо-француз империализмĕннинчен, çав тăм уралла улăпĕннинчен, ытларах. Çавсем пирĕн ытларах, мĕншĕн тесен эпир рабочисемпе ĕç хресченĕсем хушшинчен, капитализм пусмăрланă тата пур çĕрте те халăхăн ытларахăшĕ пулса тăракан класс хушшинчен илсе тăма пултаратпăр тата нумай вăхăт хушши ытларах та ытларах илсе тăрăпăр. Çав питех те пысăк резервуартан илсе тăма пултаратпăр, мĕншĕн тесен вăл пире чи тӳрĕ, пурнăç йывăрлăхĕсене тӳссе чи çирĕпленнĕ, социализм тăвас ĕçре рабочисемпе хресченсене чи çывăх тăракан пуçлăхĕсене парать.

Пирĕн тăшмансен, вырăс буржуазийĕн те, пĕтĕм тĕнчери буржуазийĕн те, çав резервуар пекки нимĕн те çук, вĕсен ури айĕнчи çĕр ытларах та ытларах чĕтрет, ĕлĕк рабочисемпе хресченсен хушшинче вĕсем майлă пулнă çынсем вĕсенчен ытларах та ытларах каяççĕ.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ, юлашкинчен, Совет влаçĕ валли пĕтĕм тĕнчипех çĕнтермелли май пулса тăнă, вăл пурпĕрех пулать.

1919 ç. октябрĕн 21-мĕшĕ.
*«Известия Ц.К. Р.К.П(б)»—№ 7,*
*1919 ç. октябрĕн 22-мĕшĕ.*

---

## ПЕТРОГРАДРИ РАБОЧИСЕНЕ САЛАМ

Совет республики икĕ çул тултарнă кун пирвайхи салама Петроградри рабочисем илме тивĕç. Революциллĕ рабочисемпе салтаксен авангарчĕ, Российăри тата пĕтĕм тĕнчери ĕççынни массисен авангарчĕ пулса, Петроградри рабочисем буржуази влаçне чи пирвай сирпĕтсе антарса капитализма тата империализма хирĕç пролетариллĕ революци ялавне çĕклерĕç.

Совет республикинчи ĕççыннисемпе хресченсем пĕтĕм йывăрлăхсене тата выçлăх асапĕсене, сивве, юхăннине, тусăннине пăхмасăр, çав çĕнтерӳллĕ ялава хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Социализмлă строительствăн икĕ çулталăкĕ, буржуази хаяррăн çиленнине тата хирĕç тăнине пăхмасăр, пĕтĕм тĕнчери империализм тапăнса килнине пăхмасăр, пире пысăк опыт пачĕ, Совет влаçне çирĕплетрĕ.

Пĕтĕм тĕнчери рабочисен кăмăлĕ пирĕн енче. Пролетарилĕ революци пур çĕршывсенче те, майпен тата йывăрлăхпа пулсан та, ўссе пырать, буржуази хаярланса ирĕксĕрленисем вара кĕрешĕве çивĕчлетеççĕ çеç, пролетариат çĕнтерўне васкатаççĕ çеç.

Шăпах ĕнтĕ юлашки кунсенче Англин реакционнăй империалисчĕсем хăйсен юлашки тĕллевĕ вырăнне Петроградa илессине лартрĕç. Пĕтĕм тĕнчери буржуази, тата уйрăмăнах вырăс буржуазийĕ, çĕнтерў пуласса кĕтнĕ. Анчах вĕсем çĕнтерў вырăнне Петроград патĕнче поражени тўснĕ.

Юденич войскисене çĕмĕрсе тăкнă, вĕсем каялла чакаççĕ.

Юлташсем-рабочисем, юлташсем-красноармеецсем! Пĕтĕм вăйăрсене пухăр! Кирек епле пулсан та, каялла чакакан войскăсене хĕссе пырăр, аркатăр вĕсене, пĕр сехет те, пĕр минут та канма ан парăр вĕсене. Тăшмана пĕтĕмĕшпех çапса аркатма халĕ эпир нихăçанхинчен аванрах пултаратпăр тата çапмалла та.

Патша генералĕсене, белогвардеецсене, капиталистсене çĕнтерекен Хĕрлĕ çар сывă пултăр! Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери Советлă республика!

5. XI. 1919.
*«Петроградская Правда» 255 №,*
*1919 ç. ноябрĕн 7-мĕшĕ.*

---

## ДЕНИКИНА ÇĔНТЕРНĔ ПИРКИ УКРАИНА РАБОЧИЙĔСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕМ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

Юлташсем! Тăвата уйăх каярах, 1919 ç. август уйăхĕн вĕçĕнче манăн рабочисемпе хресченсем патне Колчака çĕнтернĕ пирки çыру çырмалла пулчĕ.

Халĕ эпĕ çав çырăва Украина рабочийĕсемпе хресченĕсемшĕн Деникина çĕнтернĕ тĕлĕшпе пĕтĕмĕшпех çĕнĕрен пичетлесе кăларатăп.

Хĕрлĕ войскăсем Киева, Полтавăна, Харькова илсе Ростов çине çĕнтерўллĕн пыраççĕ. Украинăра Деникина хирĕç восстани пырать. Помещиксемпе капиталистсен влаçне каялла тавăрма хăтланнă Деникин войскисене вĕçне çитичченех çĕмĕрсе тăкас тесен, пĕтĕм вăйсене пухмалла. Пирĕн çине çĕнĕрен тапăнса килес тĕлĕшпе чи пĕчĕкçĕ майсем те ан пулччăр тесен, Деникина пĕтерсе хумалла.

Украина рабочийĕсемпе хресченĕсен пĕтĕм вырăс хресченĕсемпе рабочийĕсемшĕн Колчак Çĕпĕре вăрçса илнĕ хыççăн тата помещиксемпе капиталистсен нумай уйăхсем хушши пынă пусмăрĕ хыççăн хĕрлĕ войскăсем Çĕпĕре ирĕке кăларнă опытра палăрнă уроксемпе паллашмалла.

Украинăра Деникин пуçпулсă тăни, Колчак Çĕпĕрте пуçпулса тăнă пекех, йывăр япала пулнă. Иккĕленмелли те çук, çав йывăр пурнăç урокĕсем Украина рабочийĕсемпе хресченĕсене — Урал тата Çĕпĕр рабочийĕсемпе хресченĕсене пекех — Совет влаçĕн задачисене уççăнрах ăнланса илесси тата ăна çирĕпрех хўтĕлесси патне илсе пырĕç.

Великороссире помещиксен çĕр тытăмне пĕтĕмĕшпех пĕтерне. Украинăра та çавнах тумалла, вара Украина рабочийĕсемпе хресченĕсен Совет влаçĕн помещиксем çĕре тытса тăрассине пĕтĕмĕшпех пĕтернине, Украина рабочийĕсемпе хресченĕсене помещиксем пусмăрласşинчен тата помещиксенчен хăйсенчен пĕтĕмĕшпех хăтарнине çирĕплетмелле. Анчах пĕр пекех Российăри тата Украинăри ĕç массисем умĕнче тăракан çак задачăсăр тата ытти чылай задачăсемсĕр пуçне, Совет влаçĕн Украинăра уйрăм задачăсем пур. Çав уйрăм задачăсенчен пĕрин çине хальхи вăхăтра питех те тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Вăл наци ыйтăвĕ е Украина уйрăм тата никама пăхăнса тăман Украина Советлă Социализмлă Республика Росси Социализмлă Федеративлă Советлă республикăпа союзра (федерацинче) çыхăнса тăракан республика пулмалла-и, е Украинăн пĕрлĕхлĕ Советлă республикăна пĕрлешмелле-и текен ыйту. Пур большевиксен те, ăнланулă рабочисемпе хресченсен пурин те çав ыйту пирки тĕплĕн шухăшласа пăхмалла.

Украина никама та пăхăнманнине РСФСР та, Россия Социализмлă Федеративлă Советлă Республикĕн Всецикĕ, (Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Центральный Комитет) тата Российăри Коммунистсен большевиксен Партийĕ те йышăннă. Çавăнпа хăйне хăех паллă ĕнтĕ тата ăна пурте йышăнаççĕ, Украинăна Российăпа пĕрлештермелле-и, Украинăна хăй тĕллĕн тата никама та пăхăнмач республика туса хăвармалла-и, тата апла пулсан çав республикăпа Россия хушшинче тĕллĕнех мĕнле федеративлă çыхăну тумалла текен ыйтăва Украина рабочийĕсемпе хресченĕсем хăйсем çеç, хăйсен Пĕтĕм Украинăри Советсен съездĕнче татса пама пултараççĕ, татса парĕç те.

Ĕççыннисен интересĕсем енчен илсен, ĕçе капитал пусмăрĕнчен пĕтĕмĕшпех хăтарас тĕлĕшпе пулса пыракан вĕсен кĕрешĕвĕн ăнăçлăхĕ енчен илсен, çав ыйтăва мĕнле татса памалла-ха?

Пĕрремĕшĕнчен, ĕç интересĕсем тĕрлĕ çĕршывсен, тĕрлĕ нацисен ĕççыннисен хушшинче питех те тачă союз тума, пĕтĕмĕшпех шанса тăма хушаççĕ. Помещиксем, капиталистсем, буржуази майлă тăракансем рабочисене вăйсăрлатас тесе, капитал влаçне çирĕплетес тесе рабочисене уйăрма, нацисем хушшинче харкашупа хирĕçĕве вăйлатма тăрăшаççĕ.

Капитал вăл—пĕтĕм тĕнчери вăй. Ăна çĕнтерес тесен пĕтĕм тĕнчери рабочисен союзĕ, вĕсен пĕтĕм тĕнчери тăванлăхĕ кирлĕ. —Эпир—нациллĕ хирĕçӳсене, нациллĕ харкашусене, нацисем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăнине хирĕç пыратпăр. Эпир пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳшĕн тăратпăр, эпир интернационалистсем. Эпир пĕтĕм тĕнчери мĕнпур наци рабочийĕсемпе хресченĕсене пĕрлĕхлĕ пĕтĕм тĕнчери Советлă республикăна таччăн пĕрлештерессишĕн тата пĕтĕмĕшпех пĕрлешсе каяссишĕн тăрăшатпăр.

Иккĕмĕшĕнчен, ĕççыннисен çакна манмалла мар: капитализм нацисене пусмăрлакан, великодержавнăй (империалистла), тулли правăллă, привилегиллĕ нацисен пысăк мар ушкăнĕ çине тата пусмăрта пурăнакан, пăхăнса тата çурма пăхăнса тăракан, танмар правăллă нацисен питех те пысăк пайĕ çине уйăрнă.

1914—1918 ç. ç. чи тискер те реакциллĕ вăрçă çав уйрăлăва тата ытларах вăйлатнă, çавна пула пĕр-пĕрне çилленессине тата кураймасăр пурăнассине çивĕчлетнĕ. Тулли мар правăллă тата пăхăнса тăракан нацисем великодержавнăй тата пусмăрлакан нацисене, Украина нацийĕ великоруссен нацине тарăхнă тата ăна шанманни пек кăмăл ĕмĕрсем тăршшĕ пухăнса пынă.

Эпир нацисен *ирĕклĕ* союзне пĕр наци тепĕр нацине нимĕнле те ирĕксĕрлеме паман союза,—пĕр-пĕрне пĕтĕмĕшпех шанса тăракан, тăванлă пĕрлĕхе уççăн ăнланнă, тулли ирĕклĕ килĕшӳ никĕсĕ çинче тунă союза тăвасшăн. Çавăн пек союза хăвăртах тума çук; ĕçе пăсас мар тесен, шанман кăмăл тăвас мар тесен, помещиксемпе капиталистсем, уйрăм харпăрлăх тата çав харпăрлăха уйăрассипе çĕнĕрен уйăрса пайласси пирки ĕмĕрсем хушши пынă пусмăр хăварнă шанманлăха пĕтерме май парас тесен, çав союз патне питех те чăтăмлăн тата сыхланууллăн пымалла.

Çавăнпа та нацисен пĕрлĕхне тăвас тесе çирĕп тăрăшса, вĕсене мĕн уйăрса тăрать, çавсене ним шеллемесĕр питлесе, эпир нациллĕ шанманлăхăн юлашкийĕсем тĕлĕшĕнчен питех те сыхланоллă, чăтăмлă пулмалла, уступкăсем тумалла. Ĕçе капитал пусмăрĕнчен хăтарас тĕлĕшпе ĕçĕн тĕп интересĕсене пырса тивекен япаласем тĕлĕшĕнчен эпир уступкăсем тумалла мар, килĕшмелле мар. Государство чиккисене халĕ, вăхăтлăха мĕнле палăртмалли ыйту,—мĕншĕн тесен эпир государство чиккисене пĕтĕмĕшпех пĕтерме тăрăшатпăр—вăл тĕп, пысăк ыйту мар, иккĕмĕш вырăнта тăракан ыйту. Çав ыйтăва кайран та татса пама юрать, татса памалла та, мĕншĕн тесен хресченсен тата вак хуçасен йышлă массисем хушшинче нациллĕ шанманлăх час-часах питех те çирĕп тытăнса тăрать, васкасан вара ăна вăйлатма, урăхла каласан, тулли те татăклă пĕрлĕх ĕçне пăсма пулать.

Российăри рабочисемпе хресченсен революцийĕн 1917-мĕш çулхи Октябрьти—Ноябрьти революцийĕн опычĕ, унăн пĕтĕм тĕнчери тата вырăс капиталисчĕсем тапăнса килнине хирĕç икĕ çул хушши çĕнтерӳллĕн пынă кĕрешӳ опычĕ, капиталистсем поляк, латыш, эст, финн хресченĕсемпе вак хуçасен великороссене нациллĕ шанманлăх кăмăлĕпе вăхăтлăха усă курма пултарнине, çав шанманлăх никĕсĕ çинче вĕсемпе пирĕн хушăра вăхăтлăха уйрăлу туса хума пултарнине куçкĕретĕнех уççăн кăтартса пачĕ. Опыт çакна кăтартса пачĕ: çав шанманлăх питех те майĕпен пĕтсе пырать, вара, великороссем, нумай вăхăт хушши пусмăрлакан наци пулса тăнăскерсем мĕн чухлĕ ытларах сыхланоллă тата чăтăмлă пулаççĕ, çав шанманлăх çавăн чухлĕ часрах пĕтет. Шăпах ĕнтĕ Польша, Латвия, Литва, Эстляндия, Финляндия государствисен никама пăхăнманлăхне йышăнса эпир майпен пулсан та, кӳршĕри пĕчĕк государствăсен чи кая юлнă, капиталистсем пуринчен ытла улталанă тата пусмăрланă ĕççынни массисен шанчăкне кĕрешсе илетпĕр. Шăпах ĕнтĕ çавăн пек майпа эпир вĕсене „хăйсен“ наци капиталисчĕсен влиянинчен пуринчен тĕрĕсрех уйăрса илсе, вĕсене пире

пĕтĕмĕшпех шанса тăрасси патне, малашне пулас пĕрлĕхлĕ, пĕтĕм тĕнчери Советлă республика патне пуринчен тĕрĕс илсе пыратпăр.

Украинăна халлĕхе Деникинран пĕтĕмĕшпех хăтарман чухне, унăн правительстви, Советсен Пĕтĕм Украинăри съезчĕ пуличчен, Пĕтĕм Украинăри Революцилле Комитет, Пĕтĕм Украинăри Ревком пулса юлать. Çав Ревкомра, Украинăри коммунистбольшевиксемпе пĕрле Украинăри коммунистсем-боротьбистсем[5] ĕçлеççĕ. Боротьбистсем большевиксенчен пуринчен ытла Украинăна пĕтĕмĕшпех никама пăхăнмасăр пурăнакан тума тăрăшнипе уйрăлса тăраççĕ. Большевиксем *çавăн пирки* килĕшмесĕр тăмаççĕ тата уйрăлмаççĕ, пурте кар тăрса пролетарилле ĕçлес тĕлĕшпе *çавăнта* нимĕнле чăрмав та курмаççĕ. Капитал пусмăрне хирĕç, пролетариат диктатуришĕн кĕрешес ĕçре пĕрлĕх пултăр, наци чиккисем пирки, государствăсем хушшинче федеративлă е урăхла çыхăну пулас пирки коммунистсен уйрăлмалла мар. Большевиксем хушшинче Украинăн пĕтĕмĕшпех никама пăхăнманлăхĕ майлă тăракансем пур, сахал-и е ытларах-и федеративлă çыхăну майлисем пур, Украинăпа Российйăна пĕтĕмĕшпех пĕрлештерессишĕн тăракансем те пур.

Çак ыйтусем пирки уйрăлма юрамасть. Çав ыйтусене Советсен Пĕтĕм Украинăри съезчĕ татса парĕ.

Великорусс коммунисчĕ Украинăна Российйăпа пĕрлештерессишĕн тăрать пулсан, ун çине украинецсем вăл çавăн пек политикăна пролетарисем капитала хирĕç кĕрешес ĕçре пĕрлĕх тăвас тĕлĕшпе мар, великоруссен национализмĕн, империализмăн кивĕ йăлисен шухăшĕ тăрăх хӳтĕлет тесе çăмăллăнах шанчăксăр пăхма пултараççĕ. Çавăн пек шанманлăх чăн-чăнах пулма пултарать, паллă таран пурпĕрех пулмалла тата законлă та, мĕншĕн тесен великоруссем, помещиксемпе капиталистсен пусмăрĕ айĕнче пурăнса великоруссен шовинизмĕн намăссăр та ирсĕр йăлисене ĕмĕрсем тăршшĕ хăнăхса пынă.

Украина коммунисчĕ Украинăна пĕтĕмĕшпех никама пăхăнман государство тăвассишĕн тăрать пулсан, çавăн пек политикăна Украина рабочиййĕсемпе хресченĕсен капитал пусмăрне хирĕç пыракан кĕрешĕвĕнче вăхăтлăх интересĕсем енчен илсе мар, вак-буржуаллă, вак-хуçалăхлă нациллĕ йăласене пула хӳтĕлет тесе шанмасăр пăхма пулать. Мĕншĕн тесен опыт пире çĕр хут та çакна кăтартса пачĕ: тĕрлĕ çĕршывсенчи вакбуржуаллă „социалистсем“ — поляксен, латышсен, литовецсен социалисчĕсем, грузинсен меньшевикĕсем, эсерĕсем тата ыттисем те имĕш — пĕртен-пĕр ĕмĕтпе: революцилле рабочисене хирĕç „хăйсен“ наци буржуазиййĕпе килĕшӳ тăвас политикине ултавпа сĕтĕрсе кĕртес ĕмĕтпе пролетариат майлă пек пулса сăрланнă. Çакна эпир Российйăра 1917 çулхи февраль—октябрь уйăхĕсенче керенщина примерĕнче куртăмăр, çавна эпир мĕнпур тата пур тĕрлĕ çĕршывсенче куртăмăр, куратпăр та.

Великорусс тата Украина коммунисчĕсен хушшинчи пĕрпĕрне шанманлăх, çапла майпа вара, çăмăллăнах пулать. Çав

шанманлăха хирĕç мĕнле кĕрешмелле-ха? Ăна мĕнле çĕнтермелле тата пĕр-пĕрне шанассине мĕнле кĕрешсе илмелле?

Çавна тумалли чи лайăх май—вăл пролетариат диктатурине тата Совет влаçне пĕтĕм çĕршывсенчи помещиксемпе капиталистсене хирĕç, вĕсем хăйсен хăватлă влаçне каялла таврас тесе хăтланнине хирĕç кĕрешес ĕçре пĕрле тăрăшса хӳтĕлесси пулать. Çавăн пек пĕрле кĕрешни практикăра çакна уççăнах кăтартса парĕ: государствăн никама пăхăнманлăхĕ çинчен е государство чиккисем çинчен тăракан ыйтăва мĕнле татса парас пулсан та великоруссемпе Украина рабочийĕсен вăрçăллă тата хуçалăхлă тачă союз обязательно кирлĕ, мĕншĕн тесен апла тумасан «Антанта», «Согласие» урăхла каласан чи пуян капиталистла çĕршывсен: Англия, Франция, Америка, Япония, Италия капиталисчĕсен союзĕ пире пĕрерĕн-пĕрерĕн пăвса пăрахĕ. Эпир Колчакпа Деникина хирĕç кĕрешнĕ пример,—çав капиталистсем вĕсене укçа тата хĕçпăшалсем парса пулăшрĕç,—çавăн пек хăрушлăха уççăн кăтартса пачĕ.

Кам великорусс тата Украина рабочийĕсемпе хресченĕсен пĕрлĕхне тата чи тачă союзне пăсать, вăл Колчаксене, Деникинсене, капиталистсене, пĕтĕм çĕршывсенчи çăткăнсене пулăшать.

Çавăнпа пирĕн, великорусс коммунисчĕсен, хамăр хушăра великорусс шовинизмĕн чи пĕчĕк палăрăмне те пит хаяррăн сивлемелле, мĕншĕн тесен çак палăрăмсем пĕтĕмĕшпе илсен коммунизма измена туни пулса, пире Украинăри юлташсенчен уйăрса, çапла вара Деникинпа деникинщинăна пулăшса, питех те пысăк сиен кӳреççĕ.

Çавăнпа та пирĕн, великорусс коммунисчĕсен, Украина коммунисчĕсемпе—большевиксемпе тата боротьбистсемпе разногласисем пулсан, çав разногласисем Украинăн государство енĕпе никама пăхăнманлăх тĕлĕшпе, унăн Российăпа союз мĕнле формăпа пулмалли тĕлĕшпе пырать пулсан, пĕтĕмĕшпе илсен наци ыйтуне пырса тивеççĕ пулсан, уступкăсем тумалла. Эпир пурте великорусс коммунисчĕсем те, Украина коммунисчĕсем те тата кирек мĕнле урăх наци коммунисчĕсем те, пролетариат кĕрешĕвĕн никĕсре тăракан, тĕп, пур нацисемшĕн те пĕр пек ыйтăвĕсем тĕлĕшĕнчен, пролетариат диктатурин ыйтăвĕсем тĕлĕшĕнчен буржуазипе килĕшӳ тума юраман, пире Деникинран хӳтĕлекен вăйсене сапалантарма юраман тĕлĕшрен уступка тумалла мар тата килĕшмелле мар.

Деникина çĕнтермелле, ăна пĕтермелле, çавнашкал çĕнĕрен тапăнса килме май памалла мар тумалла—великоруссемпе Украина рабочийĕсемпе хресченĕсен тĕп интересĕ çавăн пек ĕнтĕ. Кĕрешӳ вăрах та йывăр, мĕншĕн тесен пĕтĕм тĕнчери капиталистсем Деникина пулăшаççĕ тата тĕрлĕ Деникинсене пулăшĕç те.

Çав вăрах тата йывăр кĕрешӳре, великорусс тата Украина рабочийĕсем питех те тачă союзра пулса пымалла, мĕншĕн тесен эпир пĕчченшерĕн çĕнтерейменĕпĕр пулас. Украинăпа Россия чиккисем мĕнле пулсан та, вĕсен государствăри çыхăну формисем мĕнле пулсан та, вăл пит кирлех те мар, çав тĕлĕшпе уступкăсем тума юрать тата тумалла та, çав тĕлĕшпе пĕрне те,

теприне те, виççĕмĕшне те тĕрĕслесе пăхма юрать,—унпа рабочисемпе хресченсен ĕçĕ, капитализма çĕнтерес ĕç пĕтсе лармĕ.

Акă ĕнтĕ эпир хамăр хушăмăрти питех те тачă союза, Деникина хирĕçле союза, пирĕн тата пĕтĕм тĕнчери çĕршывсенчи капиталистсемпе кулаксене хирĕç пыракан союза упраса хăвармасан, ун чухне ĕçлев ĕçĕ, паллах, нумай çуллăха пĕтсе ларĕ, вара Советлă Украинăна та Советлă Российйăна та капиталистсем путарма тата пăвса пăрахма *пултарĕç*.

Пĕтĕм тĕнчери буржуази тата тĕрлĕрен вак буржуаллă партисем, «соглашателле» партисем, рабочисене хирĕç буржуазипе союз тума ирĕк паракансем, тĕрлĕ национальноçсен рабочийĕсене уйăрма, шанманлăх шухăш-кăмăлне чĕртме, рабочисен пĕтĕм тĕнчери çирĕп союзне тата рабочисен пĕтĕм тĕнчери тăванлăхне пăсма пур майсемпе те тăрăшнă. Буржуази çакна тума пултарсан вара, рабочисен ĕçĕ пĕтсе ларать. Российйăпа Украина коммунисчĕсем пĕрле чăтăмлă, хастарлă тата çине тăрсах ĕçлесе кирек мĕнле буржуази те националистла хăтланнисене, националистла тĕрлĕ тĕшмĕшлĕхсене çĕнтерме пултарччăр, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене тĕрлĕ наци рабочийĕсемпе хресченĕсен Совет влаçĕшĕн, помещиксемпе капиталистсен пусмăрне пĕтерессишĕн, пĕтĕм тĕнчери Федеративлă Советлă Республикăшăн пыракан кĕрешĕвĕнче чăн-чăн çирĕп союз примерне кăтартчăр ĕнтĕ.

28. XII. 1919.

*«Правда» 3 №, 1920 ç. январĕн 4-мĕшĕ.*

---

## ПРЕСНЕНСКИ РАЙОНРА РАБОЧИСЕМПЕ КРАСНОАРМЕЕЦСЕН БЕСПАРТИЙНĂЙ КОНФЕРЕНЦИЙĔНЧЕ КАЛАНĂ САМАХ

*1920 ç. январĕн 26-мĕшĕ*

ХАÇАТРИ ОТЧЕТ.

Хĕрлĕ çарăн юлашки çĕнтерĕвĕсене пула пирĕн пĕтĕм тĕнчери положени питех те вăйлăн улшăнчĕ, çавăнпа та пирĕн интернациональнăй задачăсене татса парас ĕçре çĕнĕ çулсем шырамалла.

Совет влаçĕ пулса тăрсанах, пĕтĕм тĕнчери капиталăн мĕнпур вăйĕсем ун çине тăрăнчĕç, çав вăйсем ĕнтĕ Совет влаçĕн вăйĕсенчен нумай ытларах, çавăнпа та çирĕп мар çынсем Совет влаçĕ çĕнтерес пирки иккĕленме пултарнă. Анчах вăл çапах та çĕнтерчĕ. Малалла та çĕнтерес тесен, Совет влаçĕ мĕнле майпа çĕнтерни çинчен шухăшласа ăнланни вырăнлă.

Ленин капитал вăйĕсене çĕнтерни мĕнле пысăк пулнине, Колчака çĕмĕрсе аркатни мĕнле пысăк пулнине, союзниксене блокада тăвассине пăрахма тата Российйăна пăвса пăрахас плана

пăрахăç тума хушнă çĕнтерӳ мĕнле пысăк пулнине кăтартса парать.

Эпир чылай вăйлăрах тăшмана çĕнтерни, тĕнчери буржуазине хирĕç тухса эпир шанчăксăр ĕç тăватпăр, тесе калакансем мар, большевиксем тĕрĕс тунине кăтартса парать. Блокада тăвассине пăрахни пире хăшпĕр çăмăллăх парать пулсан та, Хĕвеланăçри буржуази çапах та пире хирĕç татах кĕрешме хăтланса пăхать пулĕ-ха. Халех ĕнтĕ, блокада тăвассине пăрахса, вăл пирĕн çине Польша белогвардеецĕсене вĕскĕртет, çавăнпа та тепĕр хут сыхă пулмалла, çĕнĕрен тапăнса килессе хатĕр тăмалла, икĕ çул хушшинчи кĕрешӳ урокĕсемпе усă курмалла, эпир халиччен çĕнтернĕ меслетсемпе усă курмалла.

Меньшевиксем час-часах: Хĕвеланăçри пролетарисем пире пулăшмаççĕ, вĕсем пире пăвма параççĕ, вĕсем Венгрине пăвма пачĕç, тесе калаççĕ. Тĕрĕс пек те туйăнать. Мĕншĕн-ха вара Антанта войскисем Çурçĕртен тата Одессăран кайрĕç? Мĕншĕн тесен, вĕсен салтакĕсем, рабочисем хăйсем, Совет Российĕне мĕн чухлĕ шаларах кĕреççĕ, пире хирĕç çавăн чухлĕ ытларах кĕрешесшĕн мар. Çапла вара, пирĕн çĕнтерӳсен сăлтавĕсенчен пĕри — вăл пире хирĕç пысăк вăйпа çеç кĕрешме май пурри, пысăк çара вара рабочисемпе хресченсенчен çеç пухма пулать, анчах Хĕвеланăçĕнчи çав рабочисем пире хирĕç çапăçасшăн мар. Çапла ĕнтĕ, эпир вăйлă пулнă пирки мар, Антанта çĕршывĕсенчи ĕççыннисем пире хăйсен правительствинчен çывăхрах пулнă пирки çĕнтертĕмĕр.

Çĕнтерĕвĕн иккĕмĕш сăлтавĕ—«14 государствăн похочĕ» ăнăçсăр пулни. Ку вăл çакна пĕлтерет: пĕчĕкçĕ государствăсем большевиксене хирĕç кĕрешмешкĕн пĕрлешме пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсем çĕнтерсен тата пĕр вăхăтрах деникинщина çĕнтерсен Вырăс империйĕ, вак халăхсене пурăнма çĕнĕрен ирĕк паман империйе ура çине тăрассинчен хăраççĕ. Эпир ĕнтĕ Эстонипе мир тăватпăр, вăл блокада тăвассине формально пăрахни ултав кăна пулсан та, блокадăна фактически çĕмĕрни пулса тăрать.

Антантăн[9] пысăк держависем Совет влаçне хирĕç кĕрешме пĕрлешеймеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр-пĕринпе питех те харкашса пурăнаççĕ. Германия Франције Версальти вăрă-хурахла миршĕн тавăрас тесе шутлать, Франци Польшăна пирĕн çине тĕртет, Англия вара Эстонине мир тума ирĕк парать, уншăн çав Эстония Англипе суту-илӳ çеç тутăр. Çĕпĕрте пирĕннинчен нумай вăйлăрах çар тытса тăракан Япония пире хирĕç кĕрешеймест, вăл Америка тапăнасран хăрать, мĕншĕн тесен вăл Америкăпа империализмăн Китайри колониллĕ интересĕсемшĕн харкашать. Çапла вара, пирĕн çĕнтерĕвĕн иккĕмĕш сăлтавĕ çакă: рабочисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ, буржуасем вара, вĕсем буржуйсем пулса юлнă халлĕн, усламăн ытлашши татăкĕшĕн харкашмасăр тата пĕр-пĕринпе вăрçмасăр пултараймаççĕ.

Çапла вара эпир граждан вăрçин пирвайхи икĕ çулĕнчен çĕнтерекенсем пулса тухрăмăр, çав çулсем питех те йывăр çулсем пулчĕç, мĕншĕн тесен пире империализмлă вăрçă юхăнтарнă,

пиртен тырăпа çĕркăмрăкне татса илнĕ пулнă. Анчах халĕ пирĕн тырă тата хутмаллисем ытлашшипех пур. Çĕпĕрте пĕр разверсткăпа çеç 21 миллион пăт. Чăнах та, эпир ăна хăвăртах турттарса кăларма пултараймастпăр, анчах транспорта пĕтĕм Европăра çĕмĕрсе аркатнă, пирĕн вара ăна белогвардеецсем ăнлансах çĕмĕрсе аркатрĕç. Вĕсем Днепр урлă каçмалли кĕперсене, Киев кĕперĕсĕр пуçне, пурне те сирпĕттерсе çĕмĕрчĕç, çавăн пирки вăрçă ĕçĕ те тата тырă турттарасси те чăрансa тăрать. Пирĕн Гурьеври нефть пур, ăна эпир Каспий тинĕс хĕррисем ăшăнса ирĕлсен турттарса килĕпĕр. Çавсене эпир пурне те шута илсе, ăна турттарса килме хатĕрленетпĕр. Транспорта ура çине тăратас тĕлĕшпе эпир ĕç çарĕсем[10] тăватпăр, çавăн пек çарсенчен пĕриййĕ Александров-Гай—Гурьев чугун çулне тума тытăннă та ĕнтĕ, вăл çул нефть турттарма кирлĕ. Эпир çара демобилизацилеме пултараймастпăр, мĕншĕн тесен пирĕн Польша пек тăшмансем пур-ха. Демобилизаци тума транспорт арканса саланни те кансĕрлет. Çавăнпа та эпир çара транспорта ура çине тăратас ĕçе ярăпăр.

Хăйсен листокĕсенче пуринче те белогвардеецсем çапла çыраççĕ: большевиксен агитаци ĕçĕ питĕ аван, вĕсем агитаци ĕçне укçа шеллемеççĕ, теççĕ. Анчах халăх тĕрлĕ агитацине—белогвардеецсен агитацине те тата учредиловецсен агитацине те илтнĕ вĕт. Вăл халăх большевиксем хыççăн, вĕсен агитацийĕ лайăхрах пулнă пирки кайнă тесе шухăшлани, кулăшла. Çук, ĕç большевиксен агитацийĕ тĕрĕс пулнинче.

Деникинпа Колчакăн ĕçĕсем хăйсене хирĕç агитаци тунă, Совет влаçĕшĕн агитаци тунă. Çавăнпа çĕнтертĕмĕр те эпир. Эпир патшана темиçе сехет хушшинчех çăмăллăн сирпĕтсе антартăмăр. Помещиксемпе капиталистсене эпир темиçе эрне хушшинче сирпĕтсе антартăмăр. Ку ĕнтĕ çур ĕç кăна-ха. Çĕнĕлле ĕçлеме вĕренмелле. Ĕлĕк ĕçе эксплуататор организациленĕ, ĕлĕк ĕçе выçлăх пĕрлештернĕ, халĕ рабочисемпе хресченсен ăстăнне, йывăрлăхран тухас тесен ĕçлеме кирли çинчен ăнланнипе, ĕç пĕрлештермелле.

Анчах çав ăнланулăх пурин те мар пур-ха. Эпир çав ăнланулăхшăн çĕнĕ юнсăр вăрçă пуçлатпăр та ĕнтĕ. Халиччен пур революцисен те капиталистсемпе эксплуататорсен пĕчĕкçĕ ушкăнĕсемшĕн усăллă пулса вĕçленнĕ. Вăл восстани тăвакан ĕççыннисен пĕрлĕхе ăнланса илни çук пирки пулнă. Кашни хăй çинчен çеç шухăшланă, пурте пĕр-пĕринпе кĕрешнĕ, вара мошенниксемпе спекулянтсем çиеле тухнă.

Акă çакăн пек хресчен пур: вăл тырă тытса тăрать, унпа юнашарах выçă пурăнакан çын пур, вăл çав тырра рабочисен влаçне кивçен парас вырăнне, тырра выçă çынна 1000 тенке сутни усăллăрах тесе шутлать. Кунта такам: «Тĕрĕс!» тесе те калать. Акă Деникин та, Колчак та ирĕклĕ суту-илў туса пăхрĕç, анчах чи лайăх, ăнлануллă рабочисемпе хресченсем вăл мĕн иккенне ĕçре курчĕç те вĕсенчен пăрăнчĕç.

Ĕлĕк калатчĕç: «Кашни хăйĕншĕн, пĕр турă пуриншĕн те», тетчĕç, вара çавăнтан мĕн чухлĕ хуйхă-суйхă пулчĕ.

Эпир калăпăр: «Кашни пуриншĕн те, турăсăр, вара эпир мĕнле те пулин пурăнăпăр», тейĕпĕр. Эпир ĕнтĕ тырра государствăна кивçенле паракан рабочисемпе хресченсен тăванла союзĕшĕн кĕрешĕпĕр, мĕншĕн тесен ун вырăнне халлĕхе нимĕн те пама пултараймастпăр, сăрланă хут—вăл укçа мар. Пирĕн халиччен тăшман хамăра пăвса ан пăрахтăр тесе çеç кĕрешмелле пулнă, халĕ ĕнтĕ, нумай вăйлăрах тăшмана çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, пирĕн алăсем ирĕклĕ, эпир çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçе тытăнмалла, чи малтан транспорта ура çине тăратмалла.

Пирĕн кăнтăрта Хĕрлĕ çар кĕрешсе илнĕ мастерскойсем пур, вĕсем тырăллă вырăнсене çывăх, çав мастерскойсене, выçă çынсем ĕçленĕ пек мар, виçĕ смена хушши, пĕтĕмĕшпех ĕçе ярар.

Транспорта ура çине тăратас ĕç çине пирĕн коммунистла агитацийĕн пĕтĕм вăйне хумалла, вăл пулăшнипе эпир тулашри тăшмана çĕнтертĕмĕр.

Ĕлĕк эпир тулашри суту-илĕве «питех те лайăх» тăваттăмăр, 700 миллион пăт турттарса кăлараттăмăр. Çав суту-илўпе вырăс тата ютçĕршыв миллионерĕсем пуятчĕç, вырăс рабочийĕсемпе хресченĕсем вара выçă ларатчĕç. Халĕ ĕнтĕ эпир пурне те çăлăнмалли пĕртен-пĕр май: «пурте пуриншĕн те!» тенинче пулнине ĕнентермелле, халĕ пирĕн хăть мĕнле пулсан та, пĕчĕкçĕ ушкăна çеç тырă паракан, ыттисене выçă хăваракан ирĕклĕ суту-илўпе спекуляцине пĕтермелле. Халĕ ĕнтĕ эпир хресченсене—тырра рабочипе ремесленнике кивçен пама ĕнентермелле,—вара вĕсем пире ĕненĕç те, мĕншĕн тесен ирĕклĕ спекуляцийĕн ырлăхĕсене Деникин кăтартса пачĕ—рабочисемпе ремесленниксем вара çав кивçене сăрланă хутсемпе мар, япаласем тата мануфактура парса тўлĕç.

Эпир аслă вăрçă пуçларăмăр, ăна эпир часах пĕтерейменĕпĕр: вăл—ĕç çарĕсен выçлăха, сивве тата сыпняка хирĕç кĕрешĕвĕ,—çутта тухнă, çутă, тутă тата сывлăхлă Российăшăн пыракан кĕрешĕвĕ, анчах эпир çав вăрçа белогвардеецсене хирĕç пынă вăрçăра пĕтернĕ пекех татăклă çĕнтерў туса пĕтерĕпĕр...

Эстонипе мир тунă услови пирки пынă ыйту çине Ленин çапла ответ пачĕ: эпир нумай уступкăсем турăмăр, вĕсенчен чи пысăкки —вырăссем тата эстонецсем хутăш пурăнакан тавлашуллă территорине пани пулать. Анчах эпир пĕр татăк çĕршĕн рабочисемпе красноармеецсен юнне тăкасшăн мар, мĕншĕн тесен уступкăна ĕмĕрлĕхе тумастпăр: Эстония керенщина тапхăрне пурăнса иртterет, рабочисем хăйсен учредиловец çулпуçĕсен, профессиллĕ союзсене çаратса пĕтернĕ тата 20 коммуниста вĕлернĕскерсен, ирсĕрлĕхсене пĕлсе çитме тытăнаççĕ, вĕсем çав влаçа часах сирпĕтсе антарса Советлă Эстония туса хурĕç, вăл пирĕнпе çĕнĕ мир тăвĕ.

*„Правда“ 18 №, 1920 ç. январĕн 28-мĕшĕ.*

# КĔЛЕНЧЕ-ФАРФОР ПРОИЗВОДСТВИНЧЕ ĔÇЛЕКЕН РАБОЧИСЕН ПĔТĔМ РОССИЙĂРИ СЪЕЗДĔНЧЕ КАЛАНĂ CĂMAX

*1920 ç. апрелĕн 29-мĕшĕ*

Ĕнерхи кун пире икĕ çĕнĕ хыпар илсе килчĕ: вĕсенчен пĕрремĕшĕ питех те хурланмалла хыпар—вăл Польша правительствин пуçлăхĕ Пильсудский чĕнсе калани. Çав чĕнсе каланин текстне эпĕ курман-ха, ун çинчен мана телефон тăрăх пĕлтерчĕç, анчах пĕри çеç иккĕленмелле мар: вăл Польша Украинăна хирĕç вăрçă пуçласси çинчен пĕлтернипе пĕрех пулать. Паллах, Франция империалисчĕсен влиянийĕ Польшăн правительстви хушшинче вăйлăрах пулчĕ пулмалла. Пирĕнпе мир тăвас пирки пынă калаçусем тавра хăйĕн чееленсе хăтланас юлашки политикине пăрахса, Польша правительстви вăрçă ĕçне сарлакарах фронтпа пуçласа яма шутларĕ. Польша ĕнтĕ Житомира илчĕ, Киев çине пырать. Ку пире пролетариатăн интересĕсене татăклăнах тата васкасах хӳтĕлеме хушать. Эпир çав интерессене хӳтĕлеме пултарас пирки иккĕленместпĕр, Антанта империалисчĕсем Совет Российĕне пăвса пăрахас тесе çĕнĕрен хăтланни Деникинпа Колчак авантюрисем путса ларнă пекех путса ларасси пирки эпир иккĕленместпĕр. Паллах, Польша вăрçă пулăшуне пĕтĕмĕшпех Францирен, Англирен тата пĕтĕм Антантăран илет пулмалла. Ку тĕлĕшпе çакă уйрăмăнах паллă: пирĕнпе Крым пирки пынă калаçусен юлашки тапхăрĕнче Англия правительстви хăйĕн малтанхи ырă отношенине пайтах урăхлатрĕ. Деникинăн тинĕс хĕррине хĕссе хунă боецĕсем тĕлĕшĕнчен ырă кăмăллă пулăр тесе Англия пире сĕннине хирĕç, эпир çапла ответ патăмăр: Антанта хăй енчен Венгрин çĕнтернĕ коммунисчĕсене Совет Российĕне килме ирĕк парса ырă кăмăллăх кăтартсан, эпир Крым белогвардеецĕсене кунçул пама хатĕр, терĕмĕр. Пире Крымри çав белогвардеецсен юнĕ кирлĕ мар, пирĕн тавăрас кăмăл çук. Анчах Англия правительствинчен эпир хамăрăн нота пирки ответ илмерĕмĕр, Польша пире хирĕç тухнă май, вăл çав ответа пама васкамасть, курăнать. Анчах Англия рабочийĕсем хушшинче чи оппортунистла шухăшлисем хушшинче те, интервенци майлисем тупăнмĕç тесе шанатпăр эпир.

Пирĕн çакăн пек пĕлтернисем пур: Польшăра та ĕнтĕ, Польшăра коммунистсене хĕсĕрленĕ социалистла парти хăйĕн хаçатĕнче çав мирлĕ калаçусене Борисовра туса пымалла тесе Польша енчен Совет Российĕ умне ультиматумла требованилартса мирлĕ калаçусене пăсма юрамасть тет. Çав хаçат Польша правительстви çапла хăтланнине преступлени тесе шутлать. Поляксем вăрçма чарăнмасăрах, пире мир çинчен Борисовра калаçу тума сĕнчĕç, çав хушăрах калаçусене шăпах ĕнтĕ çав пунктра иртterни калаçусем пынă вăхăтра пире малалла вăрçма май паман пулĕччĕ, çав вăхăтрах Польшăна çав тĕлĕшпе тулли ирĕклĕх панă пулĕччĕ. Паллах эпир мирлĕ калаçусене çав условисенче туса пыма пултараймарăмăр, çавăнпа та, Поль-

шăпа килĕшсе, çав калаçусен вырăнне Париже, Ревеле, Варшавăна, Мускава, е мĕнле те пулсан урăх хулана куçарма сĕнтĕмĕр. Çав сĕнĕве хирĕç панă ответ—Польша войскисем пĕтĕм фронтпа сарлака наступлени туни пулса тăчĕ. Польша правительстви çав наступлениллĕ вăрçа хăйсен рабочийĕсен ирĕкне хирĕç пуçланă пирки пирĕн нимĕнле иккĕленӳ те çук. Акă мĕншĕн ĕнтĕ эпир çав çĕнĕ авантюра çине питех те лăпкăн пăхатпăр; унтан çĕнтерсе тухассине пĕлетпĕр эпир, анчах кирек мĕнле вăрçă та пит пысăк йывăрлăхсемпе çыхăнса тăнине пĕлетĕр эсир, юлташсем, çав йывăрлăхсене çĕнтерес тĕлĕшпе эпир рабочисен массисенчен пĕрре çеç мар пулăшу ыйтнă. Польшăна хирĕç вăрçма пире ирĕксĕрлерĕç, Польшăн никама пăхăнманлăхне хирĕç пирĕн, Литвапа Белоруссийĕн никама пăхăнманлăхĕ тĕлĕшĕнчи пекех, нимĕнле шухăшсем те çук, анчах эпир уступкăсем тунине пăхмасăр пире çапах та вăрçа вăйпах кĕртсе яраççĕ, апла пулсан вара Польша империалисчĕсенчен хамăра та, Украинăна та хӳтĕлес тесе эпир пĕр çын пек çĕкленмелле. Çавна валли эпир хамăр ĕçсене хăшпĕр таран çĕнĕрен урăхлатмалла. Мирлĕ строительствăна май пур таран хăвăртрах пуçлама тата май пур таран пысăкрах сарса яма пирĕн кăмăл мĕнле вăйлă пулсан та, пире вăйпах вăрçа кĕртнĕ пулсан, хамăршăн ытларах ăнăçлă тата хăвăрт результатсем илес тесе, пирĕн пурне те çав вăрçăн результачĕсене пăхăнтармалла. Антанта хĕтĕртекен Польша пире хирĕç мĕншĕн вăрçă пуçлани çинчен пирĕн пĕтĕм рабочисемпе хресченсене ăнлантарса памалла. Çавна пире Германия пролетариачĕнчен уйăрса тăракан барьера ӳстерес, тĕпсĕр çырана тарăнлатас тĕлĕшпе тунине ăнлантарса памалла пирĕн.

Тепĕр енчен, эпир ĕнерех ĕнтĕ Бакуран хыпар илтĕмĕр, вăл пире Совет Российĕн ĕçĕсем лайăх еннелле улшăннине кăтартса парать; эпир пĕлетпĕр, пирĕн промышленность хутмаллисĕр тăрать, акă ĕнтĕ эпир Бакури пролетариат влаçа хăйĕн аллине илни тата Азербайджан правительствине сирпĕтсе антарни çинчен хыпар илтĕмĕр. Çакă вăл халĕ пирĕн хамăрăн пĕтĕм промышленноçа чĕртсе яма пултаракан экономикăллă никĕс пуррине пĕлтерет. Бакура миллион пăт нефть пур, ăна юлашки вăхăтченех ниçта та ăсатма вырăн пулман, çавăн пирки нефтепромышленник Нобель те çав нефтăна Совет Российине турттарса кăларас тĕлĕшпе пирĕнпе калаçма хăтланса пăхнă. Çапла вара пирĕн транспортпа промышленность Бакури нефть промыслисенчен çителĕклех пулăшу илĕç.

Продовольстви халăх комиссарĕ Цюрупа юлташ мана паян Кубань облаçĕнче тата Кавказра тырă запасĕсем питех те нумай пурри çинчен пĕлтерчĕ, ăна эпир кунта илме ĕмĕтленме пултаратпăр. Апла пулсан, пирĕн промышленность валли хутмалли тата çынсем валли çăкăр пулĕ. Транспорта ура çине тăратас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе эпир тырă тата нефть илме пултаратпăр, вĕсем рабочисемпе хресченсем пĕр-пĕринпе çыхăнса пурăнас тĕлĕшпе экономикăллă тĕрĕс никĕс пулса тăрĕç. Эпир калатпăр, хресчен хăйĕн ытлашши тыррине рабочисене памалла, тетпĕр, мĕншĕн тесен çав ытлашши тырра хальхи вă-

хӑтӑн условисенче сутни преступлени пулнӑ пулӗччӗ, ҫавӑнпа та, эпир хамӑр промышленноҫа ура ҫине тӑратсанах, хресченсене хулари хатӗр фабрикатсене парас тӗлӗшпе пӗтӗм вӑя хурса тӑрӑшӑпӑр.

Сирӗн умӑрта, халӗ мана вӑхӑт май панӑ таран, республикӑн хальхи самантри пурнӑҫӗ ҫинчен темиҫе сӑмахпа каласа парса, эпӗ шанчӑклӑнах ҫапла каласа пӗтеретӗп: профессиллӗ союзсене организациленнӗ тӑватӑ миллион рабочисем,—вӗсем урлӑ эпир, хресченсен йышлӑ сийӗсем ҫине таянса совет политикине туса пытӑмӑр,—хӑйсен профессиллӗ пурнӑҫӗн ансӑр рамкине хупӑнса лармасӑр ӗлӗкхин пекех, хальхи самантра та Польшӑпа пирӗн хушшинчи отношенисен ҫӗнӗ тапхӑрӗнче, пирӗншӗн Кубань тырри патне те, Бакури нефть патне те ҫул уҫӑлнӑ чухне, пӗтӗм пролетариат ӗҫне малалла та ӑнаҫлӑн туса пырас тата аталантарас тӗлӗшпе пире пур майсемпе те пулӑшӗҫ. Рабочисен ӑнланулӑхӗ, вӗсем пӗрлешни, профсоюзсем пӗтӗмӗшпех таччӑн пӗтӗҫни кӑна питех те пысӑк вӑй пулнине пӗлетпӗр эпир, ҫав вӑй пирӗн Хӗрлӗ ҫара, хресченсен ретне ӑнланулӑх лайӑх кӗртекен ҫара ҫӗнтерӳсем кӳчӗ, вӑл влаҫа рабочисен аллинче тытса хӑварас пулсан хресченсен хӑйсен ретӗнчен харам пырсене кӑларса сирпӗтмеллине вӗрентрӗ. Ҫав ӑнланулӑх, пӗрлешӳлӗх тата профсоюзсен тулли пӗтӗҫӳлӗхӗ пире халӗ те, Польшӑпа вӑрҫнӑ чухне тата промышленноҫа ура ҫине тӑратас ӗҫре кирлӗ. Халӗ пирӗн пур производствӑсенче те кирлӗ дисциплинӑна тытса пымалла тата вӑйлатмалла. Ӑнланулла рабочисем ҫакна пӗлеҫҫӗ: эсир, рабочисем, ҫав дисциплинӑна халичченех тытса пыман пулсан, пире Венгрия кунҫулӗ кӗтнӗ пулӗччӗ. Юлташсем ҫавна асра тытса, хӑйсем патӗнче, вырӑнсенче пурне те пӗр тӗп задачӑна: кашни—хӑйшӗн, пӗр турӑ кӑна пуриншӗн те текен ылханлӑ лозунга пӗтерес, май пур таран часрах пӗтерес задачӑна пӗтӗмӗшпех пӑхӑнтармалла туса хуччӑр. Пролетариллӗ ӗҫ дисциплинине питех те вӑйлӑн ҫирӗплетмелле, ун чухне вара пире никам та ҫӗнтереймӗ. Совет республикине ывӑтса пӑрахма ҫуккине, тата эпир пулӑшу илес ӗҫре хамӑр енне тӗнчери ытти пур республикӑсене те ҫавӑрма пултарнине кӑтартса парӑпӑр эпир.

*«Правда», 92 №, апрелӗн 30-мӗшӗ, 1920ҫ.*

---

# В. Ц. И. К., РАБОЧИСЕН, ХРЕСЧЕНСЕН ТАТА КРАСНОАРМЕЕЦСЕН ДЕПУТАЧӖСЕН МУСКАВ СОВЕЧӖН, ПРОФЕССИЛЛӖ СОЮЗСЕН ТАТА ФАБРИК-ЗАВОД КОМИТЕЧӖСЕН ПӖРЛЕШӲЛЛӖ ЗАСЕДАНИЙӖНЧЕ КАЛАНӐ СӐМАХ

*1920 ҫ. майӑн 5-мӗшӗ*

Юлташсем, манӑн сире хальхи вӑрҫа пӗтӗм тӗнче тӗлӗшӗнчен илсе пӑхсан, е, тӗрӗсрех, Российӑн пӗтӗм тӗнчери положенийӗ енчен илсе пӑхсан, ӗлӗкхи вӑрҫӑсенчен уйрӑм палӑртса тӑракан пӗр енӗ ҫине ҫавӑрӑнтарса пӑхтарассӑм килет. Паллах, ҫав

вăрçă тăтăшах пулса пыракан событисен сыпăкĕсенчен пĕри пулнă пирки сиртен никам та иккĕленмест, иккĕленмелли те çук, вĕсем пĕтĕм тĕнчери буржуази çĕнтерÿллĕ пролетариат тĕлĕшĕнчен урнă пекех хирĕç тăнине, пĕтĕм тĕнчери буржуази Советлă Российăна пăвса пăрахмашкăн, пирвайхи совет влаçне кирек епле пулсан та, мĕнле майсемпе пулсан та сирпĕтсе антармашкăн урнă пекех тăрăшнине пĕлтереççĕ. Паллах, çав ĕçсен хушшинче, пĕтĕм тĕнчери буржуази ĕлĕк хăтланнипе хальхи вăрçă хушшинче çыхăну чăнахах пур пирки нимĕнле пĕчĕк иккĕленÿ те çук. Анчах çав вăхăтрах эпир çав вăрçăпа ĕлĕкхи вăрçă хушшинче, ăна пирĕн пĕтĕм тĕнчери положени енчен илсе пăхсан, питех те пысăк уйрăмлăх пуррине, пирĕн кĕрешÿ пĕтĕм тĕнчери рабочи движенине мĕнле вăйлăн малалла илсе кайнине, тĕнчери пролетариат Советлă Россия çĕнтерĕвĕсем çине мĕнле пăхнине, пролетариатăн пĕтĕм тĕнчери кĕрешĕвĕ мĕнле аталаннине тата тĕрекленнине, тата Совет республики 2 çул ытларах пурăннă вăхăтра мĕнле пысăк ĕç туса ирттернине куратпăр.

Эсир астăватăр ĕнтĕ, пĕтĕм тĕнчипех чи хăватлă, хăйсемпе тупăшма пултаракан çук таранах хăватлă, чи ответлă министрсем нумаях пулмасть-ха, вĕсем Российăна хирĕç 14 державăн союзне туни çинчен пĕлтерчĕç; çав союз Франципе Англин питех те вăйлă капиталисчĕсем хĕснипе Юденича, Колчака тата Деникина мĕнле пĕтĕçтернине, вăл вăрçă тĕлĕшĕнчен чăннипех мĕнле чаплă тата пурне те çавăрса илекен план тунине эсир пĕлетĕр ĕнтĕ. Эпир çав плана аркатса салатнă пулсан, ку ĕнтĕ çакăн пирки пулчĕ: империалистсен пĕтĕм пĕрлĕхĕ куçа курăнса тăракан пĕрлĕх çеç пулнă тата пĕтĕм тĕнчери буржуазин вăйĕсем, сăмах чăн-чăнах хăйсен пурнăçне шеллемесĕр тăрасси çинчен пынă чухне, пĕр йывăрлăха та тÿсеймеççĕ. Империализмлă çапăçу тăватă çул пынă хыççăн пире хирĕç тунă вăрçа ĕççынни массисем тĕрĕс тесе шутламаççĕ, вĕсем вара пирĕн аслă союзниксем пулса тăраççĕ. Антанта планĕ чăнах та аркатуллă пулнă, анчах вăл капитализмлă державăсем, вĕсен чи вăйлă союз пулин те, ăна пурнăça кĕртме пултараймарĕç: ăна пурнăça кĕртмешкĕн вăйсăр пулнă. Державăсенчен пĕри те, кашниех пиртен вăйлăрах пулма пултарсан та, пĕрлĕх кăтартма пултарайман, мĕншĕн тесен организациленнĕ пролетариат ăна пулăшмасть; пĕр çар та — Франция çарĕ те, Англия çарĕ те — вĕсен салтакĕсем Совет республикине хирĕç вырăс çĕрĕ çинче кĕрешме пултарассине чăтайман пулĕччĕç.

Пирĕн республика, вăл чăн-чăнах, пĕтĕм тĕнчене хирĕç, танлаштарма çук нумай вăйлăрах державăсене хирĕç тăнă вăхăтра мĕнле пысăк йывăрлăхра пулнине хамăр асăмарта сăнаса пăхсан, тата эпир çав мĕнпур йывăрлăхсенчен пĕтĕмĕшпех çĕнтерÿлĕн тухнине аса илсен, вара çав аса илнисем пире халĕ хамăр умра мĕн пуррине лайăх кăтартса парĕç. Пирĕн умра кунта çĕнĕ план мар, анчах вăл çавăнпа пĕрлех пĕртте пирĕн çур çул каярах пулнă чăн-чăнах пур енлĕ те пĕрлĕхлĕ план евĕрлĕ мар. Пирĕн умра кивĕ план ванчăкĕсем, ку ĕнтĕ пире пĕтĕм тĕнчери вăйсем шайланса тăни енчен илсе пăхсан хальхи политика шанчăксăр

пулнă тĕлĕшпе пуринчен ытларах гаранти парать. Кивĕ планра империализмлă державăсем пурте, ĕлĕкхи Россия империнчи окраинăри вак государствăсемпе, ĕлĕк Великороссийĕн патша тата капиталистла правительстви тискеррĕн те намăссăр пусмăрласа пурăннă государствăсемпе союзра пулса рабочисемпе хресченсен правительствине пăвса пăрахма хăтланнă; халĕ ĕнтĕ хăшпĕр державăсем пирĕнпе чикĕллĕ государствăсенчен пĕринпе союзра пулса, империалистла пĕтĕм державăсем чикĕллĕ мĕнпур государствăсемпе союзра пулса, тата вĕсем çулталăк тата çур çул каярах Колчакпа, Деникинпа т. ыт. те союзра пулса тума пултарайманнине тума хăтланаççĕ. Халĕ ĕнтĕ эпир империалистла планăн ванчăкĕсене куратпăр. Империалистла плансем буржуази кунта хăйĕн сĕмсĕрлĕхне уйрăмăнах кăтартнипе палăрса тăраççĕ. Вăл влаçшăн хăйĕн килĕнче кĕрешнине, кунта вырăс е Польша кун-çулĕн ыйтуне мар, хăй пурнăçĕн кунçулĕн ыйтуне татса панине пĕлет. Çавăнпа та вăл планăн кирек мĕнле ванчăкĕнчен те кивĕ, путса ларнă плана çĕнĕрен туса хума хăтланĕ.

Империалистла государствăн интересĕсем пĕр-пĕринпе килĕшейменни пирĕншĕн пуриншĕн те уççăнах паллă. Вĕсен министрĕсем тавлашуллă ыйтусене мирлĕн майлаштарасси çинчен нумай калаççĕ пулин те, чăннипе илсен империалистла державăсем политикăлла ыйтусенче пĕр пысăк утăм та тăваймаççĕ, вĕсем яланах килĕштерейместĕ. Французсене вăйлă Польша тата патша чухнехи пек вăйлă Россия кирлĕ, вĕсем вара çавăншăн пур жертвăсем тума та хатĕр. Англия ĕнтĕ, хăйĕн географиллĕ вырăнне шута илсе, урăххине тума—Российăна ваклама, Польшăна вăйсăрлатма. Франципе Германия вăйĕсене пĕр пек тума тăрăшать, çавăн пек туни вăл, çĕнтерӳ тунă империалистсене, вĕсем тĕнчери вăрçа пула, Германине çаратнипе туртса илнĕ колонисене тытса тăма май туса памалла. Кунта интерессен хирĕçĕвĕ питех те пысăк, вара, империалистла державăсен представителĕсем Сан-Ремора, союзниксем пурте пĕр шухăшлă тесе пире мĕнле ĕнентерме тăрăшсан та, эпир вĕсем хушшинче нимĕнле килĕшӳлĕх те çуккине пĕлетпĕр.

Эпир пĕлетпĕр, Польша наступлени туни, вăл—кивĕ план ванчăкĕсем, вăл ĕлĕкрех пĕтĕм тĕнчери буржуазине пĕрлештернĕ, вара ун чухне çав питех те пысăк план, вăрçă енчен илсен пĕр иккĕленмесĕрех çĕнтерӳ кӳмеллискер, ăнăçлă пулмарĕ пулсан, халĕ ĕнтĕ çав енчен илсен те план шанчăксăр. Кунсăр пуçне эпир Польша буржуазийĕпе союз тунă империалистла державăсемпе Польша правительстви нихăçанхинчен ытла çыхланса ларнине пĕлетпĕр. Польша буржуазийĕ хăйĕн политикин кашни утăмĕнче юлашки уйăхсенче, эрнесенче тата кунсенче хăйне хăйĕн ĕç массисем умĕнче питлесе кăтартать, хăйĕн союзникĕсемпе харкашать, хăйĕн политикинче йĕркеллĕ пĕр утăм та тăваймасть. Е Советлă Российăпа хăйсем килĕшменни тата нимĕнле калаçу та тума май çукки çинчен пĕлтерсе, е ăна блокада тума пăрахса, çавăн çинчен имĕш халĕ пур союз ячĕпе, имĕш халĕ пур Лига наци ячĕпе чаплăн пĕлтерсе, е иккĕленӳ-

сен политикине ҫĕнĕрен тытăнса,—шăпах та ҫакăнпа ĕнтĕ империалистсем пире хамăрăн мирлĕ политикăна кăтартма, пирĕн пĕтĕм тĕнчери политика патша политикипе те, вырăс капиталисчĕсен, е вырăс буржуазийĕн, демократла буржуазийĕн политикипе пулсан та пĕр пек маррине кăтартма май пачĕҫ, параҫҫĕ те. Пирĕн тулашри политикăпа, пирĕн ҫинчен пĕтĕм буржуаллă хаҫатсем яланах ҫырнă пек политика хушшинче пĕрлехи нимĕн те ҫуккине эпир пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса патăмăр. Ҫапла вара, Польша политикинче вĕсем хăйсем питлесе кăтартман пĕр ултав та юлмарĕ. Вырăссен виҫĕ революцийĕн опычĕсенчен эпир, ҫав революцисене мĕнле хатĕрленине тата вĕсен кашнин никĕсĕ ҫинче шалти тата пĕтĕм тĕнчери политика малалла мĕнле аталанса пынине пĕлетпĕр. Ҫав опыт акă мĕн кăтартса парать: революцие хатĕрлес ĕҫре пирĕн чи шанчăклă помощник, ҫакăн пек пуҫпулса тăракан классем пулаҫҫĕ: вĕсем тĕрлĕ коалицисем, учредилкăсем т. ыт. тума тăрăшса, имĕш халăх ирĕкне палăртса тăракансем пулма тăрăшса, чăннипе илсен хăйсен политикипе наци пурнăҫĕн кашни пысăк, йывăр тата ответлă самантĕнче пĕр-пĕринпе ҫапăҫакан, килĕшме пултарайман буржуаллă группăсен, пĕр-пĕринпе конкуренци тăвакан капиталистсен группisen, хăйсене хăйсем коммунистла пропагандăран ҫĕр хут ытла тăрă шыв ҫине кăлараканскерсен группisen ҫăткăнлăхне кăтартса параҫҫĕ. Пĕр ҫĕршывра та, пĕр государствăра та рабочи класс, вăл чи революциллĕ пулсан та, нимĕнле пропагандăпа тата агитаципе, ҫав агитацине хăйсен ҫĕршывĕнчи пуҫпулса тăракан классем хăйсене хăйсем ĕҫре тыткаланипе ҫирĕплетмен пулсан, революцилентерме май пулман пулĕччĕ.

Халĕ капитализмлă пур ҫĕршывсенче те пулса пыракан ĕҫсем, уйрăмăнах Польша пек ҫĕршывра, мĕн чухлĕ малалла пулса пыраҫҫĕ, пире ҫакна ҫавăн чухлĕ ытларах шантараҫҫĕ: эпир ытларах йывăр вăрҫăран ҫĕнтерсе тухрăмăр пулсан, эпир буржуазийĕн тĕрлĕ группisemпе партийĕсен хушшинчи харкашăва тата килĕшӳ тума май ҫуккине, ҫав пĕрлешӳ вĕсене уйрăмăнах кирлĕ пулнă самантра тĕрĕс шута илнĕ пулсан,—халĕ ĕнтĕ пирĕн пĕтĕм тĕнчери положени лайăхланни питех те пысăк. Ку пире ҫĕршыври вăйсем шайлашса тăни енчен кăна мар, пирĕн пĕтĕм тĕнчери положени енчен те шанчăк парать. Эпир кучухнехи империалистла мĕнпур государствăсен пĕтĕм системине, вĕсен пĕтĕм шухăш-кăмăлĕсене илсен,—Россия ҫине тапăнмашкăн вĕсен кашни самантпа усă курас текен шухăш-кăмăлĕсене пĕтерме ҫуккине эпир пĕлетпĕр,—юлашки ҫулсен тата уйрăмăнах юлашки ҫурҫул хушшинчи историн ӳпĕнтермелле мар фактсем енчен пĕтĕмĕшпех объективлăн илсе хакласан, вăл ĕнтĕ пире пĕтĕм тĕнчери тăшман вăйсăрланса пынине, империалистсем хушшинче пĕрлешме хăтланнисем ытларах та ытларах шанчăксăр иккенне тата ҫав енчен пирĕн ҫĕнтерӳ пулассине кăтартса парĕ.

Анчах, юлташсем, эпир халĕ хуҫалăх задачине пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе ĕҫленĕ чухне, хамăрăн пĕтĕм тимлĕхе мирлĕ хуҫалăх строительстви ҫине янă чухне, хупласа килекен ҫĕнĕ вăрҫă умĕнче тăратпăр пулсан, пирĕн хамăр ретсене хăвăрт урăхлатни

питех те кирлĕ. Пирĕн пĕтĕм çарăн, юлашки вăхăтра ĕç çарĕ пулнăскерĕн хăйĕн мĕнпур тимлĕхне тепĕр енне çавармалла; пирĕн хамăрăн ĕçсене пурне те хăварса, çак çĕнĕ вăрçă çине пĕтĕм вăйсене хумалла. Эпир çакна питех те лайăх пĕлетпĕр: халĕ пирĕн умра тăракан тăшман, эпир пурăнса irттерни хыççăн пирĕншĕн хăрушă мар ĕнтĕ, анчах вăл рабочисемпе хресченсенчен çĕнĕ жертвăсем ыйтма пултарать, пирĕн хуçалăх строительствине темиçе хут йывăрлатма, вуншар, çĕршер тата пиншер хресчен хуçалăхĕсене юхăнтарма, çавăн пекех тата хăйсен вăхăтлăха пулнă ăнăçăвĕсемпе эпир çĕмĕрсе тăкнă империалистсен сÿнсе ларнă ĕмĕчĕсене чĕртме пултарать, вĕсем паллах, тăшман çумне васкасах хутшăнĕç. Çавăнпа та эпир, малтанхи вăрçăсенче пулнă хамăрăн правилăсем халĕ те çĕнĕрен çаплипех пулса тăмалла, тесе калама тивĕç. Пирĕн чи килĕшÿллĕ шухăш-кăмăлсене пăхмасăр, эпир питех пысăк уступка тунине, нацишĕн кирлисене ыйтма пăрахăç тунине пăхмасăр, Польша помещикĕсемпе Польша буржуазийĕ пире вăйпах вăрçа кĕртсе ячĕç; пĕтĕм çĕршывсенчи буржуази, халĕ поляксене пулăшманни те, вăрçă хĕмленсе кайсан вĕсене пулăшасса шанатпăр пулсан, эпир çавна шанмалла та, мĕншĕн тесен ĕç вырăс е Польша ыйтуне çеç мар, пĕтĕм буржуази пурнăçĕн ыйтуне татса парасси çинчен пырать,—апла пулсан, эпир хамăрăн политикăра тытса пынă тата пире яланах ăнăçлăхсем кÿнĕ правилăна аса илсе, ăна кирек епле пулсан та тумалла тата вĕçне çитичченех пурнăçа кĕртмелле. Вăл правило çакă пулать: ĕç вăрçă патнех çитнĕ пулсан, вара пурне те вăрçă интересĕсене пăхăнтармалла, çĕршывăн пĕтĕм шалти пурнăçне вăрçа пăхăнтармалла, çав тĕлĕшпе иккĕленесси пĕртте пулмалла мар. Нумаях пулмасть урăх çул çине куçарнă, мирлĕ строительство задачисемшĕн ытларах пархатарлă тата кирлĕ ĕçрен уйрăлса кайма питех те нумай юлташсене мĕнле йывăр пулсан та, çакна астумалла: чи пĕчĕкçĕ йăнăш, тимсĕрлĕх сайра хутра мар ĕнтĕ пирĕн чи лайăх юлташсем, пирĕн рабочисемпе хресченсен çамрăк ăрăвĕсем, яланхи пекех кĕрешекенсен малти речĕсенче тăракан коммунистсем вуншар пин çын ытлашши вилсе пĕтессине пĕлтерет. Çавăнпа та тепĕр хут,—пурте вăрçă валли. Пĕр собрани те, пĕр совещани те кашни ĕç çинчен сÿтсе-явнă чухне чи пирвайхи вырăнта: акă çакă ыйту—вăрçа пулăшмашкăн эпир пурне те турăмăр-и, пирĕн вăйсене çителĕклĕ пухнă-и, фронта çителĕклĕ пулăшу янă-и? текен ыйту тăмасăр ан ирттĕр. Кунта фронтра кам пулăшу пама пултараймасть, çавсем çеç юлмалла. Пĕтĕм иккĕленÿсене сирсе пăрахса пĕтĕм жертвăсене, пĕтĕм пулăшăва фронта памалла. Пĕтĕм вăйсене пухса тата пĕтĕм жертвăсене кÿрсе, эпир, иккĕленмелли те çук, хальхинче те çĕнтерĕпĕр.

*1920-мĕш çулта пичетленĕ.*

## АСĂРХАТТАРНИСЕМ

[1] *Брестри мирлĕ договора* Германипе Совет Союзĕ хушшинче 1918 ç. мартăн 3-мĕшĕнче тунă. Большевиксен партийĕ тата унăн çулпуçĕсем Ленинпа Сталин Германипе мир туни кирлĕ тесе шутланă, мĕншĕн тесен малалла вăрçма май пулман: кивĕ çар саланнă, войскăсем фронтран хăйсен ирĕкĕпех пăрахса кайнă, çĕршыв юхăнса пĕтнĕ. Парти политикине хирĕç, Ленинпа Сталина хирĕç Троцкипе унăн тусĕ, «сулахай коммунистсем» текенскерсен пуçĕнче тăнă Бухарин урнă пекех кĕрешме тытăннă. Троцкий, Бухарин, Пятаков т. ыт. те Брестра мир тăвассине пур майсемпе те пăрахăçа кăларса Совет влаçне пĕтерсе хума тăрăшнă. Германия командованийĕпе мирлĕ калаçусем тунă чухне, парти мир туса ала пусас тĕлĕшпе панă кăтартусене предателле пăсса Троцкий Германия генералĕсене: Совет республики мир туса ала пусмасть, анчах вăрçмасть те, тесе каланă. Троцкийĕн çавăн пек провокаторла политики нимĕçсем Петроград çине наступлени тăвасси патне илсе пынă. Троцкипе Бухаринăн предателле ĕçĕ Совет республикĕшĕн питех те хакла ларнă: мире малтанхинчен нумай йывăр условисемпе тумалла пулнă.

Çав йывăр самантра парти Ленинпа Сталин тавра таччăн пĕрлешнĕ. Троцкистсемпе бухаринецсене çĕмĕрсе тăкнă, вара партин 1918 ç. мартăн 6-мĕшĕнче пухăннă VII съезчĕ Брестри договора çирĕплетнĕ. Германире 1918 ç. ноябрьте пулнă революци хыççăн Брестри договора пăрахăçа кăларнă.

1938 ç. советсене хирĕçле «сылтăмла-троцкистла блок» процесĕнче тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, Бухаринпа унăн «сулахай коммунистсен» группи Троцкипе тата «сулахай» эсерсемпе пĕрле 1918 ç. пуçламăшĕнче Брестра мир тăвассине пĕтерсе хурас, В. И. Ленина, И. В. Сталина, Я. М. Свердлова арестлесе тата вĕлерсе троцкистсенчен, бухаринецсенчен тата «сулахай эсерсенчен» çĕнĕ правительство тăвас тĕллевпе вăрттăн заговор тунă.—10 стр.

[2] *Ăсран тухнă пуп*—провокатор пуп Гапон. 1905 ç. Петербургра пĕтĕмĕшлĕ забастовка пуçланнă. Патша охранки хушнă тăрăх пуп Гапон рабочисене провокаторла план сĕннĕ: турăшсене тата патша портречĕсене илсе Зимний дворец патне кайса хăйсен нушисем çинчен патшана петици (ыйту) пама сĕннĕ. Çав планăн тĕллевĕ рабочисене персе вĕлерессипе тата рабочи движенине юн ăшне путарасси пулнă. Большевиксем рабочисене ирĕклĕхшĕн патшана тархасласа ыйтнипе мар, алла хĕçпăшал тытса кĕрешмелле тесе вĕрентнĕ. Анчах рабочисен нумайтарах пайĕ вĕсене патша пулăшĕ тесе шанса тăнă-ха, вара 1905 ç. январĕн 9-мĕшĕнче рабочисем хăйсен арăмĕсемпе тата ачи-пăчисемпе Зимний дворец патне кайнă. Патша войскисем лăпкă пыракан рабочисене персе пăрахнă: рабочисене пин çын ытла вĕлернĕ, икĕ пин ытла амантнă. Январĕн 9-мĕш кунне (вăл вырсарникун пулнă) «Юнлă вырсарникун» тесе ят панă. Патшанăн «ырă кăмăлĕ» çине шанма çукки çинчен рабочисем ăнланнă ĕнтĕ. Январĕн 9-мĕшĕнче каç пулас умĕнех ĕнтĕ Петербургăн рабочисем пурăнакан районĕсенче баррикадăсем тума тытăннă, кĕрешӳ хуланăн ытти районĕсене те куçнă. 1905 ç. революци пуçланнă.—*11.*

[3] *Венгрия Советлă республикине* 1919 ç. мартăн 21-мĕшĕнче туса хунă, вăл 1919 ç. августăн 1-мĕшчен тытăнса тăнă. Венгрия Советлă республики пĕтнин тĕп сăлтавĕ Венгрия компартийĕн йăнăшĕ тата социал-демократсем сутăнчăкла ĕç туни пулать тесе шутланă Ленин. Социал-демократсем сăмахра Совет влаçĕ енне куçса «хăйсене коммунистсем тесе пĕлтернĕ, анчах ĕçре вĕсем пролетариат диктатурине тивĕç политикăна пурнăçа кĕртмен, иккĕленнĕ, хăравçă кăмăллă пулнă, буржуази патне чупса кайнă, пролетариллĕ революцине час-

часах тӳррĕнех саботаж тунă, унăн ĕçне сутнă. Венгрия Советлă республикине хупăрласа тăракан империализмăн пĕтĕм тĕнчипе хăватлă вăрă-хурахĕсем (урăхла каласан, Англин, Францин т. ыт. буржуаллă правительствисем) Венгрири совет влаçĕн правительстви *ăшĕнче* пулнă çак иккĕленӳсемпе, паллах, усă курма пĕлсе, ăна румын палачĕсен аллисемпе тискеррĕн пăвса пăрахнă» (*Ленин*)—*13*.

[4] 1919 ç. çуркунне Юденич генералăн бандисем Петроград çине наступлени туса пынă. Петрограда çавăрса илме Юденича çăмăл пултăр тесе, Англия контрразведки тата çар командованинче пулнă изменниксем «Красная горка» тата «Серая лошадь» ятлă фортсенче (Фински залив, Кронштадт тĕлĕнче) контрреволюциллĕ пăлхав çĕкленĕ. Çав пăлхава 1919 ç. июнĕн 16-мĕшĕнче Сталин юлташ хăй ертсе пынипе пусарнă, вăл Петроград оборонине организацилеме партин Центральный Комитечĕ хушнă тăрăх унта пынă пулнă. Çав питех те пысăк çĕнтерӳ çинчен пĕлтерсе Сталин юлташ Ленина çакăн пек телеграмма панă:

«Красная горка» хыççăн «Серая лошадь» форта пусарнă, унти тупăсем пĕтĕмĕшпех йĕркеллĕ, пур фортсемпе крепостьсенчен те (ăнланмалла мар сăмах)... хăвăрт пырать. Тинĕс ĕçĕн специалисчĕсем «Красная горкăна» тинĕс енчен илни пĕтĕм тинĕс наукине ӳпĕнтерсе ярать, тесе ĕнентереççĕ. Манăн ĕнтĕ наука текен япалашăн хурланса йĕресси çеç юлать. Горкăна хăвăрт илнине оперативлă ĕçе эпĕ хам тата, пĕтĕмĕшпе илсен, штатски çынсем чи чăрсăррăн хутшăннипе ăнлантарса памалла, çав хутшăнас ĕç тинĕс тата çĕр çинчи çарсене панă приказсене пăрахăç тăвасси тата хамăрăн приказсене хистесе йышăнтарасси патнех çитрĕ. Çакна калама хамăн тивĕçĕм тесе шутлатăп: наукăна питех хисеплетĕп пулсан та, эпĕ малашне те çавăн пекех ĕçлесе пырăп». (*Сталин*)—*34*.

[5] «1918 ç. хĕвелтухăç фронт командующийĕ пулнă «сулахай» эсер Муравьев измени «сулахай» эсерсен Мускаври (1918 ç. июль) восстанийĕпе çыхăнса тăнă. Муравьев Колчакпа чехо-словаксене валли фронта уçса, хăйĕн войскисене Мускав çине илсе кайма хăтланнă. Муравьевăн контрреволюциллĕ авантюрине часах пĕтерсе хунă. 1918 ç. июлĕн 11-мĕшĕнче Муравьева арестленĕ. Вăл хирĕç тăнă, вара ăна вĕлернĕ».—*45*.

[6] 1919 ç. çуркунне хĕвелтухăç фронтра наступлени тунине хирĕç отпор пама ЦК РКП(б) чĕнсе каланине рабочи класс коммунистла субботниксем туса ответленĕ. 1919 ç. майăн 10-мĕшĕнче Мускав—Хусан чугун çулĕ çинче ĕçлекен коммунистсемпе рабочисем хăйсен ĕçне пĕтернĕ хыççăн, татах ĕçлеме тухса пирвайхи «коммунистла субботник» туса ирттернĕ. Ленин çавна «аслă пуçару» тесе ят панă. Мускаври чугун çул çинче ĕçлекен рабочисен пуçаруне пĕтĕм рабочи класс хапăл туса йышăннă: майăн 17-мĕшĕнче «субботник» Александровски чугун çулĕ çинче пулса иртнĕ; майăн 31-мĕшĕнче пирвайхи «коммунистла субботник» Тверь хулинче пулнă; июнĕн 5-мĕшĕнче москвичсем чĕннине хапăл туса Саратоври чугун çул çинче ĕçлекенсем «субботник» тунă т. ыт. те. Субботниксенче ĕçкунне пĕтернĕ хыççăн укçасăрах ĕçленĕ. Рабочисем пысăк хаваслăхпа ĕçлесе пысăк ĕçтухăçлăхĕ панă. «Коммунистла субботниксем»,—тесе çырнă Ленин,—шăпах ĕнтĕ çакăн пирки питех те пысăк историллĕ пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем пире рабочисен ĕç тухăçлăхне аталантарас, çĕнĕ, ĕç дисциплини çине куçас, хуçалăхпа пурнăçăн социализмлă условисене тăвас ĕçре ăнланулла тата ирĕклĕ пуçарулăх кăтартаççĕ».—*40*.

[7] *Парти эрнине* ЦК РКП(б) 1919 ç. октябрь—декабрь уйăхĕсенче туса ирттернĕ, ăна рабочисене тата ĕçхресченĕсене коммунистла партине явăçтарас тĕлĕшпе тунă. Парти эрни кăнтăрти фронтра Деникина хирĕç, хĕвелтухăçĕнчи фронтра—Колчака хирĕç, Петроград патĕнче—Юденича хирĕç хĕрӳ çапăçу пынă кунсенче пулса иртнĕ. Парти эрнинче парти ретне 240 пин чи лайăх, коммунизма чĕререн парăннă, хăйсен пурнăçне те шеллемесĕр пама хатĕр тăракан рабочисене, хресченсене, красноармеецсене илнĕ.—*48*.

[8] *Боротьбистсем*—Украинăри «сулахай» эсерсен парти членĕсем, вĕсем «Боротьба» хаçат тавра пĕрлешсе тăнă. Хăйсен съездĕнче 1919 ç. март уйăхĕнче боротьбистсем «Украинăри коммунистла парти» текен ята йышăннă, 1920 ç. Украинăри коммунистсен (большевиксен) партине кĕнĕ. Боротьбистсем нумайăшĕ чеен витĕнсе, коммунистла парти членĕсем пулса тăнă вăхăтрах, контрреволюциллĕ ĕç туса пынă, кайран вĕсене НКВД органĕсем тăрă шыв çине кăларнă.—*59*.

[9] *Антанта* (французла «антант»—килĕшӳ, союз)—империалистла государствăсем Франция, Англия (тата 1917 ç. Октябрьччен Россия) союзĕ, вĕсем 1914—1918 çç. Германия пуçпулса тăнă империалистла тепĕр группăна хирĕç вăрçнă, 1918 çулта Антанта çĕнтернĕ, вара 1919 ç. июнь уйăхĕнче Антанта государствисем хушшинче пĕр енчен тата Германипе унăн союзникĕсем хушшинче тепĕр енчен—Версальти мирлĕ договора тунă.

1918—1920 çç. Антанта Совет республикине хирĕç хĕçпăшаллă вичĕ поход организацилене, анчах поражени тӳснĕ: Хĕрлĕ çар интервентсемпе белогвардеецсене çĕмĕрсе тăкнă.—*62*.

[10] *Ĕç çарĕсене* 1920 ç. пуçламĕшĕнче, Хĕрлĕ çар Колчакпа Деникина çĕмĕрсе тăкнă хыççăн туса хунă. Хĕрлĕ çар чаçĕсемпе хуçалăх ĕçĕсенче, пуринчен ытла чугун çул транспортне юсас тата çĕр кăмрăкĕ кăларас ĕçре усă курнă. 1920-мĕш çулта Польшăна хирĕç пуçланнă вăрçă тата белогвардеецсен войскисен юлашкийĕсемпе Крыма кĕрсе ларнă Врангеле хирĕç вăрçăллă операцисем саралнă пирки ĕç çарĕсене çĕнĕрен вăрçă положенине куçармалла пулнă.—*63*.

## ТУПМАЛЛИ

*Издательствӑран* *стр.*

Юлташсем-рабочисем! Юлашки, татӑклӑ ҫапӑҫӑва каяр! . . . . . . . . . . 3
Бутырски районри митингра каланӑ сӑмах . . . . . . . . . . . . 6
Политехнически музейри митингра каланӑ сӑмах . . . . . . . . . . 7
„Хӗрлӗ офицер кунӗнче" каланӑ сӑмах . . . . . . . . . . . . . . . 11
Хӗрлӗ ҫара чӗнсе калани . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 12
Хӗвелтухӑҫӗнчи фронта пулӑшасси ҫинчен Петроградри рабочисем патне янӑ ҫыру . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 13
Хӗвелтухӑҫӗнчи фронтри положенине май Ц.К. Р.К.П.(б) йышӑннӑ тезиссем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Хӗвелтухӑҫӗнчи фронта мобилизациленӗ май профессиллӗ союзсем умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен тунӑ доклад . . . . . . . . . . 16
Шпионсенчен сыхланӑр! . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
Пурте Деникинпа кӗрешме! . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
Колчака ҫӗнтернӗ тӗлӗшпе рабочисемпе хресченсем патне янӑ ҫыру . . . 40
Петроградри рабочисен примерӗ . . . . . . . . . . . . . . . . 46
Рабочисен государстви тата парти эрни . . . . . . . . . . . . . . 48
Мобилизацилленӗ рабочисене Р.тата Хр. Д. Мускав Совечӗн балконӗ ҫинчен каланӑ сӑмах . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 50
Петроградри рабочисемпе красноармеецсене . . . . . . . . . . . . 51
Красноармеец юлташсене . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 51
Мускавра ирттернӗ парти эрнин итогӗсемпе пирӗн задачӑсем . . . . . . 52
Петроградри рабочисене салам . . . . . . . . . . . . . . . . . 55
Деникина ҫӗнтернӗ пирки Украина рабочийӗсемпе хресченӗсем патне янӑ ҫыру . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 56
Пресненски районра беспартийнӑй рабочисемпе красноармеецсен конференцийӗнче каланӑ сӑмах . . . . . . . . . . . . . . . . 61
Кӗленче-фарфор производствинче ӗҫлекен рабочисен Пӗтӗм Российӑри съездӗнче каланӑ сӑмах . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 65
В. Ц. И. К. рабочисен, хресченсен тата красноармеецсен депутачӗсен Мускав совечӗн, профессиллӗ союзсен тата фабрик-завод комитечӗсен пӗрлешӳллӗ заседанийӗнче каланӑ сӑмах . . . . . . . . . . 67

*Асӑрхаттарнисем* . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 72

Чувашская
Книжная палата
г. Чебоксары Чувашская АССР

*В. И. Ленин.* В защиту социалистического отечества.

Чувашское Государственное Издательство 1941

Переводчик **Г. А. Молостовкин.** Редактор **Н. И. Колюшкин.**

Подписано к печати 27/III-1941 г. НТ 2786. Заказ № 090. Объем 4,75 печ. л.
в печ. л. 44.500 зн. Тираж 3000 экз.

Отпечатано в типографии № 1 Управления издат. и полигр. при СНК ЧАССР,
г. Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 1 руб. 50 коп.

# В. И. ЛЕНИН

## В ЗАЩИТУ СОЦИАЛИСТИЧЕСКОГО ОТЕЧЕСТВА

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
ЧЕБОКСАРЫ — 1941